К 84.09(=Чув)
С 42
Ч-38545

Ю. СКВОРЦОВ

СУРĂМ ХĔРĔ

Национальная библиотека ЧР
4-038545

~~2671~~

К 8Ч1.09(=Чув)
С 42

Юрий Скворцов

СУРĂМ ХĔРĔ

КАЛАВСЕМ

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. № 2641

Чăваш АССР
Государство издательстви
Шупашкар 1959

ПРОВЕРЕНО
20 10 21 СЕН 2017
4-38545
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ЮРАТСАН

Калав

Пăрахут тимĕр кĕпертен иртсен, июнь уйăхĕн ытарми каçĕ илĕртнипе эпĕ палуба çине тухрăм. Хуркайăк карти пек икĕ юплĕ йĕр хăварса, пăрахут тăвалла хăпарать. Пите ăшă çил лăпкать. Çуллахи каçăн чăпар çуначĕпе витĕннĕ шыв пăрахут борчĕ çумĕнче, канма выртнă тĕнчен анлă кăкăрĕ евĕр, пĕрре çĕкленет, тепре анать...

...Анчах пăрахут çинче никам та çывăрмасть. Нумайăшĕ, ман пекех, Атăл çине тинкерсе пăхаççĕ, унăн илемĕпе киленсе, пĕр сăмах та чĕнмеççĕ. Вĕсем пурте пĕр кăкăрпа сывлаççĕ тейĕн.

Шăп. Борт айккинче мотор сассипе хутăш пĕр тикĕссĕн çатăртатакан шыв çеç чаплă шăплăха пăсать.

Атăл çепĕç юрă пек кăмăла лăпкаса юхать. Çакăн пек вăхăтра çумра çывăх çын çукки уйрăмах хытă сисĕнет. Чĕрене капланса килекен шухăш-туйăма кама та пулин каласа парас килет... Шухăш, шухă ĕмĕт-кайăк çуначĕсем çинче çĕкленсе, инçете вĕçет.

Çакăн пек илемлĕ каççем ман пуçра канăççăр асаилӳсем вăратаççĕ. Акă халĕ те тавралăхпа киленсе пыруçăн ман куç умне виçĕмçулхи июнь уйăхĕн çакăн пекех савăк та илемлĕ пĕр манăçми каçĕ тухса тăчĕ...

...Шкулпа сывпуллашмалли юлашки каç. Пирĕн алăра аттестат. Пысăк пӳлĕмре «Дунай хумĕсем» кĕвĕ янрать. Хаваслă тус-юлташсем, мăшăрăн-мăшăрăн тăрса, вальс ташлаççĕ. Эпĕ, вăрттăн-вăрттăн пăхса, Зинăна шыратăп...

Юратнă хĕре урăх çын умĕнче курсан мĕн тери йывăр иккен!..

Эпĕ ăна виçĕ çул вăрттăн юратса пурăннă. Малтанхи канăçсăр туйăм, çунтарса асаплантараканскер, хăйĕнчен хăй вăтанаканскер, чĕмсĕр кайăк пек, никам умĕнче те сасă паман. Пĕр çын çеç пĕлет вăл пурри çинчен: Семен Павлович — историпе вĕрентекен учитель... Унăн урокĕнче Зинăна пĕчĕк çыру пама тăнăччĕ... Çыру çитеймерĕ...

— Текех ан аппаланнă пул, — терĕ Семен Павлович, туртса илнĕ çырăва вуласа пăхнă хыççăн. — Иртерех-ха...

Эпĕ аран-аран переменăна кĕтсе илтĕм те, никам çине пуç çĕклесе пăхма хăймасăр, шкултан тухса чупрăм...

Çапах та тав Семен Павловича: вăл ман çыру пирки урăх никам умĕнче те çăвар уçман курăнать. Ачасенчен нихăшĕ те эпĕ кам патне çырнине пĕлеймерĕç, малтанхи кунсенче çеç, тем тавçăранçи пулса, пĕр-пĕринпе вăрттăн кулкалатчĕç.

Çакăн хыççăн эпĕ Зинăпа калаçма мар — ăна куçĕнчен пăхма та хăяйми пултăм. Унччен киле те час-часах пĕрле каяттăмăр, çăмăллăнах калаçаттăмăр, шӳтлеттĕмĕр, халĕ акă, хамăр сисмесĕрех, пĕр-пĕринчен пăрăнма тытăнтăмăр, сывлăх та сунми пултăмăр. Коридорта е çул çинче хирĕç пулсан, вăл, хĕрелсе, пуçне чикет те аяккалла пăрăнать, манăн пит пĕçерсе каять, анчах мĕнле те пулин сăлтавпа вăл шкула пымасан, манăн унта пĕр урок та ларас килмест.

Вĕренӳ çулĕ те вĕçленсе пырать... Аттестат илме экзаменсем паратпăр... Пурпĕрех Зинăна сăмах хушма вăй çитерейместĕп, ăна курсанах чĕлхем çĕтет.

Хамăн айăпсăр туйăмсем çинчен юратнă хĕре хăйне каласа памалăх та хăюлăх çук-шим манăн?.. Кĕçех акă уйрăлса каятпăр... Тен, урăх нихçан та тĕл пулаймăпăр...

Çук! Капла юрамасть!.. Ăна пĕтĕмпех каласа памалла!.. «Юрататăп эп сана!.. Юрататăп!..» Мĕн тăвĕ, мĕн калĕ вăл мана çак сăмахсемшĕн?.. Çук, пытарма кирлĕ мар! Каласа памалла... пĕтĕмпех!.. Майлă вăхăт çеç килтĕр...

Çук, майлă вăхăт килмерĕ. Пĕтĕм шанчăк — юлашки вечер.

Кирек мĕн пултăр та — пурпĕрех калатăп!..

...Акă юлашки вечер... Пысăк залра «Дунай хумĕсем» кĕвĕ юхать. Çамрăксем мăшăрăн-мăшăрăн вальс ташлаççĕ. Эпĕ куçсемпе Зинăна шыратăп...

Зина чечеклĕ шурă кĕпепе. Капла вăл тата хитререх.

Çырă вăрăм çивĕчĕсене пуç тавра çавăрса çыхнă. Куçĕсем вара... Унăн çунтаракан куçĕсемпе тĕл пулсан, пĕтĕм кăкăра кăвар тулса ларнă пек туйăнчĕ. Вăл хамăр класри кĕрнеклĕ те сарлака хул-çурăмлă Витя ятлă спортсменпа ташлать. Лешĕ ăна пĕр аллипе пилĕкĕнчен, тепринпе хулĕнчен тытнă. Унăн çăра та кăтра çӳçĕ темшĕн-çке тахçанах мана курак йăви пек туйăнать. Зина кăкăрĕпе малалла ӳпĕннĕ, çемçе пĕчĕк аллине спортсменăн тачка хулпуççийĕ çине хунă, хăй, ăшăрханнипе пулас, самаях хĕрелнĕ. Спортсмен ăна хăлхинчен тем пăшăлтатса калать: иккĕшĕ те именчĕклĕн кулкалаççĕ...

Ташă пĕтсенех Зинăна тантăшсем хупăрласа илеççĕ. Пĕрисем ăна вăтам шкула ылттăн медальпе пĕтернĕ ятпа саламлаççĕ, теприсем пĕрер çаврăм та пулин пĕрле ташлама сĕнеççĕ...

Эпĕ çеç ун патне пымарăм,—саламлама та, ташлама та...

Эпир, арсын ачасем, кăштах шӳтлесе, маларах çапла калаçса татăлнăччĕ: юлашки каç черетĕн-черетĕн хамăр класри кашни хĕрпех ташламалла. Çавăнпах ĕнтĕ ачасем, кашни ташă хыççăн ылмашса тăрса, урăх хĕрпе ташлаççĕ. Пĕр Зина çеç иккĕмĕш хут никампа улшăнмасăр Витьăпа çаврăнать... Эпĕ, Зинăпа ташлама черет çитессе кĕтсе, кĕтессе пырса лартăм.

Купăссă выляма чарăннине те сисмен... Хама такам ятран чĕннипе пуçа çĕклерĕм.

— Мĕн ютшăнса ларатăн? Қайрăмăр, — илтĕнчĕ лăпкă сасă.

Ман умра Зина тăрать!.. Эпĕ, шартах сиксе, ура çине тăтăм та... хам «танго» ташлама пĕлменни аса килех кайрĕ... Пĕр самантлăха ним чĕнме те аптрарăм.

— Пĕлместĕп...—терĕм юлашкинчен аран-аран.

«Ăна тытса чармалла!... Қаламалла мĕн те пулин!.. Халь тытса чармасан — пĕтĕмпех пĕтет... Мĕн тăратăп эпĕ юпа пек?!»

— Зина!—эпĕ хăюллăн пуçа çĕклерĕм. Мана Зина çурăмĕ çеç курăнса юлчĕ.

— Зина!..

Зина ташлакан мăшăрсем хушшинче çухалчĕ.

Купăссă çĕнĕрен вальс калама пуçласан, Зина умне хам пытăм.

— Çук, халĕ манăн черет, — терĕ мана Витя, Зинăна каллех хăй хыççăн туртса. — Эпĕ малтантарах чĕнтĕм, эсĕ урăххине туп ĕнтĕ...

Манăн пĕтĕм ăшăм-чикĕм вĕресе кайрĕ. Шăла çыртса, вĕсем хыççăн пăхса юлтăм. Самантран ташлакан мăшăр мана пырса çапăннипе сулăнсах кайрăм, вара стена çумне пырса таянтăм.

Витя хăй кама пырса çапăннине те пĕлесшĕн пулмарĕ... Зинăна хăй çумне хытăрах чăмăртарĕ те — вĕсем самантрах куçран çухалчĕç.

Эпĕ пĕчченех залран тухрăм. Алтăр çăлтăр ӳпĕнсех кайнă. Пaçăр вăл телейлĕ ĕмĕт шерпечĕпе тулличчĕ. Халь ăна такам ĕçсе кайнă... Ĕçсе ярайманнине курăксем çине тăкса янă, халĕ вăл, сывлăм пулса, ура айĕнче таптанать...

Шкул килкартинчи ватă тирек икĕ тураттине ăста дирижер пек суллать. Вăл темĕнле тунсăхлă симфони юрлаттарать. Ачаш та хурлăхлă кĕвĕ, чĕрене юхса кĕрсе, ыраттарать, канăçсăр хумпа кăкăра тултарса, сывлăша пӳлет.

Çĕр çумĕпе тĕтре шăвать. Часах ирхи хĕвелĕн малтанхи пайăркисем çăра тĕтрене шăтарса тухаççĕ... Унтан пысăк хĕрлĕ хĕвел тăрă тӳпене çĕкленет...

Мĕн пуçа усса тăратăп эпĕ?.. Сахал пулать-и тĕнчере ăнăçсăр юрату?..

Тирек, ман еннелле тайăлса, амăшĕ хăйĕн ачине чĕрçине чĕннĕ пек, икĕ тураттине саркалать.

— Сывă пул, тирек... Сывă пул, тăван шкул, Зина...

Эпĕ, темшĕн савăнса, хыттăн кулса ятăм та васкасах шкул килкартинчен тухрăм. Виçĕ çул хушши Зинăшăн çунса асапланни мана кулăшла пек туйăнса кайрĕ. Çав кунах урăх района ĕçе куçнă атте патне тухса вĕçтертĕм...

...Унтанпа икĕ çул иртрĕ. Ăçта-ши халь Зина? Ăçта вĕренет-ши вăл? Хăш хулара, мĕнле шкулта?.. Нимĕн те пĕлместĕп. Çапах та час-часах юлашки вечер чуна ыраттарса аса килет. Каçĕ паянхи пекехчĕ ун чух. Кĕмĕл сăнчăр пек хуркайăк çулĕ çеç Атăл урлă мар, пирĕн шкул урлă каçса каятчĕ. Пĕр вĕçĕпе вăл, паянхи пекех, ялсем хыçĕнчи вăрман çине аннăччĕ, тепĕр вĕçĕ, мĕн курăнми пуличченех, кăнтăра кайса çухалатчĕ. Июнь хĕвелне такам çав сăнчăрпа кăкарса хунă тейĕн: йĕркеллĕн тĕттĕмленсе çитмесĕрех çутăлма та пуçларĕ.

Сасартăк пăрахут çинче чăваш юрри илтĕнсе кайрĕ.

Харăсах ик çынна саваймарăн,
Эс саватăн чунтан пĕр çынна.
Иккĕнрен мана мар-çке суйларăн —
Пурпĕрех манаймарăм сана.

Тĕтреллĕ нӳрĕ сывлăша кăкăр тулли çăтса илетĕп. Унпа пĕрле ман ăша çак юррăн çепĕç туйăмĕ юхса кĕрет. Ахăртнех, чунпах çырнă пулас ку юрра! Ман пекех телейсĕр юрату асапне тӳссе курнă пĕр-пĕр йĕкĕт ĕнтĕ. Эпĕ пĕччен мар иккен... Татах пур ман пек шăпалли...

Çак юрра хываканӑн аллине тытса чăмăртас килчĕ манăн... Вăл çеç мана, тахçанхи тус пек, ним сăмахсăрах ăнланассăн туйăнчĕ... «Аллуна пар, юрăçă. Туслашар. Пирĕн шăпасем пĕрешкелех», — тейĕттĕм.

Анчах эсĕ çапах та манран телейлĕрех-тĕр. Санăн хуйхуна та, савăнăçна та халăх юрлать. Хăвна канăç паман хĕрĕн хăлхине те çитет-тĕр... Юратмасан та, эсĕ уншăн çуннине ăнланса, самантлăха та пулин хĕрхенсе илет-тĕр вăл. Манăн вара пĕтĕм асапа кăкăрта йăтса çӳремелле.

Пăрахут кăшкăртса ячĕ — Шупашкар пристанне çитсе чарăнчĕ.

«Родина» кинотеатр умĕнчи электричествăпа ĕçлекен сехет йĕпписем вуннă кăтартаççĕ. («А. Серов» пăрахут Хусантан Шупашкара çити вунтăватă сехет хăпарнă иккен).

Пăрахутран аннă виçĕ арçын хыççăн эпĕ те хĕрлĕ площаделле утрăм: автобус станцинче ырана валли билет илес пулать, — манăн тата аллă çухрăм каймалла.

Тротуар çинче такам ман чăматана çапăнсах иртсе кайрĕ.

— Каçарăр, — терĕ «айăпа кĕнĕ» çын, ман еннелле çаврăнса. Вăл палланӑ çын пекех туйăнчĕ мана.

— Петя! — чĕнтĕм эпĕ.

Каччă ман çине çаврăнса пăхрĕ.

— Леня!?.

Петя аллисене саркаласа чупса пычĕ те мана, пĕчĕк ачапа вылянӑ пек, çавăркалама тытăнчĕ.

— Эсĕ-и ку, Леня?.. Ха... Ăçтан йăтăнса антăн эсĕ?..

Унтан, хам пĕр сăмах хирĕç тавăрса калама ĕлкĕричченех, алри чăматана ярса илчĕ.

— Кӳр, хам йăтам... Ман хваттере каятпăр... У-у, кунта хăйăр тултарнă пуль эсĕ!..

Петьăпа эпĕ пĕлтĕр паллашнăччĕ. Вăл пĕрремĕш çул Чăвашсен педагогика институтне вĕренме каятчĕ. Вăл, литературăна юратаканскер, чĕлхепе литература факультетне вĕренме кĕнĕ. Хăй те сăвăсем çыркалать. Унăн сăввисене эпĕ хаçат-журналсенче унччен куркаланӑ. Çавăнпа та пире паллашма нумай сăмахсемех кирлĕ пулмарĕç.

Питĕ кăмăлласкер хăй. Ытлашши сăмах ваклама юрат-

масть, анчах калаҫма тытӑнсан — чӑвашла юхӑмлӑн та тасан калаҫни ҫынна тӳрех тыткӑна илет. «Филармони», «земляк» пек сӑмахсем валли те вӑл «чӑн-чӑн чӑвашла» сӑмахсем тупать: «юрӑ ҫурчӗ», «янташ» тет.

Хӗл каҫиччен пирӗн хушӑра чылай ҫыру ҫӳрерӗ. Укҫатенкӗ енчен кӑшт хӗсӗкрех пулин те, студент пурнӑҫӗ шавлӑ та хаваслӑ пулни ҫинчен ҫыратчӗ вӑл. Юлашки вӑхӑтра вара пӗр «йӗтӗн ҫеҫки пек кӑвак куҫлӑ» хӗре юратса пӑрахни ҫинчен ҫыра пуҫларӗ. «Пӗлетӗн-и, Леня!.. Мӗн тери телейлӗ пулнӑ пулӑттӑм эпӗ ҫав кӑвак куҫсем маншӑн ҫеҫ ӑшшӑн ҫунас пулсан?!. Ҫав тӳпе пек сенкер куҫсенчен телей хӗвелӗ ялкӑшса тухассӑнах туйӑнать... Ӑшӑ вӗсем, ҫав вӑхӑтрах вичкӗн те. Вӗсенчен асамлӑ пайӑркасем саланаҫҫӗ тейӗн... Пӑхсан — чӗрене витӗрех тем пӗҫертсе илет...» Ҫапла ҫырнӑччӗ вӑл хӑйӗн юлашки ҫырӑвӗнче.

— Ну, мӗншӗн чӗнместӗн? — тет Петя Саввин. — Каласа пар ӗнтӗ пурнӑҫу ҫинчен. Мӗн ҫӗнни унта сан?..

— Хусан чиперех ларать, ҫав вырӑнтах... Экзаменсене те аванах патӑм. Виҫҫӗмӗш курс студенчӗ шутланатӑп ӗнтӗ. Каникула таврӑнатӑп.

— Эпӗ те парса пӗтертӗм... Хулпуҫҫи ҫинчен пӗр тонна илсе пӑрахнӑнах туйӑнчӗ... Ну, мӗнле ҫитрӗн?

— Аванах...

— Часах инженер пулатӑн ӗнтӗ.

— Инҫе-ха...

— Паян маншӑн ҫанталӑк та уркахла пек... Хӗвел те ҫутӑрах.

— Мӗн вара?..

— Калатӑп вӗт-ха... Ыран киле каятӑп... Ӳстерсе паракан стипендине ҫаклантӑм...

Петя, мана кашни сӑмахрах пӳле-пӳле, хӑй ҫинчен калама тытӑнать. Унӑн вӑхӑтлӑха ҫеҫ хаваслӑ сӑн-питӗнче темӗнле пытанчӑк хуйхӑ, йывӑр кӑмӑл палӑрать.

— Эсӗ питӗ улшӑннӑ-ҫке? — тетӗп эпӗ.

— Мӗншӗн?

— Тусусене ҫапӑнса ӳксен те палласшӑн мар, — шӳтлерӗм эпӗ.

— Ҫу-ук... Эпӗ ахаль ҫавӑн пек ҫын. Пыратӑп ҫапла урампа... Пуҫра шухӑш пӑтранать... Хӑш чух чи ҫывӑх юлташа та асӑрхамасӑрах иртсе каятӑн... Вара юлташсем: «Эс мӑнкӑмӑллӑ, сывлӑх та сунмастӑн», — теме пӑхаҫҫӗ...

— Сӑлтавӗ пулӗ?

— Кам пӗлет, — тет Петя лӑпкӑн, темӗн пытарса.

Петя Саввин хваттерне часах ҫитрĕмĕр. «Студентла» апатланса чей ĕҫнĕ хыҫҫăн, эпĕ хула курса ҫӳреме шутларăм. Петя, «обходнăй листпа» ҫӳремелле тесе, института кайма пулчĕ.

— «Йĕтĕн ҫеҫки» татма каятăн пулĕ-ха, — шӳтлерĕм эпĕ, юратнă хĕрне аса илтерсе.

— Ҫук... Йĕтĕн ҫеҫкисем маншăн чечекленмен, — терĕ Петя. — Қаярах каласа парăп акă...

Эпир пĕр-пĕринпе каҫхине пилĕк сехетре Иванов паркĕнче тĕл пулма калаҫса татăлтăмăр та уйрăлтăмăр.

Хулара унта та кунта ҫĕнĕ ҫуртсем ҫĕкленеҫҫĕ. Педагогика институтне хирĕҫ ялхуҫалăх институчĕн пысăк ҫуртне тăваҫҫĕ. Хăпартмалли кран вăрман урлă инҫете пăхакан пысăк жираф пек ҫурт ҫинелле ӳпĕннĕ.

Урамсем тăрăх ҫӳресе пилĕк сехет ҫитни те сисĕнмерĕ. Эпĕ Атăл хĕрринелле утрăм.

Петьăна эпĕ, хамăр килĕшнĕ пек, Иванов палăкĕ патĕнче тĕл пултăм. Вăл, чĕркуҫҫи ҫине пĕчĕк блокнот хурса, сылтăм аллипе чавсаланнă та таянмалли сак ҫинче пĕччеңех ларать. Хăй тĕрĕллĕ шурă кĕпепе, ҫĕнĕ костюмпа, шурă пушмакпа, ҫара пуҫăн.

Паркра уҫă. Тусан ҫук. Мотор шавĕ те аякра. Атăл енчен варкăш ҫил вĕрет. Ҫеҫкери сирень хушшинчен пĕр кайăк чăп-чăп текелесе сас парать.

— Итлĕр-ха, — терĕ Саввин, блокнотăн чĕркелесе пĕтернĕ страницисене уҫкаласа.

— Мĕн?

Вăл сăвă вулама пикенчĕ:

«Сенкер куҫсем!.. Аван пĕлетĕп:
Ҫунать сан канăҫсăр чĕрӳ...
Анчах та камшăн-ши?.. Сисетĕп —
Вăл маншăн мар ҫапла хĕрӳ...»

— Халь ҫыртăн-и? — ыйтрăм эпĕ.

— Халь.

— Ма вара эсĕ тунсăхлă, кичем сăвăсем ҫыратăн?.. Халĕ пачах урăх ĕмĕр-ҫке...

— Эпĕ ăна хам валли ҫеҫ...

— Ху валли кăна мар... Сенкер куҫсем валли те, — терĕм эпĕ, Петьăна куҫĕнчен пăхса. — Мĕнлескер вара вăл сан?.. Каласа парччĕ... Асапланатăн пĕччен...

— Саншăн кăсăклă пулас ҫук вăл.

— Мĕншĕн? Хăвна та ҫăмăлрах пулĕ.

Петя пĕр самант шухăша кайса ларчĕ, унтан хăйĕн малтанхи юратăвĕ çинчен калама пуçларĕ.

— Паллашасса институтра, драмкружок занятийĕнче паллашнă... Хăйне Ида тесе чĕнеççĕ...

Павловăн «Ялта» пьесине хатĕрлеме тытăнтăмăр. Мана Ванюк рольне пачĕç. Елюк рольне — Идăна... Эпир унпа «Айдар» спектакльте те тĕп рольсене вылянăччĕ. Çавăнтан пуçланчĕ те ĕнтĕ манăн пĕтĕм асап... Тăтăшах ун çинчен шухăшласа çӳреме тытăнтăм... Темшĕн асран каймасть вăл... Каçхине те чылайччен çывăраймасăр выртатăп. Ăçта-ăçта çитместĕп пулĕ унпа... Вута та, шыва та кĕрсе тухатпăр пĕрле... Çиленетпĕр те, килĕшетпĕр те... Анчах шухăшсемпе çеç çав. Хăйĕнпе пачах урăхла...

Хальхинче вăл чылайччен турткаланса тăчĕ. «Елюк рольне паратăр пулсан — вылямастăп», — терĕ. Ида мĕн пирки Елюк рольне вылясшăн пулманнине мансăр пуçне никам та чухлаймарĕ пулас... Ванюкпа Елюкăн ыталанса чуптумалла пулнипе килĕшесшĕн мар вăл... Ванюкĕ — эпĕ-çке. Драмкружок пуçлăхĕ пĕрре пикеннĕ рольсене улăштарма килĕшмерĕ.

— Тĕп рольсене сире иксĕрех пама тивет,—терĕ вăл.— Эсир пултаратăр... Пинерпипе Сентиер ролĕсене мĕнле чаплă вылярăр. Чăн-чăн артистсем пек.

Эпĕ, драмкружок пуçлăхĕнчен «чăн-чăн артист» ятне илтнĕскер, репетици вăхăтĕнче хамăн сăмахсене манса аптрарăм. Ида та сӳрĕккĕн вылять, суфлер сăмахĕсене пăтраштарать, тепĕр хут вулама ыйтать. Чи хĕрӳ вырăнсенче, мана куçран пăхас вырăнне, аяккалла пăхса, çаврăнса тăрать, сăмахĕсене туйăмсăр сасăпа калать.

Пирĕншĕн чăнласах шикленсе ӳкрĕç, пирĕн çине шанчăксăррăн пăха пуçларĕç.

— Каплах пулсан, халăх умĕнче намăс куратпăр вĕт,— терĕ драмкружок пуçлăхĕ мана, институт шефа илнĕ колхоза спектакльпе каяс тенĕ кун. — Эсĕ йĕркеллех выляттăн-çке... Мĕн пулчĕ сана?.. Пĕтĕм спектакль эсир мĕнле вылянинчен килет: сирĕн тĕп рольсем.

Яла вырсарникуна хирĕç икĕ автомашинăпа кайрăмăр. Малтан институт директорĕ доклад турĕ, унтан пирĕн хор концерт пачĕ, чи юлашкинчен—эпир спектакль пуçларăмăр.

Драмкружок пуçлăхĕ сцена çине тухас умĕн мана лăплантарма тăрăшать. Эпĕ — пăлханнипе — вăл мĕн каланине те илтместĕп. «Хăюллăрах пул, ан пăлхан», — тенине çеç астăватăп.

Чи хӗрӳ вырӑнта хам сцена ҫинче иккенне те манса кайнӑ. Эпӗ Идӑна хам ҫума пӑчӑртарӑм та хытӑ-хытӑ чуптурӑм. Малалла мӗн пулнине тӗлӗкри пек ҫеҫ астӑватӑп... Чаршав хупӑнсан, чылайччен шавлӑн алӑ ҫупрӗҫ.

— Мӗн хӑтлантӑн эсӗ? — тет Ҫтаппан рольне выляна Витали. — Унта сирӗн чуптумалла марччӗ вӗт!.. Аллааллӑн тытӑнса ҫеҫ лармаллаччӗ.

Драмкружок пуҫлӑхӗ те ман пата чупса пычӗ. Эпӗ вӑл вӑрҫса тӑкасса кӗтнӗччӗ.

— Тав тӑватӑп сана, — терӗ вӑл манӑн алла чӑмӑртаса. — Чӑн-чӑн артист эс, шуйттан ачи!..

Шӑпах ҫав вӑхӑтра пирӗн ума Ида пырса тӑчӗ. Вӑл драмкружок пуҫлӑхӗ ҫине шӑтарасла пӑхса илчӗ те, сассине ҫӗклентерсе, ҫапла каларӗ:

— Эсир мана хӗр рольне урӑх нихҫан та ан парӑр!.. Илтетӗр-и?...

— Мӗншӗн, Ида?..

— Ахалех... Пултараймастӑп...

— Ида, пултаратӑн-ҫке... Ҫав тери аван тухать!.. Хӑвӑн курасчӗ сан хӑвӑр мӗнле вылянине!..

— Эсир куласшӑн манран, — терӗ Ида кӗҫ-вӗҫ йӗрсе ярасла, унтан хӑвӑрт ман енне ҫаврӑнчӗ: — Атя-ха манпа...

Эпӗ Ида хыҫҫӑн пушӑ пӳлӗме тухрӑм...

Кӗҫ-вӗҫ питрен ҫупса ярассӑнах чӑрлаттарса пӑхрӗ вӑл ман ҫине. Ҫырӑ ҫӳҫ пайӑркисем, сарлака ҫамки тӑрӑх авӑнса илсе, хыҫалалла хутлана-хутлана выртнӑ. Эпӗ ун умӗнче, айӑпа кӗнӗ пӗчӗк ача пек, пуҫа усса тӑтӑм.

— Эсӗ каллех паҫӑрхи пек хӑтланатӑн пулсан, — терӗ вӑл ҫирӗппӗн, — чаршав хупӑнасса кӗтмесӗрех сцена синчен анса таратӑп, е халӑх умӗнчех ҫупса яратӑп... Ӑнлантӑн-и?

Эпӗ ӑнлантӑм. Пӗтӗмпех ӑнлантӑм. Кӑшт уҫӑлас тесе, сцена хыҫӗнчи алӑкран урама тухрӑм.

Тулта шӑнтнӑччӗ. Саплӑклӑ тӳпере ҫӑлтӑрсем пӑт-пат курӑнкалатчӗҫ. Шур илнӗ куҫ пек уйӑх ҫӳхе пӗлӗт хыҫӗнчен сиввӗн пӑхатчӗ.

Ним ҫинчен те шухӑшлас мар тетӗп, пурпӗрех Идӑн шӑтарасла тинкернӗ куҫӗсем умран каймаҫҫӗ. Унӑн каҫарусӑр вичкӗн сӑмахӗсем хӑлхара пуҫа ыраттарса янраҫҫӗ. Мана чӗнсе кӗртрӗҫ.

Эпӗ сцена ҫине хӑпарнӑ чух Ида сӑпка умӗнче тем аппаланса тӑратчӗ. Вӑл, ним пулман пекех, манпа шӳтлесе

каласма пусларӗ. Анчах унӑн шӳчӗсем мана пачах та хавaслантармарӗç. Идӑпа ман хушӑри çыхӑну шӳт вӗçне çеç юлнине, Ида минутсерен манран аяккарах та аяккарах пӑрӑннине эпӗ пӗтӗмпех ӑнлантӑм.

Петя тарланӑ çамкине сӑмса тутрипе шӑлса илчӗ.

— Йӑлӑхтармарӑм-и? — ыйтрӗ вӑл.

— Çук, çук... Кала.

Петя тата ытларах хӑюлланса малалла каларӗ.

— Ида мана юратма пултараяс çуккине ун чухне лайӑх ӑнлантӑм пулин те, чӗрем темшӗн ӗненесшӗн мар... Татах тем кӗтет вӑл, темӗнле вӑрттӑн шанчӑк усрать, Ида еннех туртӑнать. Пӗррехинче эпӗ ӑна кинона чӗнтӗм. «Çук», — терӗ те вӑл, пӑрӑнса кайрӗ. Ку вара юлашки шанчӑк хӗлхемне сӳнтерекенни пулчӗ...

Акӑ пӗрре эпӗ институтри иккӗмӗш хут коридорӗн вӗçӗнче диван çинче пӗчченех ларатӑп. Лекцисем тахçанах пӗтнӗ пулин те, киле каяс килмерӗ. Каç пулнӑччӗ. Сасартӑк хам çума такам пырса ларнине туйрӑм. Пӑхатӑп та — Ида!..

— Мӗн шухӑша кайса ларатӑн? — терӗ вӑл яланхи пекех лӑпкӑн.

Эпӗ нимӗн те чӗнмерӗм.

— Чирлемен пулӗ те? — терӗ Ида, куçран пӑхма тӑрӑшса.

— Мӗншӗн?

— Яланах темӗнле хуйхӑллӑ, сывӑ мар çын пек çӳретӗн.

— Çук. Чирлемен.

— Виçӗмкун кинона пыманшӑн эсӗ мана кӳренмерӗн пуль те?

— Çук...

— Каçар... эп апла тӑвасшӑн марччӗ, хам та санпа пӗр япала çинчен каласма май шыраттӑм. — Ида ман еннелле çаврӑнса ларчӗ те, сассине сасартӑк кӑмӑлсӑррӑн улӑштарса, çапла каларӗ: — Акӑ мӗн, Петя... Тен, кирлех те марччӗ пулӗ те — урӑхла пултараймарӑм... Эпӗ сана питӗ лайӑх ӑнлана пусларӑм. Уйрӑмах яла спектакльпе кайнӑ хыççӑн. Эсӗ лайӑх ача... Анчах...

Манӑн чӗре хыттӑн тапма пусларӗ.

— Эсӗ манпа ытлашши ан интереслен, мӗншӗн тесен пултараймастӑп... Манӑн пур...

— Кам?! — эпӗ кӑшкӑрсах ятӑм.

— Ку кирлех мар... Мана ан кӳрен. Пирӗн хушӑра юлташлӑх çеç пулма пултарать... Эсӗ ман хыççӑн темӗнле

йёрлесе çӳренĕ пек пулса тухать... Кирлĕ мар апла тума... Пĕлетĕн-и, питĕ аван мар хама та... Сана эпĕ хисеплетĕп, питĕ хисеплетĕп...

...Куç хуралса килчĕ. Çĕр çинче чи хакли, унсăрăн пурăнма май çукки манран ĕмĕрлĕхех тарнăн туйăнчĕ. Хама хам та манса кайрăм... Идăна хыттăн ыталаса илтĕм — вăл йынăшсах ячĕ... «Кирлĕ мар, Петя... яр... эпĕ сана пĕтĕмпех каларăм...» тенине çеç астăватăп...

Çук, эпĕ ăна пурпĕрех манаймарăм... Ну, мĕнех?.. Пурăнтăр вăл ман асăмра. Никама та чăрмантарас çук вăл. Е начар-и çынна çын юратни? Е ăна чăрмантарать-и такам ун çинчен ăшă туйăм усрани?.. Эпĕ айăплă-и вара вăл çапла мана килĕшӳллĕ пулнăшăн?.. Антив, пурăнтăр чĕрере. Унăн сăнарĕ, эпĕ ăна ăшра та пулин юратни мана çапах сăвăсем çырма хавхалану кӳрет...

Çапла вĕçлерĕ Петя хăйĕн калавне. Çак калав мана хамăн ăнăçсăр юрату историне те аса илтерчĕ.

— Петя, тен, сана вăл юратать те пулĕ? — лăплантарма тăрăшрăм эпĕ ăна. — Малашне сирĕн йĕркеллех пулĕ акă. Каччи мĕнлескер вара? Питĕ чаплăскер-им?..

— Пĕлместĕп çав... чаплă пулĕ ĕнтĕ. Хамран начар çын пулсан, эпĕ ăна, тен, Ида çывăхне те яман пулăттăм. Ну, çук! Кирек кам пултăр! Пĕр-пĕрне саваççĕ пулсан — телейлĕ... Пăхман хĕвеле пăхтараймăн...

— Иккĕш пĕрлех çӳреççĕ-и? — ыйтрăм эпĕ каллех.

— Çу-ук... Каччипе калаçман та вăл... Пĕрне-пĕри вĕсем шкулта вĕреннĕ чухнех юратса пăрахнă, тет... Пĕр класра виçĕ çул вĕреннĕ... Пĕрне-пĕри вăрттăн савнă... Каччи Ида савмасть тесе шутланă, Ида вара каччи савмасть пуль тенĕ... Кайран, вăтам шкул пĕтерсен, юлашки вечер хыççăн пĕр учитель Идăна çак каччă çыруне пырса панă, тет. Учитель аллине çырăвĕ темĕнле майпа çакланнă вара. Ида çырăва вуласа пăхать те — каччине шырама тытăнать... Лешĕ вечертан тухса тарнă-мĕн... Унтанпа вĕсем пĕр-пĕрне пачах та тĕл пулман, тет...

Хĕвел каç еннелле сулăннă. Çӳлĕ çурт мĕлкисем хуллен парк еннелле тăсăла-тăсăла пыраççĕ. Петя аллинчи сехет йĕпписем çиччĕ çурă çитнине пĕлтереççĕ.

Акă, çывăхри репродуктортан чăваш юрри янраса кайрĕ. Ĕнер пăрахут çинче малтанхи хут илтнĕ юрă!

Петя каласа пани тата çак чуна пырса тивекен юрă мана тарăн шухăша ячĕ, ĕнер пăрахут çинче шухăшласа килнĕ тутлă та йӳçĕ асаилӳсене тепĕр хут вăратрĕ.

Икĕ чун хушшинче шырамастăп
Эпĕ хам телее, тусăма...
Эс телейлĕшĕн те савăнатăп, —
Пурпĕрех манаймарăм сана...

Ку юрра маншăн хывнă пекех туйăнать... Эпĕ Петя куçĕнчен пăхрăм. Юрă ăна та килĕшет иккен. Вăл çак юрăсăр пуçне урăх нимĕн те илтмест тейĕн, куçĕсем ним сиккелемесĕр пăхаççĕ, хăй кĕç-вĕç татăлса каяс кĕсле хĕлĕхĕ пек канăçсăррăн туртăнса ларать.

— Килĕшет-и? — ыйтрăм эпĕ юриех.

Вăл хуллен ман еннелле çаврăнса ларчĕ.

— Куна эпĕ Идăна халалласа çырнăччĕ, — терĕ вăл лăпкăн.

...Çакă мана уяр кун аслати çапнă пекех пырса тиврĕ... Ĕненессĕм те килмерĕ.

— Ан калаç!..

— Çапла. Сăмахĕсем манăн...

Эпĕ пĕр тĕлĕннипе, пĕр хавасланнипе Петьăн аллине хыттăн тытса чăмăртарăм.

— Петя!... Кирек мĕн кала та — сана вăл юратмасăр пултараймастех!..

Çак самантра Петя кĕтмен çĕртен чĕтренсе илчĕ те, çавракa куçĕсемпе ман хулпуççи урлă пăхса, чарăнса тăчĕ. Хыçалалла илемлĕн авăнса выртакан çырă çӳç пĕрчисем, çилпе вĕçкелесе, çамки çинелле анаççĕ. Ачаллараx сăн-пичĕ хуллен хĕреле пуçларĕ.

— Авă хăй, — кăшт çеç пуçĕпе сулса, куçĕсемпе ман хулпуççи урлă кăтартрĕ вăл.

Эпĕ хыçалалла çаврăнса пăхрăм. Лапсăркка сирень айĕнчи хыçлă сак çинче икĕ çамрăк хĕр лараççĕ. Иккĕшĕ те вĕсем чечеклĕ шурă платьесемпе. Вĕсенчен пĕри пирĕн еннелле пăхать.

— Зина!..

Ун умне мĕнле çитсе тăнине те астумастăп...

Темĕнле пулса тухрĕ вара... Эпĕ ăна хытă-хытă ыталаса илтĕм... Ыталаса илтĕм те, хĕр пичĕ хам паталла сулăнсан... сасартăк манăн алăсем лаштăрах кайрĕç...

...Репродуктортан юррăн юлашки йĕркисем илтĕнчĕç...

Пурпĕрех манаймарăм сана...

— Çапах та тĕл пултăмăр иккен, — терĕ хĕр йăвашшăн... — Эпĕ пĕлнĕ... Пĕлнĕ пурпĕрех тĕл пуласса...

Унтан вăл шарт сикрĕ те хăйĕн тус-тантăшĕ еннелле çаврăнчĕ.

— Паллашăр, Леня, — терĕ вăл, ман çинчен куçне илмесĕрех пуçĕпе сак çинчи хĕр еннелле сулса. — Галя ятлă вăл.

Галя текенни кайма васкарĕ.

— Сывă пулăр-ха, Ида, манăн васкамалла, — терĕ вăл, ал сехечĕ çине пăхса.

— И-ида?..

Тĕлĕннипе манăн çăвар та карăлсах кайрĕ пулас. «Зина... Зинаида... Ида... Акă кам иккен вăл Ида!.. Шкулта чухнех ăна тантăшĕсем шӳтлесе çапла чĕнетчĕç мар-и?.. Чăн та çапла! Мĕнле-ха çакă халĕ тин ман аса пырса кĕчĕ?..»

Эпĕ Зинăн «йĕтĕн çеçки пек» кăвак куçĕсенчен сăнаса пăхрăм: вĕсем манăн... пĕтĕмпех манăн!..

— Мĕн эсĕ, Леня?.. — илтĕнчĕ шиклĕ сасă.

Эпĕ çăвар уçса пĕр сăмах тавăрса калама та пултараймарăм. Мана Зина умĕнче тăма та намăс пек, ун çумĕнче тăма манăн нимĕнле тивĕçĕм те çук пек туйăнса кайрĕ.

...Қам-ши ăна чăн-чăнах тивĕç çын?.. Эпĕ тин кăна юлташпа пĕрле ларнă сак еннелле çаврăнса пăхрăм. Анчах Петя ниçта та курăнмарĕ...

1954.

ХУРА КУÇЛĂ ИНА

(*Калав*)

Кам Шупашкарта Атăл хĕррипе тăвалла хăпарса курнă, çавă сулахайра пăралукран тетел пек карса тунă картана, çав картари симĕс акацисем ăшĕнче хĕрлĕ, кăвак тумлă çынсем ларнине асăрханă ĕнтĕ. Кунта — тубдиспансер... Çыннисем вара, сывалма пынăскерсем, ир-каç уçăлма тухаççĕ.

Пĕрре çапла эпĕ май уйăхĕнче ĕç хыççăн уçăлма тухрăм та пĕчченех Атăл хĕррипе тăвалла утатăп.

Сĕткене кĕрсе çитнĕ çăкасем, кăçалхи çĕнĕ ўт тĕсне те улăштарма ĕлкĕреймен çемçе те тачка хунавĕсене пĕчĕк ача аллисем пек кăнтарса, хăйсен тулли йывăрăшĕпе киленнĕ евĕр, сулмаклăн ларатчĕç. Вĕсен тин сарăлса çитнĕ, пĕр тусан пĕрчи те курман авăк йывăр çулçисене лĕп çил те перéнсе хускатма хăймасăрах иртсе каятчĕ.

Сасартăк тубдиспансер картинчен хама такам кăшкăрса чĕннине илтрĕм.

— Юлташ!.. Юлташăм!.. Тăхта-ха, кил-ха кунта тархасшăн...

Эпĕ, чул карлăк çумĕнчен уйрăлса, карта еннелле çул тытрăм.

— Эсĕ ан хăра манран... Халĕ эп часах сывалатăп ĕнтĕ, чир ермĕ, — илтрĕм эпĕ хыçра çав хăйăлти сассах хам тин çеç иртсе килнĕ акаци тĕмми хушшинчен.

Ун сасси, шала кайнăскер, аякра пек туйăнчĕ мана, çавăнпа эпĕ хамран пĕр пилĕк-ултă утăмри тĕмĕ ăшнелле пăхса утаттăм.

Ку пĕр çирĕм виç-çирĕм тăват çулсенчи, лутрарах пўллĕ, çунтарса пăхакан çырă куçлă, сўлĕ çамкаллă, путса кĕнĕ типшĕм питлĕ арçын пулчĕ. Хăй вăл чирлĕ çыннăн кĕрлĕ тумĕпеччĕ, пуçĕнче те хĕрлĕ калпак.

Пĕр-ик кун каялла хырнă сайра хура сухалĕ пĕчĕк ача мăкăнь вăррипе янахне сĕркелесе пĕтернĕ пек шăтса тухнă.

— Итле-ха, — терĕ вăл васкавлăн. — Ырă çын пулса эс манăн çак хутсене тархасшăн пĕр-пĕр редакцине леçсе пар. Ку вăл ман — çырса пынисем. Мĕн те пулин тума майĕ пур-ши вĕсенчен?

— Хăш редакцине леçсе парас вара? — ыйтрăм эпĕ.

— Кирек хăшне те юрать,—терĕ вăл хыпаланса, унтан, эпĕ редакцине çывăх пулнине пĕлсен, савăнсах кайрĕ: — Манăн телейĕм те пур иккен, — терĕ вăл малалла. — Çапса кăларсан питĕ аванччĕ... кăмăла çĕклĕччĕ... Чирлĕ çынна — хăвах пĕлетĕн — хăш чухне ниме тăман савăнăçах та вăй хушать... — терĕ вăл, кăкăртан хăйăлтаттарса, унтан аллине карта хушăкĕ витĕр тăсрĕ: — Тархасшăн, пĕр пирус пар-ха.

— Сана туртма юрамасть пулĕ?

Эпĕ çине тăрсах хирĕçлерĕм пулин те, чирлĕ çын хăйĕннех печĕ:

— Эпĕ туртас килнипе лара-тăра пĕлмесĕр пушшех чирлесе каятăп, — терĕ вăл, ачалла йăлăнса. — Эпĕ пĕрре çеç туртатăп. Халĕ мана туртма та юрать ĕнтĕ.

Вуламан япалана, çитменнине тата, курман-илтмен çын тем çырса пынине пичетре çапса кăларас пирки нимĕнле шанчăк параймасăрах эпĕ унран уйрăлтăм.

Çав «çырса пынисем» — алă çитейменнипе — манăн сĕтелте икĕ эрне выртрĕç. Эпĕ ун çинчен тепре Атăл хĕррине кайма тухсан тин аса илтĕм те, тӳрех каялла таврăнса, ĕшеннĕ пуçпах вуласа тухрăм.

Кайрантарах хам хăлхапа хам илтнисем, хам куçпа хам курнисем çакăнта çырса панă ĕçсемпе çыхăнса тăнăран эпĕ ăна вулакана мĕн пуçласа вĕçне çитиех илсе паратăп.

Акă вăл...

«...Çакăнта акацисем ăшĕнче ларнă майĕн акă ĕнтĕ миçемĕш хут икĕ çул каялла пулса иртнĕ ĕçсене аса илетĕп.

Манăн малашнехи калаçу вунултă çула та çитмен хĕрача çинчен пынине пĕлсен, вулакансем мана, тен, ятласа та пĕтерĕç. «Ăсран тайăлнă», «ухмах» тейĕç. Анчах мĕн каласан та ĕнтĕ — çырмасăр пултараймарăм. Мĕншĕн тесен ним пытармалли те çук унта. Туслăх та туслăх!.. Аслă юлташпа кĕçĕн юлташ хушшинчи туслăх çеç. Çавăнпа та çакна эпĕ вулакан мана йăнăш ăнланасран малтанах пĕлтерсе хурас терĕм.

ч-38545

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
БИБЛИОТЕКА Союза писателей Чувашск. АССР Инв. № 267

...Ун чух кĕркуннеччĕ. Йĕпхӳ пĕрĕхетчĕ. Ҫул лупашкисем хĕррипе танах йӑлхар пылчӑкпа тулнӑччĕ, вӑл машина урapисем айĕнчен ҫатӑртатса сирпĕнетчĕ.

Эпир ун чухне виҫĕ студент, малтанхи автобуса ĕлкĕреймесĕр, яла каҫ енне ҫитрĕмĕр.

Ура айĕнчи тӑмлӑ ҫӑра пылчӑк калушсене ҫыпӑҫтара-ҫыпӑҫтара лартать. Пачах кĕтмен енчен вирхĕнсе тухнӑ ҫил ҫул айккинчи шыв кӳлленчĕкĕсен питне чӑр-чар чĕрсе хӑварать, ҫиеле йӑмрасен тимĕр тутӑхĕ тĕслĕ янкар ҫулҫисене вĕҫтерсе килсе пӑрахать, ҫаралнӑ йӑмрасен тураттисене пӑтраштарса явкалать.

Те шавлӑ хулана хӑнӑхнӑран, те тĕксĕм ҫанталӑк кӑмӑла пусарнӑран, мана — чӑн-чӑн ял ачинех — ҫак пĕчĕк шыв ҫинчи ял шӑплӑхĕ ун чухне питĕ кичеммĕн туйӑнчĕ.

Пирĕнтен малтантарах килнĕ студенткӑсем мана эпĕ вырнаҫас хваттер тĕлне кӑтартса ячĕҫ.

Ку ҫурт, юханшыв хĕрринчи урамӑн ытти ҫурчĕсем пекех, икĕ чӳречипе сӑрталла хĕвеле хирĕҫ пӑхать. Кантӑк умĕнче ҫаралса юлнӑ ҫамрӑк йӑмра хӑрах тураттипе ҫурт ҫамки ҫине чавсаланнӑ та хуҫӑлнӑ пĕчĕк турачĕн тӑкӑнмасӑр юлнӑ ҫулҫисемпе чӑштӑртатса ларать.

Вырӑсла хапха умĕнче эпĕ кивĕ салтак гимнастерки тата атӑ тӑхӑннӑ старике тĕл пултӑм.

— Хĕрсем килесшĕнччĕ те, — терĕ вӑл. — Ачана та вĕренме пулӑшĕччĕҫ.

Эпĕ хĕрачасем пурте хваттере вырнаҫса пĕтнине пĕлтерсен, мана вӑл хӑй хыҫҫӑн пыма чĕнчĕ. Алкум вĕҫĕнчи чӑпта ҫинче урасене сӑтӑркаласа, тĕттĕм ҫенĕк витĕр эпир пӳрте кĕтĕмĕр.

Пӳртĕнче йӳҫĕтнĕ купӑста шӑрши сӑмсана ҫуратчĕ. Пысӑках мар пӳртре — сулахай енче вырӑсла кӑмака. Тĕпел кукрине пӳлсе хуракан ҫӳлтен уҫӑ чӑлан урлӑ тутӑрсем уртнӑ. Ула кушак, таса урайĕнче мĕн те пулин вылямалли шыраса, чӑлан ҫумĕнчи пӑтаран усӑнакан питшӑлли ҫӳҫисене икĕ уран тӑрса ҫапкалать.

Эпĕ, пуҫа-пуҫӑн стена ҫумне лартнӑ икĕ кравать тĕлĕнчен чӑматанĕ-мĕнĕпех иртсе, килкартинелле пӑхакан чӳрече тĕлне лартӑм.

— Сана ҫакӑнта вырӑн туса паратпӑр, — терĕ хуҫа.

Вӑл тĕллесе кӑтартнӑ хам ҫумри кĕтесре пӑнтӑхса саралнӑ турӑш тата репродуктор пур. Хуҫа малалла та хваттерĕ пиркиех каларĕ:

— Икĕ тӑрӑхла сак юнашар лартӑпӑр. Карчӑк тӳшек

чыхса паратъ. Çутă енчен — краççын пур. Пӳрчĕ сивех пулмасть. — Вăл вара сĕтел енне çаврăнчĕ те: — Ина, тавайха, тимĕр кăмака хутар, — терĕ кăмака шăтăкĕ патнелле кармашса.

Сĕтел хушшинче тем çырса ларакан пĕчĕк питлĕ-куçлă, хура куçхаршиллĕ хĕрача, хĕрлĕ кипке тăхăннăскер, ман çинелле чăрлаттарса пăхса илчĕ те, сĕтел хушшинчен тухса, урай варринчи тимĕр кăмакана тӳле вутти тултара пуçларĕ.

Вăл çинçешке те çӳлĕ, хура çӳçне икĕ пĕчĕк çивĕт туса хыçалалла янă.

Часах карчăк та килсе çитрĕ. Кĕрсенех чи малтан вăл мана алă пырса тытрĕ:

— Учитель пуль-ха, — терĕ вăл именчĕклĕн.

— Учителех мар-ха, практикант...

— Учителех мар тет-ха! — кăшкăрса каларĕ старик карчăк еннелле.

— Нумайлăха-и?

— Икĕ уйăхлăха...

— Ик уйăх, тет! — старик каллех карчăк еннелле майне тăсрĕ.

Айри сак та ăшăнса çитмен çĕнĕ вырăнта эпĕ çĕнĕ хуçан кăмăл йĕрне ӳкме тăрăшса, мăн çынна çыпăçуллă сăмах шыраса, çавна май, ватă çын пек сăпайлăн та ерипен калаçса хăйи-хăйми лартăм.

Манăн пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пĕтĕм хамăн пурнăç çинчен каласа памалла пулчĕ. «Атте манăн çук. Анне колхозра ĕçлет», — терĕм эпĕ.

Витĕрех мар хăлхаллă карчăк, сылтăм хăлхине ман еннелле тытса, сĕтел çине аллипе чавсалансах итлерĕ. Анне мана пачах пулăшайманнине пĕлсен, ман çине вăл шеллесе пăхрĕ.

Кайран старик хăй çинчен калама тытăнчĕ. Вăл виçĕ вăрçăра пулнă иккен. Тăван çĕршывшăн пынă иртнĕ аслă вăрçăра Берлина çитиех çурран утса тухнă-мĕн. Ураран ӳкмелле пĕрре те аманман. Икĕ хутчен Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илнĕ. Халĕ вăл колхозра сурăх фермин пуçлăхĕ. Ачасем иккĕ çеç пулнă. Асли кăçал вăтам шкула ылттăн медальпе пĕтернĕ те халĕ Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан университетра вĕреннĕ. Кĕçĕнни — Ина — 9-мĕш класра вĕренет-мĕн.

Кил хуçи хăйне Ваçук пичче тесе чĕнме хушрĕ.

Вăл манпа сĕтел çине сăра чĕресĕ лартсах калаçа пуçларĕ.

Ина хушăран-хушă тимĕр кăмака алăкне уçа-уçа хупрĕ, вутпуççисене турчкапа çавăркаларĕ, унтан каллех, алла кĕнеке тытса, тĕпел кукринчи сĕтел умне кайрĕ. Сайра хутра çех пирĕн еннелле хăйăн-хăйăн пăхкаласа илчĕ.

Эпир, Ваçук пиччепе иксĕмĕр, кăпăклă сăра пирĕн кăмăлсене уçса янă май, часах пĕр-пĕринчен ним ютшăнмасăр калаçса лартăмăр.

— Эпĕ арçын ачасене юратарах паратăп, — терĕ вара Ваçук пичче. — Карчăк хваттере хĕрсене ярасшăнччĕ. Вĕсемпе ытлашши таса пулас пулать. Ку килĕшмест вĕсене, вăл килĕшмест. — Юлашкинчен вăл ман паталла ӳпĕнчĕ те çапла каласа хучĕ: — Ку хĕрача ман, тем, аппăшĕ пекех вĕренеймест. Эс пулăшкала-ха ăна пĕртак.

Ина вара вартах хыçалалла çаврăнса пăхрĕ те, ура çине тăрса, хăвăрт алăк патнелле утрĕ, алăка шалтлаттарса хупрĕ. Иртсе кайнă чухне вăл ман çине куç хӳрипе çилĕллĕн пăхса хăварчĕ. Мана аван мар пулса кайрĕ. Мана — пулас учителе — ку килĕшмерĕ.

Каçхине эпĕ Инăна килхушшинче чăпăри-и! чăпăри-и! тесе ĕне шăварнине куртăм.

Малтанхи ик-виçĕ кун хĕрача эпĕ ларнă сĕтел патне те пымарĕ, урокĕсене тĕпел кукринчи сĕтел хушшинче хатĕрленчĕ. Анчах тĕпелте тĕттĕмччĕ. Тăваттăмĕш кунне унăн ирĕксĕрех çутă тĕлнерех куçмалла пулчĕ.

Вăл урамалла пăхакан чӳрече тĕлне, сĕтелĕн тăрăхла енне, алăка хирĕçле ларать. Эпĕ килкартинелле пăхакан чӳрече тĕлĕнчи хамăн çумма-çуммăн лартнă икĕ сак çине тĕпелелле пăхса ларатăп. Пĕр-пĕрин çине пуç çĕклесе пăхмасăрах кашни хăйĕн ĕçне тăвать. Хĕрача, ман енчи куçĕ тĕлне чышкине тытса, хăрах алпа сĕтел çине чавсаланать.

Шкулта вăл чи лайăх вĕренекенсенчен пĕри пулнă. Кунта эпĕ класс журналĕ тăрăх пăхса тата учительсем ун çинчен ырăпа çеç асăннинчен пĕлтĕм.

Класс пуçлăхĕ пулма мана 10-мĕш класс çумне çирĕплетрĕç. Инăсен класĕнче манăн уроксем те икĕ уйăх хушшинче тăваттă çеçчĕ. Çавăнпа та эпĕ Инăпа хваттерте çеç тĕл пулаттăм.

Ина пиллĕкмĕш кунне те ман енчи куçне аллипе хупларĕ.

Вăл сĕтел хушшинче мĕнле ларни маншăн пурпĕрехчĕ, тĕрĕссипе каласан, ман ун çинчен шухăшлама вăхăт та

çукчĕ, анчах Ина çав каçхине сасартăк çапла каласа хучĕ:

— Эсир мана хăçан литература вĕрентме тытăнатăр? Вăл тăрăхларах ыйтрĕ.

— Кирлех пулсан — халех те хатĕр, — терĕм эпĕ те, хама хаяр çын пек тытса.

Ина кун хыççăн, хăй сăмахĕшĕн хăй хĕрелсе, сĕтел хушшинчен тухрĕ, çав каçхине сĕтел патне те урăх пымарĕ. Анчах Ина — эпĕ малтан шутланă пек — пĕрре те çилĕллĕ, чăркăш хĕрача мар иккен.

Тепĕр кунне, эпĕ хваттере пырсанах, вăл аллинчи кĕнекине пăрахса ура çине сиксе тăчĕ.

— Эсир паян выçса вилетĕр пуль, — терĕ вăл, ман çине хĕрхенӳллĕн пăхса. — Анне сире лапша пĕçерсе çитерме хушрĕ...

Эпĕ, хуçа хăй сĕннипе, яшки-çăкăрне те пĕтĕмпех вĕсенне çиеттĕм. Мĕн пурĕ вара ман уйăхне 150 тенкĕ тӳлемеллеччĕ. Кунтан ырăраххине студентсем шутласа та кăлараймăн. Хуçа умĕнче кун пирки хама хам эпĕ парамлă та, кăшт аван мар пек те туяттăм.

— Ман çиес килмест, — терĕм эпĕ хĕрачана, хам иртенпех çимен пулин те.

Ина, ман сăмахсене хăлхана чикмесĕрех, тирĕк-чашăксемпе чанкăртатма тытăнчĕ. Вучах чĕртме вутă çуккине Ина фуфайка тăхăннинчен пĕлсе, эпĕ те хыпалансах тумлантăм.

— Эсир ларăр, эпĕ хамах, — терĕ вăл, сак айĕнчен пуртă илсе.

Тулта хĕл ларманччĕ-ха. Малтанхи кăпăшка нӳрĕ юр, çӳхескер, ура айĕнче нăтăртатса пусăрăнать те пушмак тĕпне çыпçăнса çĕр çумĕнченех хăпăнса ывтăнать. Хыçала патах хура йĕр юлать.

Хурăн сыппине эпир, икĕ енчен урасемпе пусса тăрса, çурмаран татрăмăр. Вутти кăрăнлатсах çурăлчĕ.

Вутта пӳрте йăтса кĕнĕ хыççăн эпир выльăхсене апат патăмăр. Эпĕ аслăк çине хăпарса çӳлтен утă пăрахрăм, Ина ăна сурăхсен умне сапаласа хучĕ.

Пӳрте кĕрсен вучах мар, тимĕр кăмака чĕртме шутларăмăр.

Тимĕр кăмака кĕрлесех çунчĕ, часах унăн айккисем хĕп-хĕрлĕ хĕрсе кайрĕç. Çăвартан чĕлĕм тĕтĕмĕ тухнă пекех пăс мăкăрланакан пӳрт ăшчикĕ мунчари пек ăшăнса кайрĕ. Чăр çеç шăннă кантăксем ирĕлсе анчĕç. Тимĕр чашăкпа хупланă çатма çатăртатса вĕре пуçларĕ.

Ина ăна кĕçех сĕтел çине пырса лартрĕ. Ман тĕле пĕр çăкăр сăмси, тепĕр хура çăкăр, унтан тата тепĕр пуçламан шур çăкăрпа кукăль хучĕ. Хăй кĕнеке шкапĕ умне кайса тăчĕ.

— Ман çиес килмест, — терĕ вăл.

Эпĕ пĕччен çиме килĕшмесен — эпир сĕтел хушшине кире-хирĕç лартăмăр.

Эпĕ, выçса çитнĕскер, лапшана темиçе кашăк çăвар туллин ăсса хыпрăм.

Ина пĕр кашăк тутанса пăхрĕ те хĕрелсе кайрĕ, çĕре тем ӳкернĕ пек тек-текех сĕтел айнелле пăхкаласа илчĕ, сĕтел айĕнче унăн урисем сулкаланса шакăртатрĕç.

Çакăн хыççăн тин эпĕ лапша пĕтĕмпех нимĕрленсе чусталаннине, çăвар маччи çумне çăтса ямалла мар çыпçăннине туйрăм.

— Пиçмен, — терĕ хĕрача, канăçсăррăн сиккелесе.

Қаçхине Ина яшка пĕçерчĕ, анчах вăл калама çук тăварлă пулчĕ, тата унта тем те пĕр ярса тултарнăччĕ: купăста та, кишĕр те, лапша та, какай та, хăяр та...

Амăшĕ хуларан килсен, Ина тӳрех ун мăйĕнчен уртăнчĕ.

— Ой, анне, — терĕ вăл, — эпĕ сансăр юншăхларăм...

— Қай-ха, — терĕ амăшĕ, унран вĕçерĕнсе. — Мĕн тăватăн эсĕ манпа? Мĕншĕн юншăхларăн?

— Так... Ахалех...

Амăшĕ хывăннă хыççăн вăл ăна каллех ыталаса илчĕ.

— Ой, анне, — терĕ вăл, — эпĕ паян Тольăна силос яшки пĕçерсе çитертĕм...

...Çакăнтан вара Ина манран пачах ютшăнма пăрахрĕ. Эпĕ аннерен пӳрмен йăмăка тупнишĕн хĕпĕртерĕм те.

Эпир, чăнах та, пĕр тăвансем пекех çывăхланса кайрăмăр. Хуçасем те мана хăйсен килйышне ывăлĕ пекех йышăнчĕç. Қилти пĕр-пĕр ĕçе тума та пире Инăпа иксĕмĕре кушатчĕç.

Час-часах эпир иккĕн, икĕ çакăллă пушă сăран сумкăна кашни хăрахшар çаккинчен йăтса, пасара е лавккана каяттăмăр.

Эпĕ хваттере таврăнсан, килте амăшĕ çук чух Ина ман ума мĕн те пулин çимелли пырса лартать. Таса кашăксенех шывпа чӳхесе парать.

Ман çине вара амăшĕ хăйĕн ывăлĕ çине пăхнă пек сăпайлăн та ачашшăн пăхать те сахал çирĕн тесе ӳпкелет. Кун пек чухне вăл мана пĕчĕк хĕрарăм пекех туйăнатчĕ.

Эпĕ те кун пек чухне хама унăн пиччĕшĕ пек туйма пултараймастăм...

Пĕррехинче эпĕ пӳрте кĕрсенех, çаннисене чавсинчен çӳлерех тавăрса хунă, саппунĕн хăрах кĕтессине пиçиххи хушшине çавăрса хĕстернĕ Ина, супăнь кăпăклĕ аллисене саркаласа тытса, тĕпелтен сиксе тухрĕ те çамки çинех усăнса аннă нӳрĕ çӳç пайăркине ал тунипе сăтăрса хăлха хыçнелле сирчĕ.

— Толя, кӳр кĕпӳне çуса парам,—терĕ вăл çинçе сассипе çирĕппĕн. — Хыв халех!..

Кĕпесене ăна çутарма мана çав тери аван марччĕ: е хам çăваттăм, е çынсене тара тытаттăм. Эпĕ хывма килĕшмесен, Ина мана икĕ аллипе те кĕперен ярса илчĕ те—йăлтах супăнь кăпăкĕпе сĕркелесе пĕтерчĕ.

— Ак халь хыватăн!.. — терĕ вăл, тата ытларах хавасланса кайса.

Çак самантра вăл мана пĕрремĕш хут çитĕннĕ хĕр пек курăнса кайрĕ.

Темĕнччен кĕпе ухрĕ вăл çав кунхине, урайне те, сак çине те веçех кăпăк тăкса пĕтерчĕ. Тепĕр кунне темĕнччен тăрăшсах утюгпа якатрĕ. Амăшĕ вара виçĕ кĕпепе темиçе сăмса тутри ухсах икĕ катăк супăнь пĕтернĕшĕн, «яра куна» кĕпе якатса ирттернĕшĕн ӳпкелерĕ.

Хавaслă хĕрача уншăн пĕрре те кӳренмерĕ.

— Мĕн, — терĕ вăл ачашшăн. — Ман Тольăн хура кĕпепех çӳремелле-и? Эпĕ ăна урăх пĕрре те шыва чикмелле мар çуса патăм...

...Қаçсерен эпир яланхи пекех пĕр сĕтел хушшине ларатпăр. Пĕр-пĕр кинона кайса килсен, вăл мĕн курнине каласа парать. Манран та каласа пама ыйтать. Қайран эпир киносене те пĕрлех çӳре пуçларăмăр. Анчах Ина шкулта е çынсем хушшинче манран пĕлмен-курман çын пекех ним чĕнмесĕр вашт иртсе каять. Қинона кайсан, клуба çитсенех хăвăрт пăрăнать те урăх вырăна кайса ларать. Қлубран тухсан эпĕ ăна çул çинче хăваласа çитетĕп, хăш чухне аллинчен тытатăп, вăл вара ман алла та хăйĕн аллипе пĕрле сулласа утать...

Литературăпа Инăна пулăшасси сисмесĕрех пуçланчĕ. Пуринчен ытла ăна хальхи писательсем кăсăклантарчĕç. Эпĕ хулара пурăннă май, шкул программине кĕрекен писатель-поэтсене чылайăшне куçăнах курнă та, калаçнă та. Вĕсем çинчен эпĕ нимĕнле кĕнекере çуккине те, ытти учительсем пĕлменнине те каласа пама пултараттăм.

Хăшпĕр каç пĕр-пĕр лайăх калав е сăвă тĕл пулсан, ăна сасăпа вулаттăмăр.

Пĕррехинче эпĕ çапла киле таврăнтăм. Ина ман алпа çырнă пĕр кивĕ журнала тытса ларатчĕ.

— Толя, пĕр сăвă вуласа парам-и сана—пĕл кам çырнине? — сиксе тăчĕ Ина, унтан киленсех вула пуçларĕ:

Чунĕпе хитре этемĕн
Ытарми сăн-пит те.
Ман чуна пĕлес тесессĕн,
Куçран пăх та — çитĕ.

Ăнланмасп чунна тесе эс
Кăлăх ÿпкелетĕн.
Сăн-питÿ пекех, чуну та
Çутă сан, пĕлетĕп...

Ку вăл эпĕ хам çырнă пĕртен-пĕр сăвă... Чăнах та, вылякаласа çыркалаттăм эпĕ. Анчах пичетлес пирки те, сăвăç пулма та шутламан. Пĕлтĕр çак сăвă темле майпа ман юлташ Сергей аллине çакланчĕ. Вăл каçăхсах кайрĕ çакăншăн... Кайран тепĕр ик-виçĕ уйăхран эпĕ ăна студентсем алпа çырса кăларакан журналта куртăм. Сергей «юсаса, якатса» çаптарса кăларнă ăна...

...Эпĕ çакна итлесе пĕчĕк ача пек именсе кайрăм та нимĕн те шарламарăм. Каçхине киле таврăнсан, эпĕ Ина çав-çавах пaçăрхи журнала тытса ларнине куртăм. Хĕрача, янаххине икĕ енчен аллисемпе тĕревлесе, тем пăшăлтатать, темле хурлă кăмăлпа ман çинелле куç айĕпе вăрттăн пăхкаласа илет. Анчах эп пуçа çĕклесенех куçне кĕнеке çинелле ярать.

«Чунĕпе хитре этемĕн
Ытарми сăн-пит те...»

илтрĕм эп вăл пăшăлтатнине... Эп куншăн кăшт пăшăрханса та илтĕм. «Çаплах-ши?.. Мĕн тума çак йĕркесене хушса хунă-ха Сергей?..

— Эсĕ халĕ ма çырмастăн çавăн пек? — илтрĕм эп самантран.

Эпĕ хĕрача умĕнчи журнала илсе ун вырăнне алла кĕнĕ темĕнле учебнике пăрахрăм.

— Çакна вуласчĕ...

Ина кĕнеке варринчен сиксе тухнă сăнÿкерчĕксене пăха пуçларĕ.

— Çакна мана парнеле-ха.

Эпĕ пуҫа ҫĕклерĕм те Ина аллинчи хамăн виҫ-тăватă ҫул каялла ÿкернĕ сăнÿкерчĕке куртăм.

— Эс ун чух хитре пулнă, — терĕ Ина, вара сĕтел хушшинчен мăнкăмăллăн тăрса тухрĕ, васкасах тумланса, пÿртрен тухса кайрĕ.

...Яла концерт килнĕ каҫхине манăн ĕҫ мăй таранахчĕ. Ина вара кунĕпех концерт ҫинчен калаҫрĕ каҫ пулсан мана та хăйпе пĕрле пыма чĕнчĕ.

— Уроксене хатĕрленнĕ-и? — ыйтрăм эпĕ.

— Ыран ыйтмаҫҫĕ пулĕ-ха, — терĕ вăл, ман ҫинелле «ыйтмастăн пуль» тенĕ пек пăхса.

— Асту, ыран ыйтатăп ак, — терĕм эпĕ.

— Ыйтах!.. — хĕрача ура кĕли ҫинче ҫаврăнса илчĕ.— Эпĕ клубран килсен хатĕрленетĕп.

Ина концертран килсен, чăнах та, урок хатĕрленмелерчĕ. Ҫурҫĕр иртнĕччĕ. Эпĕ ĕнтĕ пĕр пĕчĕк кĕнеке те вуласа тухрăм, Ина ҫав-ҫавах пĕр ÿкерчĕклĕ страница ҫинелле пуҫне чиксе ларать. Ларсан-ларсан, пуҫĕ унăн лăнк каять, унтан каллех ҫĕкленет те, хуллен-хуллен аялалла анса, кĕнеке ҫинех перĕнет.

Тепĕр кунне манăн шăпах Инăсен класĕнче зачет урокĕ пурăнмаллаччĕ. Те пăлханса кайнипе, те чĕлхе вĕҫне пĕлнĕ ят килнипе эпĕ чи малтанах Инăран урок ыйтрăм. Ыйтасса кĕтмен хĕрача доска умне хăюсăррăн та шиклĕн тухрĕ.

Вăл пăтрашăнчĕ, такăнчĕ, начар каларĕ. Ăна эпĕ «иккĕрен» пысăкрах паллă лартма пултараймарăм.

...Хĕрача вара мĕн урок тăршшĕпех, хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайнăскер, доска ҫинелле те пĕрре куҫ уҫса пăхмасăрларчĕ. Ина ҫакăн хыҫҫăн темиҫе кун хушши манпа калаҫмарĕ. Сĕтел хушшинче те ачалла юнтарса куҫ айĕн ҫеҫ пăхкаласа илчĕ, эп калаҫма пикенсен — пĕр сăмахпа татса хучĕ.

— Мĕн эсĕ сив тинĕс пек ларатăн? — терĕм эпĕ ăна, вăл тăваттăмĕш кунне те тĕпеле кайса ларсан.

Хĕрача, юриех тимлесе вулам пек пулса, хăлхине аллисемпе хупласан, эпĕ ахăлтатсах кулса ятăм.

— Ҫиллÿне ирттерсе ямастăн иккен, — терĕм эпĕ.

Хĕрача ним чĕнмесĕрех ура ҫине вăрт! ҫĕкленчĕ те, пысăк ҫăм тутăрне пуҫ ҫине уртса, хăвăрт алăк патнелле утрĕ, тепĕр самантран килкартинчен хапха йывăррăн хупăнни илтĕнчĕ.

Вăл тата нумайччен ҫиленсе ҫÿрет пулĕ тесе, эпĕ пăшăрханма та пуҫланăччĕ ĕнтĕ. Анчах тепĕр кунне кăнтăр-

ла тӗлне хваттере таврӑнсан, хамӑн сӗтел умне пытӑм та — куҫ тӗлне пулнӑ пӗр япала мана кӗтмен ҫӗртен хаваслантарса ячӗ.

Ман умри чернил кӗленчи ҫине хутран тунӑ вӑрӑм сӑмсаллӑ, пысӑк симӗс куҫлӑ пукане-клоун утлантарса лартнӑ. Унӑн кӗлетки — шӑрпӑк коробкинчен, пуҫӗ — ҫӑмарта хуппинчен. Куҫхаршине Инӑн хура чернилӗпе, куҫ шӑрҫине манӑн симӗс чернилпа сӑрланӑ. Кӗлетки ҫине «Толя учитель — это мучитель» тесе ҫырса хунӑ. Эпӗ ӑна чылайччен ҫавӑркаласа пӑхса лартӑм та каллех типтерлӗн хӑйӗн вырӑнне лартрӑм.

Эпӗ каҫхине хваттере таврӑннӑ чухне килте Ваҫук пичче ҫеҫ ҫукчӗ.

Тӗпелтен питне пӗтӗмпех хӑрӑмпа вараласа пӗтернӗ, нихҫанхинчен те хаваслӑ Ина сиксе тухрӗ. Эпӗ ирӗксӗрех кулса ярсан, вӑл, ҫиййӗнчех шӑпланса, ман ҫине куҫ айӗпе пӑхса илчӗ те каллех тӗпелте ҫухалчӗ.

— Анне, Толя ма кулать манран? — шӑппӑн илтӗнчӗ шалтан унӑн кӑмӑлсӑр сасси.

— И-и, Мукка ҫури!.. Тӗкӗр витӗр пӑх-ха, ачам, — терӗ амӑшӗ.

Хӗрача тӗкӗр витӗр пӑхсан, хӑй те ахӑлтатса кулса ячӗ те пичӗсене аллипе хупларӗ.

— Пултӑр-иҫ!.. Эпӗ тутлӑ яшка пӗҫернӗ вӗт паян, — терӗ вара вӑл, пуҫне мӑнкӑмӑллӑн ҫӗклесе.

Питне ҫусан, вӑл каллех амӑшне чӗнсе илчӗ.

— Анне, — терӗ вӑл. — Эсӗ паян Тольӑна яшка нумайтарах антарса пар... Юрать-и, анне?..

Амӑшӗ илтмерӗ пулас. Ина шӑлӑннӑ май ура айне ҫакланнӑ кушака ярса илчӗ.

— Э-э, тата сана, — ҫинҫе сассипе кӑмӑллӑн ятласа каларӗ вӑл. — Ыратрӗ-и? Хӳрӳне ма тӑсса хуран тата ху?

Вӑл сӗтел умне пычӗ те ман вуланӑ чухне тӑхӑнкаланӑ куҫлӑха кушак пуҫӗ ҫине лартрӗ.

— Ну, вула-ха, — тӗртрӗ вӑл кушак пуҫне кӗнеке ҫинелле. — Паян ҫакна вӗренмелле вӗт пирӗн... Атту Анатолий Иванович ыран каллех пире «иккӗ» лартса парать... Ваҫук мучу пӗлсен, пӗтерет-ха сана куншӑн...

Ку сӑмахсене каланӑ чухне вӑл вӑрттӑн ман ҫине пӑхса илчӗ. Кушакӗ тарӑхса ҫилӗллӗн мӑрлатрӗ.

— Анатолий Иванович, — терӗ хӗрача сасартӑк. — Ыран манран урок ыйтатӑр-и?..

Манӑн вӗсен класӗнче пӗтӗмпе те тепӗр урок ҫеҫ юлнӑ-

ччĕ. Ытти классенче те ĕнтĕ ман уроксем вĕçленсе пыратчĕç.

— Ыйтатăп, — терĕм эпĕ.

— Ыйтах. Эпĕ ыран шкула пымастăп...

— Мĕншĕн?

— Ахалех...

Васук пичче кашни эрнерех Инăн дневникне пăхса тухса алă пусатчĕ. Çак кунхине те вăл эрне вĕçленсе пынă май яланхи пекех Инăран дневник ыйтрĕ. Дневникне ыйтиччен малтан вăл каçхи апат турĕ, чĕлĕм туртса ячĕ, вара тин куçлăхне тăхăнчĕ те, алла ручка тытса, пероне чернил пуçса илчĕ. Ручкине алран пăрахмасăрах хăй еннелле çурăмпа тăнă хĕрача сумкăра — те юри, те чăнласах — чылайччен дневник шыранине сăнаса ларчĕ.

Ина, хĕрелсе кайнăскер, мана каллех хăйĕн пысăк куçĕсене çавăрса кăтартрĕ, дневникне сĕтел çине пăрахрĕ те хăвăрт пӳртрен тухса кайрĕ. Ашшĕ, ĕçсем ырах маррине сиссе, ăна хыçалтан пăхса ăсатрĕ.

...Хăрушши нимĕн те пулмарĕ. Васук пичче тепĕр эрнинче Инăна килтен ниçта та кăлармасăр кĕнеке çине лартса айăплама çеç йышăнчĕ.

Ина, чăнах та, эрнипех каçхине ниçта та тухмарĕ. Эрнен юлашки кунĕнче вара эпĕ клуба кайма хатĕрленсен, çăматă тĕплесе ларакан ашшĕ çинелле темиçе хутчен те йăлăнса пăха-пăха илчĕ.

Ашшĕ татăклăнах çапла каларĕ:

— Каймастăн ниçта та! Кайсан та — 16 çула çитменнисене кĕртмеççĕ паян.

— Мана кĕртеççĕ, — терĕ хĕрача айăплăн.

— Ан калаç!

— Эпĕ вунултта çитмен пулĕ? — терĕ Ина кӳренсе.

Ашшĕ пĕр утăм та каялла чакмарĕ:

— Тепĕр тăвата уйăхран тин вунултта каятăн, — терĕ вăл, çип хыпнă çăварне уçмасăрах.

Ина питне аллипе хупласа юлчĕ. Кайран та кино çинчен нимĕн те ыйтмарĕ.

...Вырсарникун эпир каç еннелле, йĕлтĕрсем сырса, уçăлмалла хире тухрăмăр.

Пĕр касă пĕлĕт килчĕ те, тĕртме кумнă шурă çип пек карăнса, тăман тăкса ячĕ.

— Анатолий Иванович, — терĕ Ина, йăлтах юрланса пĕтнĕскер, кĕç ман ума ярăнса тухса. — Эсир пĕркун мана

ахалех «иккĕ» лартса патăр вĕт? Виççĕлĕх те калаймарăм-и?

Вăл эп каласса кĕтсе тăчĕ.

— Эс тем... йăнăшатăн...

— Эс ху йăнăшатăн! — касса татрĕ хĕрача. — Эсĕ ху ун чухне пăлханса, çухалса кайрăн та — мана илтмерĕн те... Эпĕ шăпах леш эсĕ çырнă сăвăри шухăша каларăм...

Эпĕ хам сисмесĕрех шарт сикрĕм. Халĕ тин Ина урокра темĕнле «чун-чĕре илемлĕхĕ çыннăн сăн-питрен пăхсан» палăрни çинчен калани аса килчĕ.

— Тăхта-ха, тăхта, — терĕм эпĕ. — Эсĕ сăввине тĕрĕс мар ăнланнă...

Ина, ман сăмаха илтмен пекех, хăй калама васкарĕ.

— Толя, кам пулнă вăл сан... леш сăвă çырнă-ха эсĕ... Кама халалласа?.. Питĕ хитре-и вăл?

— Эсĕ мана итле-ха...

Ман чăнласах та хамăн сăвва хурласа тăкас, унти шухăш мăтăк пулни çинчен, ăна мĕнле пур çаплах ăнлансан — пурнăçра йăнăшма та инçех марри пирки калас килнĕччĕ, анчах хĕрача аяккалла туртăнчĕ.

— Итлес килмест ман, — терĕ вăл, унтан питĕ хăвăрт калама пуçларĕ: — Пĕлетĕн-и, манăн та хитре çын тупас килет... Унăн та шухăш-ĕмĕчĕсем ыттисенчен пачах урăхла пулччăр!.. Çĕр çинче вăл чи ăсли, чи хитри пултăр...

Эпĕ ахăлтатсах кулса ятăм.

— Эсĕ халь ытла та çамрăк-ха, Ина. Ак кăшт пурăнсан...

Эп хамăн шухăша каласа пĕтерейменрĕм. Хĕрсе кайнă хĕрача ман çине тарăхса пăхрĕ те тата васкарах каларĕ:

— Эс ху çамрăк, — терĕ вăл хăвăрт сывласа. — Эп пăхма çеç пĕчĕккĕ... Калаçмастăп та санпа урăх!..

Çапла каланă хыççăн хĕрача йĕлтĕр туйисемпе вăйлăн тапса ячĕ те улăх лаппинелле ярăнса анчĕ, самантран уй тӳпинче курăнчĕ.

Ина манран темиçе кун пăрăнса çӳрерĕ. Манăн ĕнтĕ практика та вĕçленсе пычĕ, каялла хулана каяс вăхăт çывхарчĕ. Эпĕ ăна юлашки хут хампа пĕрле кинона чĕнтĕм.

— Аюк, каймастăп санпа урăх ниçта та! — терĕ вăл юнтарса; хăй вара кроват çине хăпарса ларчĕ.

Анчах эпĕ çĕлĕк тăхăнсанах, питĕ хыпаланса тумланчĕ те манран малтан урамалла тухса вĕçтерчĕ.

Эпĕ ăна çул çинче те, кинора та курмарăм. Клубран тухса карта кĕтессине çитсен вара, ман пуçран юр чăмăркки пырса тиврĕ. Йăмра вулли хыçĕнчен хихиклетсе кулни илтĕнчĕ.

— Ыратрĕ-и?.. — сиксе тухрĕ Ина йăмра хыçĕнчен.

— Çук-çке... Ăçта пулнă вара эс? Сана çухатрăм эпĕ...

— Сан хыçрах лартăм-иç, — терĕ вăл.

Эпĕ ăна яланхи пекех аллинчен тытсан, вăл, хаваслăскер, сасартăках шăпланчĕ те çул тăршшĕпех ним чĕнмесĕр пычĕ. Манăн алла та ытти чухнехи пек хăйĕнпе пĕрле сулкаламарĕ; вĕри ывăç манăн алăра хăраса ӳкнĕ кайăк чĕппи пек ним хускалмасăр пычĕ, çыран хĕррине çитсен тин хăй йывăрăшĕпех шуса тухрĕ. Тăвайккинчен Ина каялла пăхмасăрах чупса анчĕ. Эпĕ шăвакан ботинкăсемпе чарăнаймасăр шакăртаттарса ярăнса аннине илтсен, каялла çаврăнса, аллисене саркаласа тытрĕ.

— Асту ӳкетĕн, — терĕ вăл темĕнле вăрттăн сăмах пĕлтернĕ пек шăппăн.

Эпĕ, хăйне ӳкерес мар тесе, хăрах алăпа ăна пилĕкрен тытрăм.

Хĕрача, ӳкмех тăнăскер, тӳрленчĕ те аллине ман хулпуççи çинчен илмесĕрех, куçне чарса, мана питрен тĕмсĕл пăхрĕ. Пĕр самант вăл çапла пăхсах тăчĕ. Куçĕсем уйăх çутипе йăлтăртатрĕç, вĕсем пĕрре те мăчлатмарĕç. Тепĕр самантран тĕттĕм куçхаршисем çĕкленсе илчĕç, чарăлнă куç хупаххисем ерипен анса ларчĕç, хура та вăрăм куç хăрпăкĕсем хушшинче пĕр вăхăт ылттăн çип йăлтăртатса тăчĕ. Сисĕни-сисĕнми чĕтресе тутисем сиккелерĕç. Куçне вăл урăх уçмарĕ. Сасартăк ман алран вĕçерĕнчĕ те малалла чупса кайрĕ.

Эпĕ пӳрте кĕнĕ чухне вăл ĕнтĕ, пуç çинченех çиттипе пĕркенсе, хăйĕн вырăнĕ çинче выртатчĕ...

Тепĕр кунне эпир Инăпа кaçхине тĕл пултăмăр. Амăшĕ килхушшинчи лаçра сăра сĕретчĕ. Эпир Инăпа тулли витресене пӳрте йăтаттăмăр. Ваçук пичче, сакайĕнчен пирĕн алăри витресене тытса, пичкене сăра яратчĕ. Ина та, эпĕ те ним чĕнмесĕрех ĕçлерĕмĕр. Эпĕ ăна тулли витрепе пӳрте кĕнĕ чухне çенĕкре, каялла тухнă чухне — лаç алăкĕнче хирĕç пултăм.

Ваçук пичче пуш пичке илсе пама хушсан, сакайĕнчи лампа çутипе çеç çуталнă пӳртре эпĕ сарлака кăмака хыçне кĕтĕм. Ал сĕмĕпе çеç хыпашласа пынă çĕрте ман хăрах

алла сивĕ чавса, теприне вĕри хул лекрĕ. Шурă мĕлке шарт сикрĕ те стена çумне пăрăнса тăчĕ.

— Ина-и?..

— Пички курăнмасть, — терĕ вăл пăшăлтатса. Сасси темшĕн-çке тытăнчăклăн тухрĕ, хăй вăл пăлханса хăвăрт сывларĕ.

Эпĕ часрах пичкене йăтса тухрăм.

Тепĕр кунне эпир шкулпа сывпуллашрăмăр. Çакна май шкулта вечер туса ирттертĕмĕр.

Кунта мана çеç пулĕ темшĕн-çке такама шел пек, тем çитмен пек туйăнчĕ. Хамăн ытларах вăхăта эпĕ институтран килнĕ юлташăмпа — Сергейпе — ирттертĕм. Вăл лайăх спортсменччĕ, çав вăхăтрах литература пирки тавлашма питĕ юрататчĕ.

Сергей пĕр хĕрача Çеçпĕл Мишши сăввине пăхмасăр лайăх каласа пани çинчен сăмах хускатсан, ман вĕсене пĕр-пĕринпе паллаштармалла та пулчĕ.

Сергейпе Инăна эпĕ пĕрле ташланине те куртăм. Анчах кăшт каярахпа Ина вечертан çĕр çăтнă пекех çухалчĕ.

Мана та темшĕн кичем пулса кайрĕ те, эпĕ — юлашки хут тесе — хам класс пуçлăхĕнче ĕçленĕ 10-мĕш класа кĕтĕм. Вара тĕлĕнсех кайрăм...

Кунта, аллисене хыçалла тытса, шăннă кантăк витĕр тем курас пекех чÿречерен пăхса, Ина тăратчĕ. Алăк сассине илтсен вăл хăвăрт çаврăнса пăхрĕ те каллех эпĕ кĕнĕ чухнехи пек тăчĕ. Алăк çинчи кантăк витĕр коридортан кĕрекен çутă çеç ÿкнĕ тĕксĕм пÿлĕмре унăн сăн-питĕнче малтанах ним те уйăрса илме пулмарĕ.

— Ина? — терĕм эпĕ, чăннипех тĕлĕнсе. — Мĕн эсĕ пĕчченех кунта?..

Эпĕ, алăк патĕнчен икĕ-виçĕ утăм маларах иртсе, парта çумне таянтăм.

Хĕрача, çав-çавах кантăк çинелле пăхса, хăрах çивĕт вĕçне хăвăрт турткалама тытăнчĕ.

— Сана кÿрентермерĕç пулĕ те?

— Çук!..

Хĕрача хăвăрт татса락 каларĕ. Унăн çиленчĕк хытă сассине илтнипе эпĕ ним тавăрса калама та аптрарăм.

— Мĕн эсĕ, Ина? Ачасем ташлаççĕ ав, тен, эпир те пултарăпăр... Пыратăн-и?

Хĕрача сасартăк мана хирĕç çаврăнса тăчĕ.

— Кирлĕ мар! — терĕ вăл, пуçне вăрт ывăтса. — Сана кирек кампа ташлани те пурпĕрех.

Вăл, çапла каласан, кантăкран пăрăнчĕ те алăк патнелле утса кайрĕ, çурăмĕпе ман еннелле тăчĕ.

— Мĕншĕн пурпĕрех?

— Пурпĕрех çав! — терĕ вăл, пĕркун йĕлтĕрпе ярăннă чухне мана çиленсе каланă пек сасăпах, анчах çав сасăра хальхинче тата мăнкăмăллăрах, хурланчăклăрах чĕлĕхсем чĕтренсе илтĕнчĕç: — Эпĕ кампа ташлани те саншăн пурпĕрех! — терĕ вăл малалла. — Сана пысăкраххисем, аслăраххисем çеç кирлĕ!.. Эпĕ ак — курăн — вĕсенчен те пысăкрах (кунта Ина тытăнса тăчĕ. «Хитререх...» тесшĕнччĕ пулас вăл) пулатăп...

Вăл сăмахсемпе чыхăна-чыхăна каларĕ. Çак сăмахсем хыççăн алăк шалтлатса хупăнчĕ. Вăл, эп тем каласса кĕтсе-ши, тухса кайиччен пĕр самант тытăнса та тăчĕ..., анчах эпĕ ӳслĕкпе чыхăнса кайрăм та — пĕр сăмах çавăрса калама та ĕлкĕреймерĕм.

Коридора тухсан, эпĕ тенкел çинче тем шухăша кайса пĕчченех ларакан хĕрача еннелле утрăм, ташлама чĕнтĕм.

Хĕрача айăплăн та пăхăнуллăн ура çине тăчĕ. Пĕр утăм мана хирĕç ярса пусрĕ. Сылтăм аллине хуллен çĕклесе хулпуççи çине хучĕ, унтан куçсем хире-хирĕç пулсан, вăл шарт сикрĕ те икĕ аллине те манран туртса илчĕ, вара алăк патнелле вăркăнчĕ...

Урăх вăл вечерта пĕрре те курăнмарĕ.

Эпĕ киле çурçĕр иртсен таврăнтăм. Пӳртре, урамран пăхсан, кантăкра пуç мĕлки курăнатчĕ пулин те, никам та «вăранмарĕ». Кăмака çинчи чĕнтĕрлĕ каркăç айĕнчен Васук пиччен çăматтисем çурри таран тухса тăраççĕ.

Эпĕ те лампа çутине кăшт пĕчĕклетрĕм те, пĕчĕк пиншака çеç хывса, витĕнмесĕрех хамăн вырăн çине выртрăм.

Пӳрте вĕçсе кĕме хăтланакан симĕс шăна пек, пĕр çăлтăр кантăк çинче сиккелерĕ. Кайран куçра пĕр хĕрлĕ çаврашка çеç тăрса юлчĕ, вăл варринчен кăвакарса шăтрĕ, сарăлсах пычĕ, ун çинче тин çеç татса пăрахнă эрешмен урисем пек темĕнле чунлă çипсем, хураскерсем, хуçкаланчĕç. Юлашкинчен кăвак тĕс хуралса-хуралса пачах пĕтсе ларчĕ.

Самантрап тахăшĕн кравачĕ чĕриклетни, урайĕнче чĕрне вĕççĕн утни, ура сасси сĕтел патĕнче чарăнсан — такам ача хуйхипе хашлатса ассăн сывлани илтĕнчĕ. Унтан ман куç хупаххисене хĕрлĕ тĕс çапрĕ — ахăртнех, лампа хăйăвне хăпартрĕç пулас. Кун хыççăн ура сассисем алăк патнелле кайса çухалчĕç. Алăк патĕнче тумтир кăш-

тăртатрĕ, стена çумĕнчи тимĕр пăта хуллен кăрнлатса илчĕ. Ура сассисем каллех çывхарчĕç те, ман кăкăр çине темĕн — ăшăскер, çемçескер — анчĕ, кăмăллă ырă йывăрăшĕпе канлĕн пусрĕ: çан-çурăм тăрăх ăшă чупса иртрĕ. Ку Инăн килте тăхăнкаланă кĕрĕкĕ пулчĕ иккен. Эпĕ куçа уçса пăхасшăнччĕ — йывăр куç хупаххисем уçăлмарĕç.

Ирхине эпĕ кăвак çутăллах хулана тухса кайрăм. Васук пичче мана станцине ăсатма лаша кӳлсе килчĕ. Çула пуçтарăнма чăматана çеç йăтса тухмаллаччĕ. Ăна Ина йăтса тухрĕ.

— Çыру çыратăн-и? — ыйтрĕ вăл, чăматана çуна çине майласа лартнă май.

Ина ыйтнине хирĕç манран малтан кӳршĕ автанĕ хыттăн кăшкăрса ярса сас пачĕ. Эпĕ кăвакарса килекен сивĕ шуçăм çинелле пăхса тăтăм:

— Çыратăп, — терĕм эпĕ, темшĕн-çке хама хам та ĕненмесĕр.

— Чăнласах вара... юрать-и?..

Ина каласа пĕтерейменрĕ — ашшĕ тухрĕ.

Эпĕ ăна ал тытнă чухне вăл куçне хупрĕ. Куçне уçсан эпĕ ăна пуçпа султăм та çуна хыççăн утрăм. Кӳршĕ килĕ тĕлĕнчен иртсен хыçалалла çаврăнса пăхрăм — вăл çаплах урамра тăратчĕ-ха.

* * *

Эпĕ унта кăçал тепре пултăм. Тен, каяс та çукчĕ пулĕ — Сергей вăйпах илсе кайрĕ. Вĕсем — Инăпа иккĕш — пĕр-пĕрин патне хыпар ярсах тăраççĕ. Ина ун патне çырнă çырусем урлă икĕ хутчен мана та салам янă иккен. Çын урлă янă саламăн ăшши... сахалтарах пулин те, эпĕ хĕпĕртерĕм: Сергей унта кăçал хăй те пĕрре кайса килнĕ иккен. Килне кĕнĕ, анчах Инăна тĕл пулайман.

Вĕсен тĕлĕнчи çамрăк йăмра çинчен тата Инăна халаллаcа çырнă сăвăсене Сергей мана темиçе хутчен те вуласа панă.

«Пĕрре кăна хăть санпала
Иртесчĕ ман урампала...»—

тенĕ вăл хăйĕн пĕр сăввинче.

«Эс йăмăк çеç-ха халь мана...»—

тенĕ тепринче.

«Эпĕ те, санран тăватă çул кĕçĕнскер, ăна йăмăк çеç тетĕп те, тен, эсĕ ун çине урăхла пăхма хăймастăн-и?»—

тенĕнех туйăнатчĕ мана çав. Эпĕ нимĕн те шарламастăм. Кунта тĕрĕсси те пурччĕ.

Сергее эпĕ вăл хĕрсем пирки питĕ çăмăллăн калаçнишĕн хисеплесех каймастăм. Ун пирки тата пĕр тасах мар ят та çӳретчĕ.

Сергей Ина пирки каласа пама тытăннă хыççăн эпĕ хама хам та ăнланми пултăм.

Юлашкинчен кашни каç мана пĕр тĕлĕк курăна пуçларĕ... Кашнинчех Ина, сĕтел хушшинче лараканскер, ман çине ним чĕнмесĕр куç айĕпе пăхать... Пĕррехинче эпĕ ун сассине те илтрĕм...

Ку вăл кăçал март уйăхĕнче пулчĕ. Эпĕ çĕрĕпех вырăн çинче йăраланса выртрăм. Ыйхă килтĕр тесе, çине-çинех пирус туртрăм, пуçра та, кăкăрта та темĕн касса ырата пуçларĕ. Кăшт кăтăш пулсанах — темĕнле урăм-сурăм тĕлĕк курса (е такам мана чышкăпа юнанă пек, е сасартăк кăшкăрса янă пек), шартах вăранса каятăп. Пыр тĕпне тăвар сапнă пек калама çук ыраттарса-кăтăклантарса ӳслĕк капланса килет.

Сасартăк... (эпĕ куçа та хупманччĕ, алăкалла пăхса выртаттăм) Ина ман умра тăра парать! «Толя! Эсĕ татах тем каламарăн мана!» — терĕ вăл. Çак сăмахсем ку таранччен ман хăлхаран каймаççĕ...

Тепĕр кунне эпĕ вырăн çинчен тăраймарăм. Эпĕ чирленĕ иккен. Мана больницăна илсе кайрĕç...

...Эпир унта пĕр уяр кун — канмалли кун — кайрăмăр. Эпĕ ун чух, чирлĕскер, больницăран вăхăтлăха тухнăччĕ те, ял сывлăшĕ кăмăла та уçса ярĕ терĕм. Ваçук пиччене те курас килетчĕ. Эпир автобуспа кайрăмăр.

Телефон пăралукĕсем пĕр-пĕринпе ылмашăнса шăвасççĕ, пĕрре вăрман тăррине перĕнеççĕ, тепре пĕлĕте сĕртĕнеççĕ, вĕсем тăрăх пирĕнтен юлмасăр хĕвел çути йăлтăртатса чупать. Вăрмантан тухсан — пĕтĕм тавралăх уй варринчи пĕр хурама тавра çаврăннăн туйăнать. Икĕ çул каялла та çаплаччĕ.

Вĕсен пӳрчĕ умĕнчи çамрăк йăмра çине кăçал малтанхи хут курак йăва çавăрнă.

Сăрт çинчен аннă чухне темшĕн-çке эпир иккĕн те харăсах çавна асăрхарăмăр.

— Меркке ку! — савăнсах кайрĕ Сергей.

Мана вара ку килĕшмерĕ. Мана вĕсем патне кĕме те аван мар пек туйăнчĕ...

Кассăн-кассăн çил килсе сукмак çинчи тусана вĕре-вĕ-

ре ярать. Çырма хĕрринчи туратран ӳстернĕ хунавлă та витĕр курăнми çулçăсемлĕ кĕске йăмрасем — йăвисенчен тин вĕçсе тухнă шăнкăрч чĕпписен сассисемпе чарласа-чайласа çеç лараççĕ.

— Қаяр, — терĕм эпĕ, Сергейĕн кăмăлĕ хуçăлнине пăхмасăрах. — Халĕ килте çук вĕсен.

Сергей манран çӳлĕ, çинçе. Пичĕсем унăн хĕрĕнни пек хĕрлĕ те çурăлас пек тулли.

Эпир, ним чĕнмесĕр, малтан калаçса татăлнă пекех, стадиона пăрăнса кĕтĕмĕр.

Қунта тусан вĕçет. Выляса ĕшеннĕ тата шăрăхпа ĕнтĕркенĕ пĕр ушкăн ача-пăча карталанса тăнă та вĕçсе пыракан волейбола кахаллăн ăçта килчĕ унталла çапа-çапа яраççĕ. Шалта пĕчĕк хĕрлĕ ялавсемпе сулаççĕ, тĕрлĕ тĕслĕ майкăсем вĕлтлетеççĕ.

Сылтăмран шăхлич сасси илтĕнет. Қунта хĕрсен командисем волейболла ăмăртса выляççĕ иккен.

— Тен, вăл та кунтах мар-и, пăхкала-ха, — терĕ Сергей. — Қаçхине çеç пĕрре курнипе эпĕ уйăрсах илейместĕп.

Яштака та çӳлĕ хĕрача, вăрăм çивĕтлĕскер, питĕ ăста выляни мана ирĕксĕрех илĕртрĕ. Вăл волейбола пӳрне вĕçĕсемпе çăмăллăн таптарса ярать. Леш енчен çĕрелле çапса янине те çăмăллăнах илет.

— Çавă мар-и? — кăтартрĕ Сергей.

— Хăшĕ?

— Қăвак куçли.

— Çук, ун куçĕсем хураччĕ...

— Хура? — тĕлĕнчĕ Сергей. — Çук, хура мар, йĕпкĕн кăвак.

Хĕрача ăнсăртран тем пирки-çке кулса ярсан — манăн нимĕн иккĕленмелли те юлмарĕ: çавă! Анчах куçĕсем ун мĕнле кăвак пулса тăчĕç-ха? Мĕншĕн вăл ман асра хура тĕслĕ юлнă? Е эпĕ çавăн пекех сăнавсăр çын-и?.. Сергей вара пĕрре çĕрле курнипех унăн куçне те тĕсесе юлнă-çке?

Ина хăй мана «палламарĕ». Икĕ çул каялла та вăл çынсем хушшинче мана курмăш-пĕлмĕшех пулатчĕ. Халĕ те çапла-ши вăл? Ун чухнехи ача айванлăхех-ши ун, е çав териех ютшăннă?

Вăл, темиçе хутчен çумранах иртсе кайрĕ пулин те, пĕрре те сывлăх сунмарĕ, палланине пĕр хусканупа та кăтартмарĕ.

Эпĕ ăна алă пырса тытрăм, Сергей те алă тытрĕ.

Алă тытнă чухне вăл нимĕн чухлĕ те тĕлĕнменни, нимĕн

чухлĕ кăмăлтан та, сăн-питрен те улшăнманни вăл пире паçăрах курни çинчен каларĕ.

Вăл сывлăх сунсанах юлташ-хĕрĕсемпе кайса тăчĕ.

Вăл хăйшĕн кирек кам та пурпĕрех пек тытма тăрăшрĕ пулин те — кăмăлĕ Сергей енче иккенне эпĕ тӳрех куртăм.

Кунта килнĕшĕн те, унпа курнăçнăшăн та хама ӳпкелесе, çак тĕлпулуран юлнă хĕрхӳ туйăмпа эпĕ стадионтан тухрăм. Сергей эпир иккĕн ларнă сак çинчех юлчĕ.

Часах Инăсен çурчĕ те курăнса кайрĕ.

Çил вĕрсе килнĕçемĕн вĕсен тĕлĕнчи йăмра çулçисем тӳнтерле çавăрнаççĕ те, вĕсем çине, куçа курăнми сĕт пăсĕ, çулçă çумне перĕнсенех пĕрчĕн-пĕрчĕн чăмăртанса лараканскер, пĕрĕхтернĕ пек, пĕтĕм йывăç шуралса каять, çил чарăннăçемĕн йăмра каллех ерипен симĕсленет.

Пĕлнĕ хапхана эпĕ хăюллăнах уçрăм.

Хапха шалтлатсан, алкум вĕçĕнчи таз хĕррине хăпарса тăнă чăх ик çунаттине карт сиктерсе илчĕ те, хăрамалли нимех те курмасăр, каллех таз ăшне сăха пуçларĕ.

Ваçук пиччепе Сăпани инке килтехчĕ.

— У-у, — терĕ Ваçук пичче. — Ывăлăм, çитрĕн-им?

Вăл мана çурăмран савса илчĕ. Сăпани инке тӳрех тĕпелте çаврăнкалама тытăнчĕ. Ваçук пичче эрех кĕленчи туртса кăларчĕ, Сăпани инке — кӳршĕрен пулас — пĕр чĕрес сăра тупса килчĕ, çăмарта ăшаларĕ.

Ваçук пичче мана тек-текех, «Ина пĕçернĕ» тесе, ăшаланă лапша çиме сĕнчĕ. Вăл, чăнах та, питĕ тутлăччĕ.

Эпир Ваçук пиччепе чылайччен калаçса лартăмăр. Юлашкинчен эпĕ ӳсĕрĕлсех кайрăм, вара чунра темшĕн хурлă пулса кайрĕ.

Çак пӳрт икĕ çул хушшинче улшăнманпа пĕрех. Кĕнеке шкапĕ те çавах, анчах унта халĕ спорт кĕнекисем ытларах.

Ула кушак та çавах. Анчах халь вăл ватăлса юлхавланнă. Вăл ман ура çумне йывăррăн сĕртĕнсе ачашланчĕ. Эпĕ ăна курсан темшĕн хĕпĕртесех кайрăм. Ăна алла тытрăм, çурăмĕнчен шăлтăм, хам çума хыттăн пăчăртарăм. Кушак çухăрса ячĕ те урайне сикрĕ.

Эпĕ вара часрах ку килпе сывпуллашма васкарăм.

— Кайран, тен, кĕретĕп те пулĕ, — терĕм эпĕ.

— Ина стадионта-ха, — терĕ Ваçук пичче темшĕн-çке.

Эпĕ, пахча хыçне тухса, çырма хĕррине курăк çине лартăм.

Ман умра юханшывăн пĕчĕк çеç авăрĕ çаврăнса тăчĕ. Хушăран хушă сĕлĕ пĕрчи пек йăпăлтак пулăсем вылянă

май шывран сиксе тухсах каяççĕ те, шыв çийĕнчен пĕр шит пек çӳлĕшĕнче сывлăшра вĕлтлетсе илсе, кутăн çаврăнма ĕлкĕреймесĕрех каялла чăмпăлтаççĕ. Шыв ăшăх çĕре, хĕвел шыв витĕрех пĕçертнĕ тĕле, пиçнĕ çĕмĕрт тăкăнса тулнă пек, йытпуллисем тухса выртнă. Юшкăн çинче тăрна йĕрĕсем тĕрленнĕ. Сăмсана тăм шăршипе хутăш пылчăк айĕнче кăмрăкланса çĕрнĕ кăмсăк йывăç-курăкăн чĕрĕ йывăр шăрши çапать.

Çывăхра çын сасси илтĕнмест. Сайра хутра чăнкă çырантан юхса анакан хăйăр кăшăртатать. Вертолет пек çĕлен лаши ĕрлесе çухалать. Таçта, сулхăнта, ирра тăрлатса авăтать. Пуç урлă кураксем карласа иртеççĕ.

Куçакан пĕлĕт çине пăхсан-пăхсан, пĕлĕт мар, эпĕ хам çыранĕ-мĕнĕпех куçнăн туйăнать. Пит çумĕнчи пĕçертекен хĕвелпе вĕриленсе кайнă сывлăша варкăш çил килсе уçăлтарать.

Кунта эпĕ çулла пурăнманшăн-и — çак вырăнсем мана пушшех те хаклăрах пек, тата кунпа пĕрлех çак илем маншăн мар пек, унпа киленме пурнăçра мана татах темскер çитеймен пек туйăнать.

Эпĕ хам сисмесĕрех кунти кашни сасса тăнлатăп, кашни япалана сăнатăп.

Акă халь çакăнта темĕн курса-илтсе юлмасан, çав темĕн, курăнмасăр, илтĕнмесĕр, чуна сĕртĕнмесĕр иртнĕскер — кайран тахçан, сасартăк куç умне тухса тăрса, çак хальхи нихçан та тек таврăнас çук пĕр самантшăн ĕмĕр тăршшĕпех ӳкĕнмелле-пăшăрханмалла тăвассăн, манăн тем çухалассăн туйăнать. Пĕлетĕп: текех кунта эпĕ нихçан та килес çук.

...Шыв çинче тĕл-тĕл те бензин, те урăх шĕвек тăкăннă та, асамат кĕперри хуçăлса аннă пек, хĕрлĕ-симĕс-кăвак тĕссем ылмашса тăраççĕ.

Пĕчĕк авăрта çавра хумсем кусаççĕ. Вĕсем çинчен тимĕрç лаççи çине хĕвел шевлисем вĕлтĕртетсе çĕкленеççĕ те, пĕр йăвана вĕçсе кĕме хăтланакан вуншар чĕкеçсем пек, пĕр-пĕринпе çапăнса тăкăнаççĕ, сӳнеççĕ.

Акă инçех мар шыв хĕрринче иккĕн ахăлтатса тĕлĕнмелле савăнăçлăн кулни илтĕнчĕ. Ина сасси!..

Сергей хăйĕн чи телейлĕ те илĕртӳллĕ куллипе кулать.

Эпĕ ура çине тăрсан, ман çумрах çывăхри çырма кукринче ларнă акăш хуллен çӳлелле лапăстатса хăпарчĕ те çырма тăрăх вăрман хыçнелле вĕçрĕ.

Шыв тăрăх ĕнтĕ халь каç еннелле таçтан тапса тухнă

шурă кăпăксем, улмуççин тăкăннă çеçки пекскерсем, ерипен юхса килеççĕ те юхса каяççĕ.

Хам хыçри сăртран юрă сасси чĕтренсе килчĕ те, ман умри такам урипе таптаннă кĕрен чечек, юрă итлеесшĕн пулнă пек, чăшăлтатса тăрса ларчĕ.

Юрласса вара пачах ман хыçри сăртра мар иккен — улăхлă-вăрманлă сарлака çыранăн тепĕр сăртĕнче юрланă. Мана вăл — хыçри сăрта пырса çапăннă хыççăн тин каялла килсе илтĕнет. Вăрманлă сăрт, хавăслă юррăн пĕтĕм сăмахĕсене, юрă çеммин мĕнпур хавăслă кĕввине хăй çăтса юлса, ман пата унăн ахрамне çеç, чуна хĕссе ыраттараканскерне, çитерет.

Эпĕ вара автобус чарăннă çĕре васкарăм.

...Акă ĕнтĕ эпĕ каллех чирлĕ... Юрать-ха, час-часах уçăлма кăлараççĕ. Ман телее, кунтан пĕтĕм Атăл курăнать. Çамрăксем нумай иртеççĕ.

Анчах эпĕ виçĕмкун çак больница сачĕ Атăл хĕрринче пулнăшăн пăшăрханса та илтĕм.

Тен, Сергее урăх курман та пулăттăм...

Сергей пĕр çап-çамрăк хĕрпе туран анатчĕ. Темĕнле сăвă калатчĕ.

Хам пĕлнĕ «Эс йăмăк çеç-ха халь мана...» текен йĕркесем мана çав тери пăлхатса ячĕç. Хĕрне эпĕ куна палламастăп. Вăл палламан çынсенчен те вăтанкаласа çеç пыратчĕ. Сергей ăна «ыран пĕр юханшыв çинчи яла пĕр ĕçпе» кайса килмелли пурри çинчен калатчĕ...

Эпĕ çав кун врачсенчен вăрттăн пĕр пачка пирус туртса ятăм. Ку вăл — хамăн сывлăхшăн питĕ сиенлĕ иккенне, чире пушшех тарăнлатнине пĕлсе тăнă çĕртех хама хам тытса чараймастăп. Врачсем лăпкă пулма хушаççĕ. Анчах мана халь чун-чĕрери ырату чиртен те ытларах кăшлать.

* * *

Çырса пынисем çакăнпа вĕçленнĕ. Анчах ун çыравçи, хăйĕн пурнăçĕнчи ĕçсене пĕтĕмлетсе, пысăк шухăш калама хăтланни унăн планĕнчен лайăх курăнать. Ăна вăл темиçе тĕле чĕре-чĕре, хуратса, çĕнĕрен çырса тунă. Эпĕ унпа та вулакана паллаштарасшăн. Акă вăл:

1. Туслăх аталанса пыни (юхăмĕ).

2. Туслăх майĕпен çывăх туйăма куçма тытăнать, анчах çав тин аталанма пуçланă туйăмсене — çирĕпленмен-

скерне—пĕр йĕксĕк килсе пăсать. Хĕрача, çап-çамрăкскер, йăнăшать-ха. Çавна пула чăн-чăн çын енчен тулашĕ çеç илемлĕ çын енне сулăнать.

Çак плана пурнăçлама вăл хăват çитерне-и, çук-и — калама йывăртарах.

Çавăнпа та эпĕ, çыравçипе хăйпе калаçса пăхас тесе, Атăл хĕррине тухрăм.

Атăл хĕрринчи малтан ăшă лĕп çил те перĕнсе хускатма хăйман çамрăк çăкасен çулçисене сивĕ шухă çил халь ĕнтĕ лăскать, явать, муталать те çĕтет...

Ман чирлĕ юлташ малтанхи пекех пĕр акаци тĕми çумĕнче тăрать. Эпĕ ăна аран-аран çеç палласа илтĕм. Хăй вăл типсе ырханланса кайнă. Сăнĕ хура тĕслĕ. Пит шăммисем те палăраççĕ. Сăмса çунаттисем тĕлĕнчен анакан икĕ тарăн авăк йĕр çăварне кăшăлласа çавăрса илет. Типнĕ çăварне йĕпетес тесе, вăл тек-текех чĕлхине ĕмет. Куçĕсем чăл-чал пăхаççĕ. Атăл хĕррипе çамрăк мăшăрсем иртсе кайнă чухне çеç, пĕр çĕрелле кăн-н! тинкерсе, çилĕллĕн кытса тăраççĕ.

Эпĕ тетрадь пирки сăмах пуçласан, вăл шарт сикрĕ.

— Çунтарса яр! Кирлĕ мар! — терĕ вăл хăвăрт.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Çунтар! — терĕ вăл тепĕр хут.—Халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех пĕтрĕ... Сергей!.. Сергей... йĕксĕк!.. Улталанă!..

Вăл икĕ аллипе карта пăралукĕнчен ярса илчĕ те пуçне чикрĕ.

— Ина!.. Хура куçлă Ина!.. — терĕ вăл сăмахсемпе чыхăна-чыхăна.—Уйăраймарăн-шим эсĕ Сергейсене?.. Манăн, учителĕн, вĕрентмеллеччĕ сана!

— Çук, эп сана пурне те калаймарăм, Ина. Эпĕ—учитель — сана нумай калама тивĕçлĕччĕ. Сана эпĕ тĕрĕсех «иккĕ» лартрăм ун чухне. Санăн халĕ шăпах çав урока аланă сăмахран тухса тăракан йăнăш... Эсĕ пурнăç тăрăх ху тĕллĕн утма, хурапа шурра уйăрса илме вĕренсе çитсен кăна, çĕр çинче ху шыранине тупсан тин — эпĕ те телейлĕ пулăп, сывалăп. Каçар эс, Ина, эпĕ айăплă сан умра, айăплă!..

Сан варнах кĕрсе ларнă:

«Чун-чĕри хитре этемĕн —
Ытарми сăн-пит те...»

текен йăнăш йĕркесене эпĕ малашне нихçан никама сĕнмĕп. Кунсăр пуçне «ытарми сăн-питлĕ этемĕн чун-чĕри хитре» тесшĕн те пулман эпĕ, ку пĕтĕмпех Сергей ирĕкĕпе пулса тухрĕ... Эсĕ, Ина, тен, шăпах çапла ăнланнă. Кунта эпĕ айăплă. Çавна ăнлантарса парас вырăнне—хам пăтраштартăм сана. Ман айăп хам та ун чух вĕрентме çеç вĕреннĕ пирки пулнă пулĕ.

Анчах, çук! Калатăпах сана чăннине! Эпĕ нумай-нумай Инăсене калама тивĕç... Сергейсем хушшинчен чăн-чăн çынсене уйăрса илме вĕрентмеллех ман. Вĕрентетĕпех!..

Чирлĕ çын, сулăнса кайса, карта çумне çурăмĕпе çаврăнса ӳкрĕ... Ӳслĕкпе чыхăнчĕ... Вара ăна сестрасем чупса пырса çавăтса кайрĕç...

Эпĕ тепĕр икĕ кунтан Ина пирки пĕтĕмпех йĕркеллĕ ыйтса пĕлес шутпа каллех Атăл хĕррине кайрăм.

Тубдиспансер картинче халĕ пĕр чун та курăнмарĕ. Пĕркун ман калавçă тăнă акаци тĕми çеç ниçта кайса кĕреймесĕр авкаланать, унăн тăррисем хушшăн-хушшăн çиле май пĕшкĕнсе хытса тăраççĕ те — шăхăраççĕ, такама тем каласшăн пек туйăнаççĕ. Самантран тин тубдиспансер картинче шурă халатлă пĕр çамрăк хĕрарăм курăнса кайрĕ. Эпĕ ăна кăшкăрса илтĕм те Анатолий Иванович сывлăхĕ пирки ыйтрăм.

— Çук ĕнтĕ вăл кунта тек, — терĕ вăл лăпкăн.

— Мĕн?.. Мĕн пулнă ăна?..

— Ăна Ялтăна санаторине ăсатрăмăр,—терĕ хĕрарăм...

Унтан урăх ним ыйтса пĕлме те пулмарĕ.

...Эпĕ унта тепре кайсан карта çумĕнчи тĕмеске çинче, ыталаса тытнă чĕркуççисем çине икĕ вăрăм çивĕтлĕ пуçне хурса, пĕр çинçе пилĕклĕ илемлĕ хĕр ним хускалмасăр ларнине куртăм.

Ура сассисем илтĕнсенех вăл ялт сиксе тăчĕ те Атăл хĕррипе чупсах тăвалла хăпарса кайрĕ...

Унăн тарăн куçĕсем чуна витерсе, çунтарса, çилĕллĕн пăхатчĕç. Вăл пĕрре пăхни, çыннăн мĕнпур хăюлăхне сасартăках хуçса, чĕререн темĕнле ыраттаракан туйăма хайăрса кăларатчĕ. Çав куçсенчен тӳррĕн пăхма та йывăрччĕ. Таса чунлă çамрăк унăн тĕсне, чăнах та, нумайччен уйăрса илеймен пулĕччĕ.

Анчах кам пулчĕ-ши вăл?..

Вăл ларнă тĕлти тубдиспансер картинче — хушăк витĕр алă тăссах çитмелле çĕрте — манăн калавçă малтанхи кун тăнă çамрăк акаци тĕми кутĕнче пĕчĕк пукане-клоун, тĕрлĕ

тĕслĕ хăюсемпе эрешлесе пĕтернĕскер, ларнине курсан — манăн нимĕн иккĕленмелли те юлмарĕ.

Вăл хĕр — хура куçлă Ина пулнă... Ун куçĕсем мана та хура пек курăнчĕç.

Эпĕ вара çапла çеç калама пултартăм.

Çук, Анатолий, сирĕн шухăш тĕрĕс пулман: сирĕн туслăха йĕксĕк пĕтерсе хурайман. Сирĕн туслăх малалла аталансах пыма тивĕç... Эсĕ çĕнтертĕн!..

1956—1957.

СУРĂМ ХĔРĔ

Повесть

1

Çак таврари ял ячĕсене кунтан пĕр вунă-вунпилĕк çухрăм аякра В***— касси, Й***— касси тесе асăнсан — нумайăшĕ пĕлмеççĕ те. «В*** — касси Сурăм, Й***— касси Сурăм...» тесен вара — кунтан хĕрĕх-аллă çухрăм йĕри-тавралла та «А-а, пĕлетĕп» тесе пуçĕсене сĕлтеççĕ. Мĕншĕн тесен ку ялсем Сурăм шывĕ тăрăх ларса тухнă.

Шывĕ пĕчĕкскер çеç вăл. Вăйлă çăлкуçлă сулхăн вар хушшинчен тухакан юпсем Сурăм шывĕн таппи пулса тăраççĕ. Ялĕсем кунта нумайăшĕ çавăн пек вар пуçĕсене вырнаçнă.

Сурăмпуç ялĕ те пĕр пысăк вар пуçĕнче ларать. Сурăм шывĕ çак ял патне çитнĕ çĕре шыв арманĕн çуначĕсене çавăрмалăхах вăй илет. Сурăмпуç ялĕнчен тепĕр çухрăм анатарахри ял ГЭС-ĕ — Сурăм таппинчи пĕрремĕш ГЭС.

Çак таврари ялсенчен Сурăмпуçĕ уйрăмах илемлĕ. Ялĕнче çирĕм ултă кил çеç пулин те, таврари хĕрсем «Сурăмпуçне» тесен, ĕлĕкрех хапăл тусах качча пынă, теççĕ.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçиччен çак ял варринчи çырма икĕ енĕпе улма пахчисем тăсăлнă. Улăхсенче тăршшĕпех çирĕклĕх ӳснĕ. Халĕ улма пахчисемпе çирĕклĕх çук пулин те, Сурăмпуçĕ хăйĕн илемлĕхне çухатман.

Çурçĕр-хĕвеланăç еннелле пăхакан хăрах енлĕ урамĕн пахчисенех кĕрсе тăракан пĕчĕк хутăш вăрман пур: ун варринче икĕ-виçĕ тĕлте пĕчĕк пĕвесем. Çак пĕчĕк вăрман хыçĕнчех тепĕр ярăм уй урлă — Қуканар вăрманĕ. Тепĕр пысăк вăрманĕ вара ялăн мал енĕпе çурçĕр еннелле кайса çухалать.

Ялтан çав вăрмансен тăррисем сулланни те курăнать, кайăксем юрлани те лайăхах илтĕнет.

Кăнтăр-хĕвелтухăçнелле пăхакан тепĕр хăрах енлĕ урамри пахчасен хыçĕнче Каçликка варĕпе касăлнă сĕвеклĕх Сурăм улăхне çитиех тăсăлать.

Сурăм ку тĕлтен кăнтăралла юхать.

Çак Сурăмпуç ялĕнче çыннисем те хăйне евĕрлĕ, теççĕ. «Илемлĕ вырăн» тесе качча килекенсем чылаях пулнăранши — кунта çутçанталăка юратса унпа киленме пĕлекенсем, тарăн туйăм-сисĕмлĕ, ырă та çемçе чунлă çынсем, хитре хĕрсем чылай, теççĕ.

Тĕрĕсех-и ку, çук-и?.. Анчах пĕчĕк Сурăмпуç ялĕ çулсеренех ку таврари хăйĕнчен улт-çич хут пысăк ялсенчен те ытларах хĕр парать. Епле хĕр ӳстерсе çитерет çеç!.. Çак ял яш-кĕрĕмĕсем те ялта çичĕ туратран иртмен хурăнташлă хĕрсемсĕр пуçне урăх тупăнмасан çеç ют ялтан хĕр илеççĕ-мĕн.

Чăнах та ĕнтĕ, кунта пĕтĕм ял пĕр-пĕринпе тăванлă-хурăнташлă. Ялта пĕр кил ĕçкĕ тусан — пĕтĕм ял унта пухăнать.

Çамрăксем çулсеренех пухха каяççĕ.

Кунта пухăсем Йӳçкассинче, Уйчӳккассинче, Шурчара, Ишекре, Чăваш Сурăмĕнче пулаççĕ. Çав пухăсем ĕлĕкренех пыраççĕ, вăл ĕлĕк чиркӳ хĕресне «светить» тунă кунпа çыхăннă-мĕн. Асăннă ялсенче ĕлĕк кашнинчех чиркӳ пулнă. Халĕ чиркӳсем çук пулин те, пухăсем пурпĕрех çулсеренех тата кашни çулах пĕр вăхăтра пулаççĕ. Анчах нумайăшĕ халь çав пухăсем мĕнрен пуçланса кайнине пĕлмеççĕ те, пĕлесшĕн те мар.

Пухă та пухă — çамрăксемшĕн уяв!

Çак таврашра туй йăли-йĕркисем те ĕлĕкхисемех сыхланса юлнă. Халăх ăна, чăнах та, нумай çĕнетнĕ ĕнтĕ. Чиркӳпе «асамлă вăйсене» ĕненнипе çыхăнни йăлтах тухса ӳкнĕ вĕсенчен.

Çак таврари яш-кĕрĕмсем ялан тенĕ пекех Чăваш Сурăм пуххи тĕлĕнче авланаççĕ. Сурăм пуххи яланах утă çинче, июлĕн 12-мĕшĕнче пулать. Кун умĕнхи пухăсенче каччă «хĕр пăхать», Сурăм пуххинче вара—«хĕр вăрлать». Халь ку «хĕр вăрлани» «тĕлĕнмеллерех» пулин те — кунта, чăнах та, халĕ те çапла.

Паллах, пĕлмен-курман-калаçман хĕре мар ĕнтĕ: хĕрĕпе килĕшсе-калаçсах татăлаççĕ. Хăйне «вăрласса» та вăл пĕлет. «Вăрланипе» хăй те килĕшет. Мĕншĕн тесен

«хĕр вăрласан», каччă туй йăли-йĕркине пысăк тăкаксăрах — пĕчĕк ĕçкĕпех (хĕр çураçса, хăтана кайса, таврăна хăта халăхĕ кĕртсе) ирттерсе ярать. Пысăк туй тăвас текенсем хĕре «вăрламаççĕ», евчĕсем ярса, ашшĕ-амăшĕпе килĕшсех тăваççĕ.

Пĕлтĕрхи Сурăм пуххинче Сурăмпуçĕн пурлă-çуклă хĕрĕсенчен иккĕшне вăрланă. Апла пулин те, Сурăмпуçĕнчен кăçалхи Сурăм пуххинче те кама та пулин вăрласса, пурпĕрех туй пуласса шансах тăраççĕ.

Сурăм пуххиччен эрне ытла пулин те — пĕтĕм ялĕ ĕнтĕ яланхи пекех сăра тума хатĕрленет. Килĕренех така пусасси çинчен калаçаççĕ, килтен киле хăмла, çĕпре, кăвас тĕпĕ, анĕç вăрри ыйтса чупаççĕ. Хунькассисене хăнана чĕнме каяççĕ, хăшĕсем тата «туй курма» та, теççĕ. «Кам кама илет?» тесен — пурте, кăнтăралла пăхакан урам варринчи хĕвеле тӳртĕн шатрун çурт еннелле пăхса, куçĕсене хĕссе илеççĕ.

Ку çуртра Пăрасук инке хăйĕн виçĕмçул авланнă ывăлĕпе тата Сухви ятлă хĕрĕпе пурăнать.

Сухви çинçе пилĕклĕ, теветкел сăн-питлĕ вăтам пӳллĕ хӯхĕм хĕр. Сăн-пичĕпе вăл хĕвелтухăç халăхĕсен хӯхĕм хĕрне асилтерет. Çӳçĕ те, хулăн куçхаршисем те, пăт хура куçĕ те, кăшт тĕксĕмрех сăнĕ те — ăна калама çук хăйне евĕр илемлĕх кӳреççĕ.

Амăшĕ унăн, Пăрасук, çак ялти ватă хусаха — каччине хăйне юратса мар — çак тавралăха юратса килнĕ, теççĕ. Пăрасук пит хуйхă тытакан хĕр пулнă. Аякран çаврăнса тивнĕ сăмаха та вăл йывăра илнĕ. Анчах ун пĕр çитменлĕх пур имĕш: тĕшмĕшрех çын-мĕн.

Сухвие ялта амăшĕ пекех туйăмлă хĕр, теççĕ. Кăçал вăл вунсаккăра пуснă.

«Питĕ юсу хĕр вара» тенĕ ун пирки ялта. Сĕт пек шурă куç шурри çинче пиçсех çитмен çĕмĕрт тĕслĕ хăмăр куç шăрçи, ун ăшĕнче тепĕр хуп-хура пĕчĕк пухра пек пăнчă ларать. Тутисене вăл чăпăрт тытса çӳрет. Сăмси пĕчĕк те тӳрĕ, пичĕ пиçнĕ пĕрлĕхен тĕслĕ, тутисем тăсăк йĕкĕрчие пек.

Кăçалхи Сурăм пуххи тĕлĕнче çак хĕре вăрласса кĕтсе ĕçкĕ ĕçме шак хунă ĕнтĕ ялйыш.

Анчах кам вăрлать-ха ăна?

Кун пирки никам та пат татса калайман.

Сухвие амăшĕ питĕ çирĕп тытнă. Ку таранччен никам та Сухви каччăпа тăрса сăмах хушнине те, вăйă картинчен

тăрса юлнине те курман. Анчах кăçалхи пухăсенче ăна нумай каччă куç хывнă имĕш.

«Кам илсе, кам ыр курĕ-ши?», «Кама кайса савăнтарĕ-ши?» текенсем те пулнă.

Хăшпĕрисем: «Кăçал Сухви качча каймасть, вăл питĕ каччă тиркет», тенĕ; теприсем: «Чун патĕнчи пур: Хĕветли инкен ывăлне кĕтсе пурăнать», тенĕ. Виççĕмĕшсем: «Хĕветли инкен ывăлĕ, вунвиçĕ-вунтăвата çул таран вĕреннĕ те, ялта икĕ çул пулман та, — çав сурăх кĕтĕвĕ пăхакан çичĕ çул çеç вĕреннĕ ял хĕрĕшĕн питех хыпать пулĕ...», тенĕ.

Ку сăмахсем Хĕветли инкен хăлхине те кĕнĕ. «Çынпа çын пĕрех пуль, — тенĕ вăл, юриех сăмаха çемçетсе. — Халĕ сахал-и нумай вĕреннĕ çынпа ахаль çын мăшăрланни...»

Хĕветли инке ялйышпа пĕлĕш-хурăнташлă пулас пирки сахал мар шухăшланă. Пĕтĕм ял ĕçкĕ-çикĕре чух вăл кăна вĕсемпе хутшăнайман: никампа та тăван-пĕтенлĕ мар... Сухвие кин тăвас пулсан — Хĕветли инке те халăха еретчĕ, пĕтĕм ялпа хурăнташ-пĕлĕшлĕ пулатчĕ...

Сухви Хĕветли инкене питĕ килĕшнĕ. «Эх, çав Сухви ман кин пулас пулсан...» тесе пĕрре çеç мар сăмах вăлтса илнĕ Хĕветли инке хăй ăссĕн те, çын умĕнче те, Сухви амăшĕ умĕнче те. Пăрасук инке ним те калайман. «Тем, пĕрнепĕри вĕсем тĕс мар пуль, — тенĕ вăл. — Унăн хуларах темĕн чухлĕ пулĕ — мăйран çакăнакансемех...»

Хĕветли инке юлашки вăхăтра час-часах Сухви пирки шухăша кайнă.

«Сăмаха пуç тавра шухăшламасăр пат персе ямасть, çиччĕ виçсе калаçать; ватăпа — ватă пек, яшăпа — яшă пек. Çын ачисем пек вĕçкĕн мар, шулака мар. Кăмăллă, сăпайлă, хитре... Тăван-пĕтенĕсем хушшинче те апла-капла çын пулман, нихăшне те усалпа, ырă маррипе асăнмаççĕ...»

Мĕн кирлĕ тата?..

Ун начар-им ывăл?..

Юратнă ывăл кун-çулне мĕншĕн таçти çĕрти-шыври пĕлмен-курман çын шăпипе çыхас-ха? Шет, темле хĕр çакланать-ха, ача-пăча — ватти ăс памасан — «ватти çук та, латти çук» тенĕ пек—мĕн пĕлет?.. Аслă ывăлĕсем ав хулара авланчĕç те — килсе те курмаççĕ, пĕрле ĕçсе-çиесси çинчен çăвара та ан ил. Кĕçĕннине те пулин — Санькăна — ялтах мăшăр тупса парасчĕ. Хĕветли инке мĕн чухлĕ хут çырмарĕ пуль ĕнтĕ ывăлĕ патне яла килсе курма чĕнсе. «Вăхăт çук» та «вăхăт çук» тесе хуравлать ывăлĕ.

Пĕр-икĕ кунлăха та вăхăт тупма çук-ши вара? Хăй тимлемест пулĕ çав.

2

Чăваш Сурăм пуххиччен шăп та шай пĕр эрне юлчĕ.

Кунсем хĕвеллĕ те шăрăх тăраççĕ. Çемçерех йывăç çулçисем: çăка, шĕшкĕ, çул хĕрринчи хурама çулçисем — кăнтăрла тĕлнелле шăрăхпа ĕнтĕркесе шансах каяççĕ те ерипен сулланкаласа тăраççĕ, йывăçĕ те сĕнксе çеç ларать. Ир еннелле çеç каçхи сулхăнпа, нӳрĕ сывлăшпа вăй илсе чĕрĕлеççĕ.

Паян кăнтăрлапа Сурăмпуç еннелле чăматан йăтнă пĕр яш ача утса килни курăнчĕ. Вăл кӳршĕ ялтан тухсанах хăйсен улăхне пăрăнса кĕчĕ те çыр хĕррипе утрĕ.

Вăл, ахăртнех, кунта темиçе çул пулман-тăр, анчах çак тавралăх унăн тăван кĕтесĕ пулни, çак яш ачана вăл чунтанах килентерни сисĕнсех тăрать. Каччă, пуçне енчен енне пăркаласа, пĕрре сулахай енчи сийлĕн-сийлĕн тăсăлакан вăрман тăрри çине, тепре ун çумĕнчи пиçме пуçланă çӳлĕ ыраш уйĕ çине, сылтăмра улăхваррипе хуçкаланса тăсăлакан Сурăм çине пăха-пăха илет.

Улăхра пĕр ушкăн хур сапаланнă, тепĕр ушкăнĕ умлăнхыçлăн, тем тăршшĕ тăсăлса, çыраналла хăпарать.

Каччă улăх лапине çерем ватса акнă кантăр ани хĕррипе иртрĕ. Сăмсана, техĕмлĕн кăтăкласа, симĕс кантăр тусанĕн шăрши çапрĕ. Кантăрĕ кунта çын пĕвĕнчен те çӳлĕ ӳснĕ: пуçĕсем, тукмак пек çĕкленсе, аран-аран çеç сулмаклăн сулланкалаççĕ. Вĕсем хушшинче тин çеç уйрăлма пуçланă пусасем кăштăртаткалаççĕ.

Каччă кĕлеткерен вăтам та яштак, пӳ-сирен килĕшӳллĕ. Вăл кĕске хуллă пурçăн кĕпепе, шурă шăлаварпа тата шăтăклă-шăтăклă питлĕ шурă пушмакпа. Хăрах хулĕнчен кăвак плащ хуçлатса уртнă.

Ку — Хĕветли инкен кĕçĕн ывăлĕ Санька...

Акă ĕнтĕ çулталăк çурă çитрĕ вăл çуралнă ялта пулманни. Инçетрен килсен улшăну тӳрех сисĕнет çав. Авă кунта улăхра — Сурăмпуçпе Панкли хушшине пысăк пĕве тунă. Ялĕсен хушши те кĕскелнĕ пек. Вĕсем пĕр-пĕрин патнелле çывхарнă пек. Ку вăл икĕ ял пуçне те çĕнĕ çуртсем хушăннипе ĕнтĕ. Улăх лапине те сухаламанччĕ. Кунта пĕчĕк чух кăшкарути пуçтарма пĕрре мар килнĕ вăл...

Пĕлтĕрех сухаланă-ши ăна?

Пĕлтĕр çулла яла килме май килмерĕ ун. Музыка учи-

лищинчен вĕренсе тухсан, ăна пĕр колхоза пултарулăх кружокне ертсе пыма ячĕç. Малтанах унта юрă праçникне хатĕрленмелле пулчĕ, кайран тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçсем... Халĕ ав Шупашкара, халăх пултарулăх çуртне куçарчĕç...

Яла çапах та чун туртать. Кирек ăçта пулсан та, кирек мĕнле çынсемпе тĕл пулсан та — тăван ялах, тăван ял çыннисемех аса килеççĕ. Кирек мĕнле хулара пулсан та, Санька пурпĕрех ял ачи. Ял чунĕ, ял кăмăлĕ ун.

Санька, чăнкă çырантан хăпарса, урисене çут хĕрринчен усса ларчĕ. Çумри пăри тунисем, кушак сухалĕ пек вăрăм хăлчăкĕсене хускаткаласа, пуçĕсене пăркалаççĕ.

Аякра Сурăм хĕрринчех сурăх кĕтĕвĕ çӳрет. Унта пĕр хĕр кĕлетки куçкалани курăнать.

Санька тек-текех сурăх кĕтĕвĕ еннелле пăха-пăха илчĕ. Кам кĕтет-ши халь çав сурăх кĕтĕвне? Кунтан кĕтӳçĕн тумне те уйăрса илме çук.

Тепĕр самантран сурăх кĕтĕвĕ енчен юрлани илтĕнчĕ:

Çĕн калуша хĕрхенсе
Вĕттĕн пусма вĕрентĕм.
Çын куласран именсе
Пуçа чикме вĕрентĕм.

Сухвиех мар-ши?

Сухвие аса илсен, çак тавралăх татах та илемленсе каять... Кунта темĕнле питĕ илемлĕ, тарăн шухăшлă, кăшт хурлăрах кĕвĕ илтĕнме тытăнать. Кашни кĕтесĕн, кашни тавралăхăн хăйĕн кĕвви пур иккен... Ăна сăмахпа калама çук, ăна чун сисĕмĕ çеç туять... Çавна сасăсемпе çеç тытма пулать... Çакна Санька ача чухнех асăрханă, анчах ун чухне вăл ăс-тăна сĕртĕнмесĕрех иртнĕ...

Çак вырăнта ларсан, Санькăна мĕн ачаранпах темĕнле хурлă аваллăхăн астаракан мерченлĕхĕ чуна пырса сĕртĕнет... Хăйĕн темĕнле хурлăх йĕррин, хурлăх туйăмĕн уçăмлăхĕпе...

Вара çак вырăнта ĕлĕк питĕ чуна хумхантаракан пĕрпĕр япала — пĕр-пĕр паттăрла ĕç-и е пысăк юрату-и — пулнă пек, анчах ăна халĕ никам та астуман пек, — çав ĕç чăнахах пулнине çакăнта ларнăçем ăшра хускалса илекен туйăм çеç систерсе тăрать пек...

Пысăк юрату пулнă пулсассăн... Хĕрĕ вара çак улăхра сурăх кĕтĕвĕ кĕтекен Сухви пек... Ку, паллах, йăпанулла шухăш-ĕмĕт юххи... Пĕр-пĕр оперăн е симфонин пуçламăшĕ...

Шăпах çакăн пек япала çырасшăнчĕ ĕнтĕ Саня. Вăл

япала çак вырăнта ларнă чух çуралакан туйăмран тухса тăмалла... Хĕр сăнарĕ те çавах пулмалла... Сухвиех...

Сăнĕ-пичĕ унăн кăшт хурлăрах. Анчах кăмăла тытса илекен, чĕрене çемçетсе ярса, ирĕксĕрех хăй патнелле туртакан хурлăх, туйăмсемпе пуян хурлăх... Чĕрери туйăм-ĕмĕт пуянлăхĕ пурнăçра пур чухне те хăйне килĕшӳлли те тивĕçӳлли тупайманнипе ăванса асапланни ун пит-куçĕнче çапла хурлăн йĕрленнĕ пек туйăнать.

Кун пек сăн-пит, чăнах та, туйăмсемпе çав тери пуян çыннăн, нумай ĕмĕтленнĕ те сахал тупнă, ырлăха ĕмĕтленнĕ те шырлăха ытларах курнă çыннăн, ку мĕншĕн çапла пулнине ăнлансах пĕтереймесен, анчах халĕ хăй мĕн тупнипех ĕмĕрлĕх çырлахсан пулать.

Ун çине пăхсан, хăвна та хурлă пулса каять. Ăна, темшĕн шеллесе, хӳтлĕхе илес килет.

Санька куçĕ умĕнче акă темиçе çул хушши ĕнтĕ çавăн пек хĕр тăрать... Ку вăл, паллах, пĕр-пĕр пулас симфони сăнарĕ... Ăс-тăнри, ĕмĕтри сăнар... Санька ăна пурнăçра шырасан — Сухви куç умне тухать...

Сухвин сăн-питĕнче чăвашăн тĕлĕнмелле хăйне евĕр çемçелĕхĕ, мĕнпур чунтан юратма та хурланма, кирлĕ пулсан — тарăхма та, кирлĕ пулсан—виçесĕр савăнма та кулма никамран ытла пултаракан темĕнле йĕрĕ, питĕ сисĕмлĕ, пысăк, тарăн чун, çĕр çине тепĕр хут нихçан та çуралма пултарайман хăйне евĕр илемлĕх сисĕнет.

Аякран-аякран шутарса каланă сăмаха та вăл хăй çине илсе пăшăрханассăн, унăн сăнĕ тата хурлăрах пулса каяссăн пек туйăннипе ун умĕнче ахаль сăмах каласа яма та иккĕлентерет, шухăшлаттарать. Вăл хавасла чух вара — хавасланмасăр, кулмасăр тӳсме те çук.

Виçĕмçул Санька ялти вăйăсене тухса çамрăксене пĕрре мар купăс каласа сиктернĕ, юрлаттарнă, выляттарнă.

Унта Сухви те пулкаланă.

Вăл кĕскен çеç кулса илнине сӳтсе-тăсса нотăсемпе çырса хурас пулсан, хăех пĕр юрă — таçта кайăк тĕнчине вĕçтерсе каякан хурлăрах сиктерӳллĕ юрă çемми пулса тăрать. Вăл кĕвĕре вара чăвашăн пĕрчĕн-пĕрчĕн пĕр çĕре пуçтарăнса чăмăртаннă мерченлĕхĕ сиккелет. Чун сисĕмĕ çавна асăрхать-асăрхатех.

Санька чунтан кулакан çынсене курнă пулин те, кулăра çавăн пек илемлĕ сасă ылмашăвĕсен мерченлĕхне никамăнне те асăрхаман. Ку вăл хăйне çеç пӳрнĕ пултарулăх пулĕ Сухвин?.. Ăна вăл хăй асăрхамасть те пулĕ. Тен,

Санькӑна ҫеҫ, музыка ҫыннине, ҫапла туйӑнать? Тен, вӑл Санька ӗмӗт-шухӑшӗнче ҫеҫ ҫавӑн пек ӳссе кайнӑ? Тен, Сухви хӑй (чӑн-чӑн пурнӑҫри Сухви) апла мар?

Сухви вӑйӑ картинче юрланине те илткеленӗ Санька. Анчах вӑл нихҫан та хӑйӗн сассине ҫеҫ уйӑрса илмелле пӗччен юрламан. Юрӑ пуҫламӑшӗнче те, юрӑ вӗҫӗнче те унӑн сасси илтӗнмен: вӑл — хӑй сассинчен ҫын умӗнче вӑтанса—чи кайран юрлама пуҫланӑ та чи малтан чарӑннӑ. Юрӑ варринче хӑйӗн сасси ҫынна илтӗнмест тенӗ пулас вӑл. Ун сасси, чӑнах та, ахаль ҫынна илтӗнсех илтӗнмен. Анчах ахаль ҫынна илтӗнмен сасӑ музыка ҫыннине темӗнле хуллен юрласан та илтӗннине Сухви пӗлмен.

Санька унӑн сассине аванах илтнӗ.

Вӑйӑ карти юрланӑ чух ҫав ушкӑн сассине тутлӑ яшканах тӑвар ҫитеймен пек туйӑнса тӑнӑ пулсан, Сухви юрлама пуҫласан вара — ҫав ушкӑн сассинех пачах урӑх тутӑ парса — чуна кӑмӑллӑн сӑркӑлтаракан янрав хутшӑннӑ.

Кунсӑр пуҫне Санька Сухвие улӑхра час-часах курнӑ. Санька вӑлтасем йӑтса, Сурӑм шывӗ хӗррине, Ҫаҫликка арӗ тӗлӗнчи шыв кукӑрне, пулӑ тытма аннӑ. Йӑпӑлтакпа кутан ҫеҫ кӗнӗ пулин те, унта ларма кӑмӑллӑ пулнӑ.

...Вӑлта хулккине шурӑ кӑпӑк карталаса илет, ҫыран леш енне ларса лиҫ кайӑк юрлать. Хыҫра сурӑхсем мӑштӑртаткаласа ҫыран хӑйӑрне юхтараҫҫӗ. Хушӑран-хушӑ вӗсене пӑхакан кӗтӳҫӗн сасси те—Сухви сасси илтӗнкелет. Сухви хӑй пӗрре те ҫыран хӗррине пымасть. Вӑл темшӗн Санькӑна курсанах аяккалла тарать. Ача ӗнтӗ! Мӗнех калӑн? Кӗтӗвне вара вӗсем (Сухви тепӗр карчӑкпа пӗрле кӗтнӗ) темшӗн Санька пулӑ тытма тухсанах ун ҫывӑхнелле хӑваланӑ...

«Ҫаҫликка арӗ тӗлнерех хӑвалас..» тесе Сухви кӑшкӑрнине Санька аякранах илтетчӗ. Унӑн карчӑк-юлташӗ «Унта курӑкӗ ҫук-иҫ» текелесе ӳпкелешетчӗ пулин те, кӗтӳ пурпӗрех Санька авӑрӗ патнех пыратчӗ...

Санька амӑшӗ Сухви пирки пӗрре ҫеҫ мар шӳт тукаласа илетчӗ.

«Ҫачча илсе парас мар-и сана ҫавна? Питӗ юсу вӗт»,— тетчӗ вӑл хӑш чухне, Сухви пӗве пуҫӗпе ҫӑл патнелле утнине курсан.

Хӑйӗн ҫырӑвӗсенче те вӑл ним йӳн-йӳтӗмсӗрех Сухви пирки асӑнса илет. «Ӳсрӗ, хӗр пулчӗ, хитреленсе кайрӗ»,— тесе ҫырчӗ вӑл хӗлле пӗррехинче.

«Ĕç вăл ĕмĕрне те пĕтмест. Эс вилсен сан вырăнна тепĕр çын лармалăх та, вăл вилсен урăххине ĕмĕр тăршшĕпех ĕçлеме те çитет. Пурпĕрех пĕтмест. Килсе кур-ха пĕрре пĕр-ик кунлăха та пулин. Сухвие кăçал Сурăм пуххи тĕлĕнче вăрласа та каяççĕ пулĕ». Çапла çырнăччĕ амăшĕ хăйĕн юлашки эрнери çырăвĕнче.

Сурăм пуххиччен шăп пĕр эрне юлчĕ.

Акă ĕнтĕ Санька халĕ тăван улăхра ларать. Киле таврăнать. Килтех-ши унăн амăшĕ?

Сухви мĕнле-ши халĕ?

Санька аякра, Сурăм хĕрринче, кăшт çеç йăсăрланакан тусан ăшĕнчи сурăх кĕтĕвĕ еннелле пăхрĕ.

Çак вăхăтра Сурăм леш енчи ял кĕтĕвĕ патĕнчен виçĕ хутчен умлăн-хыçлăн пушăпа шартлаттарни илтĕнчĕ. Çыранăн ку енчи сурăх кĕтĕвĕ патĕнчен те, ăна хурав панă пек, пушă сасси шартлатрĕ. Çыран леш енчи кĕтӳç—те ача, те яш çын, те ватă çын — ывăç тупанне куçхарши тĕлне тытса Санька çинелле тинкерчĕ.

Кĕтмен пушă сасси Санькăн пур илĕм-тилĕм шухăшĕсене салатса ячĕ.

Санька темшĕн-çке шартах сиксе илчĕ те ура çине тăчĕ, вара, чăматанне йăтса, хуллен ял еннелле утрĕ.

3

Санька киле анкарти витĕр никама систермесĕрех пырса кĕчĕ.

Амăшĕ килхушшинче тĕк талкатчĕ. Вăл сайхалăх алăкĕ уçăлнине те илтмерĕ. Яри уçăлнă алăкран çил вăркăнса кĕрсе таканари тĕке вĕçтерсе çĕклесен тин, аллисемпе хăлаçланса илчĕ те сайхалăх еннелле пăха пачĕ...

— Уй!.. Санька тем... — терĕ вăл, тӳрех ывăлне хирĕç утса. — Мĕнле килме пĕлтĕнех, ачам...

Санька хăй астăвасса малтанхи хут амăшне ыталаса чуптурĕ. Амăшĕ ватăлсах кайнă. Вăл ĕнтĕ килте çеç кăштăртаткаласа çӳрет.

Йăмăкĕ килте çук — вăл улăха утă пуçтарма кайнă.

Амăшĕ Санькăна, çăмарта ăшаланиччен тесе, пысăк хурантан икĕ хут ăшăтнипе чĕмленсе-тĕнсех ларнă çĕрулмиллĕ шӳрпе антарса пачĕ. Çĕпре тăррине сăрăхтарса, пĕр курка сĕвĕрĕлсе кайнă, шăркаланнă сăра тултарчĕ. Сăринчен пыра тăкăскă ларчĕ.

Санька сĕтел çине тĕтĕмпе вĕтеленĕ ылттăн тĕслĕ пулă

çыххи кăларса хурсан, амăшĕ, хăйĕн чи юратнă çимĕçне курса, хĕпĕртесех кайрĕ.

— Ай-у-уй, ывăлăм... Епле илме пĕлтĕнех, — терĕ вăл, савăннипе хурланса.

Санька чунĕ те çемçелчĕ. Нумай та кирлĕ мар-çке амăшне савăнма. Çав ним мар япалах ăна савăнтарса хурлантарчĕ. «Эх, анне кăмăлĕ! Анчах ăна хуçма та нумай кирлĕ мар. Епле-ха хуçăн ăна?..»

* * *

Кăç еннелле, сулхăн ансан, Санька улăхсем тăрăх курса çаврăнчĕ. Вăл яла кĕнĕ чухне килĕренех картлам кĕвентеллĕ хĕрсем, хĕрарăмсем купăста-хăяр шăварма шыва аннине курчĕ. Килĕренех тутлă яшка шăршипе хутăшнă шĕвĕ тĕтĕм йăсăрланать. Кăçхи апат туса хăй çутнă хыççăн амăшĕ Санькăна хуллен çапла каларĕ:

— Урамалла тухса курмастăн-и? Вăйă вăхăчĕ халь... Сухви те тухать пулĕ...

Ывăлĕ мĕн те пулин каласса кĕтсе Хĕветли инке пĕр вăхăт чĕнмесĕр ĕçлерĕ. Кăвас çăрса пĕтерчĕ те сылтăм ал тунине, пӳрне хушшисене çĕçĕ тӳрчĕпе хырса чустаран тасатрĕ. Кăвас чĕрес анине хĕрлĕ кĕрмепе çыхрĕ.

— Сана качча илсе парас мар-и ăна? — терĕ вăл малалла, кăвас чĕресне кăмака çине кайса лартнă май. — Мĕнле хитре вăл. Алли-ури çаврăрса тунă пек... Ĕçчен... Çавна ту тессе кĕтсе тăмасть... Халиччен çынна пĕр урлă сăмах, пĕр сив сăмах каласа курман пулĕ... Вĕреннĕ çынна кайрăм тесе хăй те юратса, хисеплесе пурăнĕ...

Хĕветли инке самантран каллех сăмахне малалла тăсрĕ:

— Сана ыр тума ман çитет... Сăра тăватăп... Така пусатăп...

Саня нимĕн те чĕнмерĕ. Пӳртрен тухрĕ те амăшĕ ун валли чăлана сарса хунă вырăнĕ çине çывăрма кĕрсе выртрĕ.

Йăмăкĕ — Енюк — ун хыççăн ăшшăн кулкаласа пăхса юлчĕ.

Санька чылайччен чăлан маччи çинелле пăхса выртрĕ. Хĕç тимĕр хушăкĕнчен пĕчĕк ярăм çутă кĕрет. Хушăк, ун çине пăхсан-пăхсан, çап-çавра пулать, вăл пĕрре çутăлса, тепре тĕксĕмленсе килет — ун тĕлĕпе йывăç тăрри сулланать иккен, йывăç тăрри хушăран хушă хĕç тимĕре перĕнсе чакăртаттарать.

Кунĕпех утнипе ура тупанĕсем çурăлас пек тĕлкĕшсе пĕçереççĕ, тапхăр-тапхăр çеç лăш пулать.

Амăшĕн сăмахĕсем Санькăна вăтантараççĕ пулин те, вăл Сухви çинчен калаçа пуçласанах чĕрере тем ăшăскер ирĕлсе сарăлать. Куç умне сар хĕвел пăхнипех куçăхакан чечек пек ачаш хĕр сăн-пуçĕ, кĕлетки тухса тăрать. Вăл халĕ те куç умĕнчен кайма пĕлмест.

Саня, минтере çатăрласа тытса, куçне хупса выртрĕ. Чылайччен выртрĕ вăл çапла. Куç умне татах та уççăнрах тухса тăчĕ кăвакарчăн пĕсехи пек тăпăл-тăпăл кăкăрлă, йĕкĕр ывăça кĕмелле пилĕклĕ хĕр кĕлетки. Вăл халь нихçанхинчен те чиперленсе, ĕлккенленсе кайнă иккен. Çакна Саня паçăр улăха кайнă чухне асăрхарĕ. Хĕр аякран — тутăр хĕррипе вăрттăн Саня çине пăхкаласа — кĕтӳ хăваласа утатчĕ...

Саня улăхалла анчĕ. Улăхра ут кĕтĕвĕ çеç çӳрет. Саня Сурăм шывĕн хĕррипе утрĕ. Таçта тăрлинк-тăрлинк тутарса тăрна кăшкăрчĕ.

Ак каллех тăрна кăшкăрать. Саня халĕ те улăхрах иккен. Мĕн тума килнĕччĕ-ха вăл кунта? Тăхта-ха? Питĕ-питĕ кирлĕ ĕç тума килнĕччĕ. А-а! Ут тытма! Унăн пăвăр кĕсре тытса утланмалла. Авă вăл, кĕвĕн ут, çĕре çитиех зăрăм пурçăн çилхеллĕскер. Ма тарать-ха вăл? Аякран пынă чух чиперех тăрать-çке, авă вăл куçранах пăхать. Акă алла çеç тăсмалла. Шыва кĕрсе кайрĕ? Апла ун хыççăн шыва кĕмелле?. Сивĕ иккен шывĕ. Юрать-ха, тĕпĕ хытă, тарăнăшĕ те—пырать—пилĕкрен иртмерĕ. «Пах-пах! А-а, халĕ ĕнтĕ тараймăн, мăй айĕнчи антăрлăхне çеç сыхам». Ма лăпкă тăмасть-ха вăл? «Ну, ну чипер тăр!» У-у! Мĕн ку? Лаша тапса сикрĕ? Мĕнрен хăрарĕ-ха? Кĕтӳç? Вăл-çке пушăпа шартлаттарчĕ. Çавăнтан хăрарĕ ĕнтĕ. Тăхта-ха? Ăна чиперех тыттарчĕ-çке ут. Ав кĕтӳç ун çине утланса та ларчĕ. Кам вăл? Çамрăкскер пулас? Ав вăл каллех пушăпа сулать.

...Саня шарт сиксе вăранса кайрĕ. Ăна чăпăркка сасси вăратрĕ. Чăпăркка сасси хальхинче шартлатса мар — чанклатса илтĕнчĕ.

Саня йăмăкĕ сĕт витрипе чăнкăртатса ĕне сума тухрĕ иккен.

— И-и, ис-пăс, — илтĕнчĕ амăшĕн сасси. — Хуллентерех хупма юрамасть-и алăка? Пиччӳне çывăрма памастăн ĕнтĕ.

Саня арпашăннă çиттие туртса майларĕ те каллех чăмăртанса выртрĕ.

* * *

Йӑмӑкне Саня кӗпе якаттарчӗ, хӑй ботинкине ҫутатрӗ. Тумлансан, чылайччен ҫӳҫне турарӗ, вара ботинкисемпе чӑкӑртаттарса алӑкӑн-тӗпелӗн уткаласа ҫаврӑнчӗ те каллех тӗкӗр умӗнче чарӑнчӗ.

— Ҫарамасах каятӑн-и? Қаҫ енне сулхӑн пулӗ, ачам,— терӗ амӑшӗ, ывӑлне ытараймасӑр сӑнаса ларнӑ май.

Ывӑлӗ унӑн, ашшӗ пекех, яштак, тӑпӑл-тӑпӑл та кӗрнек кӗлеткеллӗ, сарлака хул-ҫурӑмлӑ. Куҫӗсем те ашшӗн пекех хура, пӑхнӑ чухне кӑшт хӗсӗнеҫҫӗ, анчах та вӗсем тата ӑслӑрах пек.

Шурӑ пурҫӑн кӗпе ӑна питӗ килӗшет: сӑн-пичӗ ҫутӑрах курӑнать, питри кашни шухӑш йӗрӗ палӑрнӑ пек.

— Леш енне те кӗрсе тух. Сухвисем патне, — терӗ амӑшӗ, ывӑлӗ ҫарамасах кайма пулса алӑкалла утнӑ чух.

— Қилте ҫук пуль халь вӗсен никам та. Мӗн тӑвас ман унта кӗрсе?

— Сухвийӗ килтехчӗ-ха паян. Ҫӗпре илсе килтӗм, — терӗ амӑшӗ, ҫав-ҫавах ывӑлӗнчен куҫ илмесӗр.—Эсӗ именчӗк темшӗн. Хула ҫыннисем хӑюллӑрах пулаканччӗ. Кӗр, калаҫ... Мӗнле пурӑнатӑр, те. Мӗн ӗҫлетӗр... Амӑшӗ те сана питӗ килӗштерет...

Саня алӑк патӗнчен каялла ҫаврӑнса кантӑк умне пырса тӑчӗ те чӗмсӗррӗн чӳречерен пӑхрӗ, унтан тепӗр чӳрече патне пырса тӑчӗ.

— Эпӗ Меркурие ярам-и санпа пӗрле? —терӗ амӑшӗ асӑрханууллӑн.

— Мӗн тума? — хӑвӑрт ыйтрӗ Саня.

— Иккӗн сӑмах тума авантарах, — терӗ амӑшӗ кӑмӑллӑн. — Пӗрин сӑмах пӗтсен тепри хушса хурать...

Саня хӑй ӑшӗнче кулса илчӗ те, амӑшӗн кӑмӑлне хуҫасран нимӗн те шарламасӑр, хӑвӑрт пӳртрен тухрӗ.

Хе́вел ӗнтӗ кӑнтӑрла хыҫнелле сулӑнать. Вӗри сывлӑшра пӳрт ҫийӗсемпе, юпасен ҫумӗпе, йывӑҫ тӑррисенче ӑшӑ шевли чӗлтӗртетсе тӑни курӑнать. Нӳрӗрех вырӑнсенче ҫул ҫинче шӑнасем нӑйӑлтатаҫҫӗ.

Саня хӑйсен тӗлӗнчи ҫавра пӗве хӗрринче чарӑнса тӑчӗ. Пӗви ӑшӑхланнӑ, хӑрах енӗпе, куҫ тӗкӗсем пек, калта калчи ӳссе ларнӑ. Сӗвек ҫыранта сарӑ супӑнь курӑкӗсем саркаланса ҫӗр ҫумне ҫыпҫӑннӑ.

Саня пӗве пуҫӗпе иртме хӑймасӑр пӗр ӑстрӑм ҫырма леш енчи шатрун ҫурт ҫинелле именчӗклӗн пӑха-пӑха илчӗ.

Мĕнле кĕрес-ха унта? Сухви патне килтĕм тес-и? Ним йӳтĕмсĕр кĕрсен, амăшĕ мĕн калĕ?

Сухви амăшĕ тĕшмĕшлĕрех, ĕлĕкхи йăла-йĕркесене çирĕп тытса пырать тенине Саня илтнĕ. Пĕр-пĕр халиччен вĕсем патне пыман çын ним сăлтавсăр пырсан, вăл леш кайсанах ун хыççăн тухса, «мĕн шутпа килтĕн — пуçнах пултăр» тесе, куркапа «хăна» кайнă еннелле шыв сапать имĕш. Юнкун йывăр кун тесе, çăкăр та пуçламасть, тет — пуçламан çăкăр килте тăнă çĕртех кивçен кайса илет. «Кăвас йӳçмест» тесе, уйăх çаврăнмасăр кăвас хумасть, сăра йӳçĕтме лартмасть. Малашне мĕнле çанталăк пулассине те уйăх хăçан çаврăнни тăрăх тĕп-тĕрĕс каласа парать-мĕн...

Халĕ Саня унта кайсан мĕн калĕ-ши ĕнтĕ вăл?

Тепĕр тесен, мĕнех вăл мĕн калани? Çĕнĕ самана çыннин ват карчăк мĕнле хак пани пирки пăшăрханмалла-и?

Саня аллинчи чул катăкне çилĕллĕн сулса çыран хĕррине печĕ. Вăл пăрахнă чул тĕлĕнчен çырантан пĕр шапа чăмрĕ, тăрă шыв тĕпĕнчен пăтранчăк йĕр çаврăнса çĕкленчĕ. Шапа тепĕр çĕртен шыв çине пуçне кăларчĕ те пăнк! пăмк! терĕ.

Саня, пĕве пуçĕнчен хăвăрт иртсе, хăюллăн шатрун çурт еннелле утрĕ...

* * *

...Саня вĕрлĕк алăка хурлăн кăшкăртса уçрĕ.

Крыльца картлашки çинче ларакан çаруран хĕр çӳç уçатчĕ. Вăл çĕрех перĕнсе тăракан йĕс тĕслĕ çăра çӳçĕн хăрах енчи сĕвемне сирсе, хăрах куçĕпе килкарти алăкĕ еннелле пăхса илчĕ те ура çине сиксе тăчĕ. Анчах чул çине такăнса кукленсе анчĕ. Вара кăшт уксахларах пахча алăкнелле вĕçтерчĕ. Сӳтсе сапаланă çӳçĕ айĕнче унăн çурăмĕ те, кĕлетки те курăнмарĕ. Хĕр хыçалта çыртăнса ларнă йӳле пилĕклĕ кĕске пӳс кĕпине хăвăрт туртса юсарĕ те, пахча алăкне шалтлаттарса, пахчара çухалчĕ. Çатан карта хушăкĕнче пĕр самант шап-шурă чĕркуççи кукрашкисем вĕлтĕртетсе тăчĕç.

Саня ăна çăвар уçса сывлăх сунма та ĕлкĕреймерĕ.

Вăл çӳлĕ картлашкапа хăпарчĕ те пăлтăра выльăх качка кĕрсе каясран алăка хăяккăн хунă пĕчĕк сак урлă каçрĕ. Уçă пăлтăр умĕнче пӳртре çын пур-и, çук-и тесе пĕр самант тытăнса тăчĕ; шалтан пĕчĕк ача сасси илтĕнсен, хăюллăнах урата урлă ярса пусрĕ.

— Ман килес, — терӗ вӑл, тӳрех малалла иртсе.

Сухви инкӗшӗ, чӗрҫинчи ачине сак ҫине лартса, килнӗ кӑнашӑн хыпкаланнӑ пекех тур кӗтессинчи ӑпӑр-тапӑра пуҫтара пуҫларӗ.

— Килех, — терӗ вӑл тӗпелелле утса; тепӗр самантран вӑл тӗпелтен мӑшкӑлтӑк шыв витрине йӑтса тухса кайрӗ.

— Ҫтаппанӗ ӑҫта кайрӗ ара? — тесе хӑварчӗ вӑл кайнӑ чух.

— Пускилте пуль, — илтӗнчӗ тӗпелтен. — Те тӑвар шывӗ сапнӑ унта ун валли...

Ку — Сухви амӑшӗ пулчӗ. Вӑл, кӑмака умӗнче чарӑнса, аллипе тем хыпашларӗ те, сак ҫинчи ача патне пырса, ӑна ҫамкинчен хӑрӑмпа сӗрсе ячӗ. Кӗпе тӳми пысӑкӑш хура ҫавра пӑнчӑ, Инди хӗрӗсен пек, икӗ куҫ хушши тӗлне ларчӗ.

— Ан куҫӑхтӑр-ха, — терӗ карчӑк, куна мӗн пирки тунине ӑнлантарса.

Кунта тӗшмӗшлӗх мар, халӑх медицинин темӗнле ӑслӑлӑхӗ, авалтанах юлнӑскер, пулнӑ пулас. Ют ҫын, ачан ҫамкинчи пӑнчӑ ҫинче чарӑнса, ӑна тӳрех куҫран пӑхса куҫӑхтарасран ҫав чӑнахах та сыхлать, тенине илткеленӗ Саня.

Часах, карӑнкаласа, куҫӗсене ыйхӑланӑ ача пек сӑтӑркаласа, пӗр вӑтӑралла пуснӑ сарӑ ҫӳҫлӗ, хӗрлӗ сӑнлӑ лутрарах ҫамрӑк кӗчӗ. Ку Сухви пиччӗшӗ.

— Хӑнасем пур-ҫке! — терӗ вӑл, Санькӑна ал тытса, унтан сӗтел умне пукан ҫине ларчӗ те ыйхӑллӑ сасӑпа арӑмне чӗнсе илчӗ. — Анукка! Ҫавӑнта юлчӗ-и кӑштах? Аш хыпрӗ ман.

Сӗтел ҫине сӑра витри, пӗр тулли пулштух тухса ларчӗ, вучахра «ятлаҫа-ятлаҫа», ҫатӑртатса-сурса йӑмра ҫатраки ҫуна пуҫларӗ.

Кӗҫех ҫӳҫне пуҫтарса ҫыхма ӗлкӗрнӗ Сухви, пӗр ҫӗклем тип шанкӑ йӑтса кӗчӗ те, Саня ҫине куҫ уҫса пӑхмасӑрах, именчӗклӗн пуҫне чиксе, хӑвӑрт тӗпеле иртрӗ. Чӑланта амӑшӗпе тем пӑшӑлтатса илнӗ хыҫҫӑн каллех пӳртрен чупса тухрӗ.

Кӑшт тӑрсан вӑл чӑлт шурӑ та йӗпеннӗ шур ҫеҫке пек витӗр курӑнакан кӗпепе, аркине икӗ рет кӑвак хӗрлӗ хӑю тыттарнӑ симӗс пурҫӑн саппунпа, шӑлан ҫеҫки тӗслӗ патис тутӑрпа кӗчӗ. Хыҫалта аллаппи сарлакӑш пилӗк хуҫламӗ айӗнчен тӑватӑ-пилӗк кӗпе хуҫӑкӗ ҫинҫе пилӗке тирпейлӗн ҫупӑрласа тӑрать. Кӗпе аркинче икӗ рет чӗнтӗр тата виҫӗ

мăшăр ансăррăн хуçлатса çĕленĕ йăртăк çума-çум тăсăлать.

Пылаклантарнă сăра часах пуç патне пычĕ. Çтаппан кăçал малтанхи аслати сасси анăçалла авăтса кайни çинчен, çавăнпа, вăл шутланă тăрăх, Микул кунĕ иртмесĕр çумăр пулмасси тĕрĕс пулни çинчен каларĕ. «Кăçал якуричченех ăшă анчĕ, чĕкеçсем килчĕç. Сурăм пуххи хыççăнхи кунсем сивĕрех пулаççĕ» терĕ.

Саня итлесе çеç ларчĕ; халăхăн çанталăк паллисене вăл пĕлмен.

Сухви кантăк умĕнче, хăнана хăяккăн ларса, те тĕрĕ тĕрлет, те сăмса тутри хĕрри пӳклет.

Вăл Саня килнĕренпе те çăвар уçмарĕ-ха. Саня унăн сассине те илтмерĕ. Тутисене çăт тытса ларакан хĕр Саня хăй çинелле пăхман чух хăвăрттăн ун еннелле куç ывăтаывăта илет. Саня, хĕре хирĕçех ларать пулин те, ун çинелле ăнсăртран пек çеç хăюсăррăн пуçне çĕклекелет.

Тутăр кĕтессисем хĕррипе Саньăна тăп ларакан лĕпĕш çунатти пек вăрăм куç тĕкĕсем курăнаççĕ. Вĕсем, Саня хĕр çине пăхсанах, такам кĕтмен çĕртен пырса перĕннĕ пек, канăçсăррăн та çине-çинех хăвăрттăн мăчлатма тытăнаççĕ.

Çтаппанпа Саня икшер черкке сыпнă тĕле алăк яриех уçăлчĕ те, пӳрте хашкине ернĕ Меркури, çинçешке те типшĕм, пĕр вăтăр пиллĕксенелле çывхарнă арçын кĕрсе тăчĕ. «Улакурак какай шăршине вуникĕ çухрăмран сиснĕ пек, Меркури те сăра-эрех шăршине таçтанах сисет» теççĕ ун пирки ялта. Меркури, черкке тĕлнех çакланнă пирки «хуняма савать иккен мана» текелесе, пурне те ал тытса тухрĕ те сĕтел пуçне ларчĕ. Çтаппан ăна çине-çинех темиçе черкке эрех тултарса пачĕ.

Çук сăмахранах калаçу тума ăста Меркури хăй калас сăмахне шутарса пыма кам та пулин çăвар уçасса çеç кĕтрĕ.

— Тем шăмшак сурать-ха паян... Те ыран-паян çумăр пуласса, — терĕ карчăк, ăна сăра курки тыттарнă май.

— Çумăрĕ-мĕнĕ, — терĕ Меркури. — Ватăлатăн пулĕ ĕнтĕ, кинеми. Туйи кĕскелсех пырать пуль. Хĕрӳсене качча парса та пĕтерейменĕ ак.

— Хĕрĕсем кайĕç-ха вĕсем. Шăтăклă шăрça çĕрте выртман.

— Выртĕç те, кинеми. Хĕрне хăвăнах качча памалла. Вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Акă каччă ларать. Мĕнрен начар? Тавай туй тăвар...

Меркури те шӳт тӑвать, те чӑнласах калать — ун сӑнпитӗнчен ку пачах палӑрмасть. Сухви Меркури сӑмаххисене илтсен хӑвӑрт пӳртрен тухса кайрӗ.

Санькӑна та ӑшӑ пулчӗ. Вӑл, уҫӑлма тесе, тулалла тухасшӑнччӗ ҫеҫ — ун ҫумне Меркури куҫса ларчӗ те ӑна мӑнкӑмӑллӑн ҫурӑмӗнчен ҫапса илчӗ.

— Ӗҫ тухать, — терӗ вӑл, унтан Саня хӑлхи патнех тем пӑшӑлтатса вӑрттӑн сӑмах калас пек пӗшкӗнчӗ те: — Ӗҫ тухать! — терӗ хыттӑн кӑшкӑрсах.

Саньӑна Сухви амӑшӗпе унӑн ывӑлӗ ,умӗнче аван мар пулса кайрӗ, Меркури мыскарисем чуна вӗчӗрхентерчӗҫ. Мӗн кирлӗ мар сӑмах лӗпӗртетет вӑл?... Вырӑнлӑ-юравлӑ пуплинччӗ. Саня шӑлне ҫыртрӗ те — хӗрелсе кайрӗ.

— Эпӗ кӑшт туртма тухса кӗрем-ха, — терӗ вӑл, ура ҫине тӑрса.

— Кунтах турт, ара, — терӗ Сухви амӑшӗ.

— Тухтӑр ӗнтӗ, — терӗ Меркури.—Ҫӑтса лар-ха кунта ун тӗтӗмне...

Саня хӑвӑрт пӳртрен тухрӗ.

4

Ҫенӗкре, пите уҫӑлтарса, тӳрех уҫӑ сывлӑш ҫапӑнчӗ.

Саня крыльца ҫине тухрӗ. Сухви крыльца картлашкин карлӑкӗ ҫине таянса тӑрать. Саня тухсан, вӑл, канӑҫсӑррӑн пӑркаланса, хӑй сисмесӗрех хӑрах урине ҫӗре тапса илчӗ.

Саня та чарӑнчӗ. Вӑл та нимрен сӑмах пуҫарма аптраса шӑпах тӑчӗ.

— Ҫайрӑн-и-мӗн?—терӗ хӗр, именчӗклӗн ун еннелле пӑхса илсе.

— Ҫаймалла та пулӗ...

— Нумайлӑха килтӗн-и? — каллех ыйтрӗ Сухви.

— Икӗ кунлӑха ҫеҫ. Ыран каймалла пуль, — терӗ Саня хуллен, унтан вӑл тахҫанхи тусӗпе калаҫнӑ пекех кӑмӑлшухӑшне уҫса парса калаҫма тытӑнчӗ: — Таҫханах килес килет — ниепле те хӑпса тухма ҫук хуларан. Унта халь сывлӑш пӑчӑ, тусан. Ялта ав, питӗ аван иккен. Пачах урӑх тӗнче. Ҫутҫанталӑкпа киленсе тӑранма ҫук. Пӗр кун пурӑнма — пӗр ӗмӗр...

Хӗрача картлашка ҫинчен чупса анчӗ те ,урамран килкартине кӗресшӗн нӑйкӑшса алӑка тӗрткелекен сысна ҫурине уҫса кӗртрӗ.

— Чие çырли çиес килет-и? — терĕ вăл именчĕклĕн, хăй пахча еннелле утнă май.

Вĕсем сайхалăх витĕр пăхчана тухрĕç. Улăм витнĕ лупас аркине йĕри-тавраллах çерçисем йăва туса тултарнă. Вĕсем йăвисене тĕкĕнесрен хăранипе ниçта кайса кĕреймесĕр чав-чавлатса пуç тавра вĕçрĕç.

Вăрăм хăмла шăччисен сулхăнĕнчи чие тĕммисене те хăмла пултăранкисем яваласа илнĕ. Унта кролик куçĕсем пек чие çырлисем хĕп-хĕрлĕ курăнаççĕ, вĕсем шалтан хĕрлĕ вутпа çутăлса тăнăн туйăнать, хĕвел ӳкнĕ тĕлте йăлтăртатать.

Сухви, асăрхануллăн пускаласа, чие тĕмми хушшине кĕрсе кайрĕ.

— Ку вăл макăра чие, — терĕ Сухви тĕмĕ ăшĕнчен.— Кур вĕсем куççуль тумламĕсем пек усăнса тăраççĕ...

Саня виçĕ-тăватă çулхи çамрăк улмуççи умĕнче чарăнчĕ.

Сухвирен инçех те мар чие кайăкĕ «чи-е», «чи-е» текелесе илчĕ. Сăмсана сулхăнри вĕлтĕренпе чĕрĕ хăмла шăрши кăтăкласа пырса кĕчĕ.

Сухви пĕр йĕкĕр ывăç чие татса тухрĕ.

— Кĕрсе тат, — терĕ вăл хăюсăррăн та ютшăнчăклăн.

Саня хĕр енне çаврăнчĕ те хăрах аллине хуллен çамрăк улмуççин пысăк улми патне тăсрĕ.

— Эс мана çакна çитер-ха? — терĕ вăл ыйтуллăн.

Сухви сасартăк шарт сикрĕ.

— Çук, çук!.. — терĕ вăл Саня патнелле ыткăнса. — Ан тив... Юрамасть...

Сухви каччăн аллине сирчĕ те ун çулне пӳлсе хучĕ.

— Мĕншĕн? — кăмăллăн кулса илчĕ Саня.

— Ку вăл ман вăрттăнлăх. Ав ват улмуççисенне тат,— хĕр пуçĕпе тепĕр пысăк улмуççи еннелле сулчĕ.

— Шел ĕнтĕ... Иккĕ çеç те, — Саня таса та йăрăмлăн-йăрăмлăн хĕрлĕ панулми çине ăшшăн пăхрĕ.

— Шел, — терĕ Сухви, унтан ывăçне малалла тăсрĕ.— Акă чие çи...

— Çук. Чие мар, ман çĕмĕрт çиес килет.

— Ав çĕмĕрт.

— Ку тутлă мар, — терĕ Саня пĕр сапакине тутанса пăхса. — Атя, тутли тĕлне илсе каям.

— Ăçта?

— Вăрмана... Унти питĕ тутлă... Шултра та мăнтăр...

Сухви каччă çине, куçĕсене чарса, шиклĕн пăхса илчĕ.

— Каяр-и? — Саня хĕре аллинчен туртрĕ.

— Уй, — терĕ хĕр, самантрах вĕçерĕнсе. — Мĕн питпе çын умне курăнас вара ман? Мĕн калĕç?

— Мĕнех-ха иккĕн вăрмана кайнăшăн? Çынсем каяççĕ-çке.

— Çын сиккине сиксе çитереймĕн...

— Ман пирки те тем калама пултараççĕ. Эпĕ хăрамастăп-çке.

Хĕр çапах пуçне чиксе тăчĕ.

— Хăвна манпа ан шай ту,—сăмах тавăрчĕ вăл.—Сан уру йĕрне пусса çитереймĕн ĕнтĕ. Хĕр çине кантăк витĕр уйăх пăхсан та ят сарăлать те... Унта чакаксем нумай...

Хĕр пĕр ăстрăм витĕр курăнакан симĕс шăрçа ярăмĕ пек йĕплĕхен çырли çупкăмĕсене суйлакаласа тăчĕ.

— Атя, — терĕ Саня, ăна каллех аллинчен туртса, вара хăй çĕрулми кассисем хушшипе малалла утрĕ.

— Унтан мар... Шăлаварна варалатăн, — терĕ Сухви. Вăл, каччă хыçĕнчен кăштах пăхса тăрсан, сукмак çине тухрĕ.

Вĕсем ним чĕнмесĕрех пахча карти урлă каçрĕç те йывăррăн кăштăртатакан симĕс шерепеллĕ, тĕл-тĕл çил хуçкаласа çатралатнă хăмăллă сĕлĕ ани урлă выртакан сукмакпа вăрман еннелле утрĕç. Сухви тек-текех ял еннелле пăха-пăха, хăра-хăра утрĕ, таçта васкарĕ.

Саня вара юриех хуллен те васкамасăр, хăй ăшĕнче шăппăн кулкаласа илсе, ним чĕнмесĕр утрĕ. Хир ирĕкĕ, уй анĕ, куç ытамĕнчи сенкер инçет ун кăмăлне çĕклентерчĕ.

Сурăм улăхĕ хĕрринчи парлакра кĕтӳ çӳрет. Таçта пĕччен çава вăшкăнать. Хăмăл ăшĕнче уяр шăрчăкĕсем чăрăлтатаççĕ. Сĕлĕ ăшĕнче тĕл-тĕл уй пиçенĕн сухала кăпăкламалли сĕркĕч пек, хĕрлĕ авăрлă, шурă çемçе мамăклă пуçĕсем сулланаççĕ, хушшăн-хушшăн ана çийĕн ир пулнă хурхухăн, пиçенĕн кĕлт çиппи пек мамăкĕсем вĕçĕ-вĕçе иртеççĕ. Вăрман хĕрринчи телефон юпи тăрринче пĕр хăлат уй хуралçи пек тавралăха сăнаса ларать. Пĕтĕм çак тавралăх çине хĕвелĕн ылттăн ярăмлă пайăркисем тăкăннă.

Сурăм леш енчи улăх çине пĕр лаптăк тĕксĕм мĕлке саркăмĕ ӳкнĕ те пĕчĕк пĕлĕт куçнă май ерипен кунталла шăвать.

Сухви вăрман хĕррине çитсен куршанак тĕми патĕнче чарăнса тăчĕ.

— Малалла каймастăп эпĕ, — терĕ вăл.

Санька хаваслăн ахăлтатса кулса ячĕ:

— Мĕншĕн?

— Çитет кун чухлĕ килсе...

Хĕр куршанаксене тата-тата чăмăрта пуçларĕ. Санька йытă çĕмĕрчĕ умĕнче чарăнса тăчĕ. Йытă çĕмĕрт йывăççин хăшпĕр çĕмĕрчĕсем пиçсе хуралнă, хăшĕсем пиçме çеç тытăнса хĕрелнĕ, теприсем вара пиçме та тытăнман: сип-симĕс те, сулхăнараххисем—шурă. Пĕтĕм йывăçĕ вара пĕр турат çинчех тăватă тĕслĕ çĕмĕрт ларнипе — хĕрлĕ, симĕс, хура, шурă шăрçасем çакса тултарнă пек курăнать.

Ăвăссен сайра та хытă çулçисем шелтĕртетеççĕ. Пĕчĕк юман тураттисем çинче шатрашкаллă калпак тăхăннă пӳнеслӳ пек пĕчĕк йĕкелсем пуçхĕрлĕ çакăннă.

Вăрман ирĕксĕрех хăй ытамне астарать...

Сухви те ирĕксĕрех тутăрне ĕнсе хыçнелле сирсе антарчĕ. Аллинчи кушанак чăмăрккине йăваланă май, вăрманăн кăчăк туртакан илĕртӳллĕ илемлĕхне парăнса, пуçне шухăшлăн çĕклесе тытрĕ те икĕ йывăç хушшипе курăнакан çамрăк хăртне çумĕнчи пĕчĕк уçланкалла пăхрĕ. Унта Паттиер ĕшнин хăрах сĕвеклĕхĕнче, выляса ларакан пĕчĕк ачасен кăтра пуçĕсем пек, хăлха çакки курăкĕсем чӳхенкелесе лараççĕ. Шалта вĕт кайăксем савăшаççĕ.

Санька çав-çавах хĕре тепĕр хут чĕнме хăймарĕ.

Ун умĕнче пĕр вăхăт таçтан вĕçсе килнĕ вĕтĕ-вĕтĕ ӳпре тĕрки çаврăнса, пĕтĕрĕнсе, пăтранса тăчĕ, пысăкланчĕ-пĕчĕкленчĕ, саланчĕ-чăмăртанчĕ, пĕр евĕрлĕн нăйăлтатрĕ. Тепĕр самантран çил касси килсе ӳпресене вĕрсе салатрĕ, таçта ял еннелле вĕçтерсе кайрĕ.

— Кур-ха, мĕнешкел илем!.. Шăрçа çакнă пек!..—йытă çĕмĕрчĕ çине кăтартрĕ Саня.

Сухви сасартăк аллисене саркаларĕ те ансăр сукмакпа чупсах уçланкалла анса кайрĕ.

Тепĕр самантран Санька ăна уçланкă хĕррипе пĕшкĕне-пĕшкĕне çырла пуçтарнине курчĕ.

Хурăн çырлисем, çĕр çырлисем уçланкă варринче мар — йывăççен сулхăнĕнче ӳссе ларнă. Вĕсем темшĕн Санькăран пытанаççĕ е Санька вĕсене хăй шырама пĕлмест...

— Ак манăнне ил. — Хĕр хăрах ывăçне Саня еннелле тăсрĕ. Сухвин пичĕ малтанхинчен хĕрлĕрех. Тутăрĕ халь унăн пионер галстукĕ пек мăй çинче çакăнса тăрать.

— Сурăм пуххиччен те пурăнмастăн эппин? — сасартăк ыйтрĕ хĕр.

— Ун чухне, тен, килетĕп те.

Санька чĕринче — темĕнле виçесĕр хаваслăх еккипе хутăш — чĕлхе-çавара çыхакан кансĕрлĕх, айванла имен̆, хĕре тӳррĕнех куç хăйса пăхма чараканскер, хускалчĕ.

Вăл тек-текех енчен енне пăхкаларĕ.

— Сана кăçал Сурăм пуххинче вăрласа каяççĕ тет-и? — терĕ Санька сарăмсăррăн, хĕр çинелле пуçне çĕклесе.

— Кам калать?.. — хĕр ăшшăн йăл кулчĕ.

— Ялта калаçаççĕ...

Сухви, эреветлĕн кулса ярса, аллинчи куршанак чăмăрккине Саня çинелле вăркăнтарчĕ. Куршанак чăмăркки, çӳхе кĕпи витĕр кăштах ыраттарса, сулахай кăкăр çине çакăнса ларчĕ. Сухви тата янравлăрах кулса ячĕ, вара çӳлĕ йывăçсем хушшипе каякан сукмак çине чупса кĕчĕ.

Санька ун хыççăн утрĕ.

Сухви хăйĕн ĕлккен уттипе вăйă картинчи пек кăшт ярăнарах утать. Вĕçне симĕс хăю янă вăрăм çивĕт тунисем çурăм хыçĕнче çапăнкаласа сулланаççĕ. Унăн кăпăшка çӳçлĕ пуçĕ çинче çулçă мĕлкисем вĕлтĕртетеççĕ. Çӳлĕ йывăçсем айĕнчи чĕрĕ сулхăна вăхăтăн-вăхăтăн чĕпĕтсе пĕçертекен вĕри сывлăш капламĕ килсе кĕрет.

Санька сукмак хĕрринчен шурă пĕчĕк шăрçа пек çеçкеллĕ чечек туни татса илчĕ. Сăмсана чапăр шăршă çапрĕ.

— Лантăш мар-и çак? — терĕ вăл, Сухви хыçĕнчен пăхса.

Сухви каялла çаврăнса пăхрĕ те малаллах утрĕ.

— Камшăн мĕн, — терĕ хĕр. — Саншăн тутлă шăршăллă лантăш. Эпир ăна ниш куркăĕ тетпĕр. Хĕне кайнă çынна сиплĕ вăл.

Çӳлĕ йывăç сулхăнĕнчен тухсанах вĕсене ăшă сывлăш юхăмĕ çавăрса илчĕ. Кунта пĕр пысăк талккăш çич-сакăр çул каялла каснă вăрман халĕ çамрăк юмансемпе, шĕшкĕсемпе, улмуççи-çĕмĕртсемпе ӳссе ларнă. Ку вырăнтан çак вар-çырсемпе касăлса пĕтнĕ вĕтлĕх хунав вăрман инçете те питĕ илемлĕн курăнать. Çĕмĕрт кунта çав тери нумай. Йывăççисем пурте çамрăк, тăвата-пилĕк çулхискерсем.

Çӳлĕ йывăççенчен иртсенех Сухви пĕчĕк лутра çĕмĕрт кутне чупса кайрĕ. Санька ун çумне пырсан, вăл тепĕр çĕмĕрт патне кайса тăчĕ. Çĕмĕрчĕсем кунта, чăнах та, шултрарах, шывакрах.

— Сана авланма килнĕ теççĕ-çке, — терĕ Сухви сасар-

тăк çĕмĕрт хыçĕнчен, паçăр пуçланă калаçăва халĕ тин малалла тăснă пек. — Ху ыран каясшăн...

— Қам калать?

— Ял çинче калаçаççĕ...

Сухви Санькăна хăрах куç кĕтессипе пăхса илчĕ.

Санька каçăхса кайсах кула пуçларĕ. Хĕр ун çине пĕр самант кӳренчĕклĕн пăхса тăчĕ, унтан мăнкăмăллăн утса йывăç тĕммисем хушшинче çухалчĕ.

Санька тепĕр самантран ун хыççăн кĕрсен — Сухвие тупаймарĕ.

— Сухви!.. — чĕнчĕ вăл.

Хирĕç чĕв те пулмарĕ. Саня çулçă чăштăртатнине те пулин илтес тесе пăшт пулса тăчĕ. Çĕрелле усăннă туратсем айĕпе пĕшкĕнсе пăхрĕ — çук...

Инçех мар лутра йывăçсем хушшинче ĕне мăйĕнчи хăнкăрма сасси — е пĕр тикĕссĕн, е канăçсăррăн, е сасартăк татăлса—хыттăн хăнкăртатни илтĕнет. Çӳлте çунаттисене планер пек ним сулкаламасăр пĕр хĕрен хăнчăр-р! хăнчăр-р-р! текелесе ярăнса çаврăнать. Шăрăхпа шаннă шĕшкĕ çулçисем лăстăртатаççĕ. Ĕнтĕркеттерекен шăрăх, пуçа çаврăнса яракан уçă сывлăш чуна илĕхтерсе ярать. Пĕтĕм тĕнче, пĕтĕм пурнăç, пĕтĕм çĕр çинчи илем, пĕтĕм телей çакă пек, çакăнта аташса кайса, тĕнче илемлĕхĕпе, телейпе ӳсĕрĕлсе çӳрес килет.

Çутамка çĕмĕртсем те, хĕвел хĕртсе пăхнипе йывăçран сăмала пек шăранса тухса, тумламăн-тумламăн çакăннă пек туйăнать. Қашни çĕмĕрт, хĕвеле ӳкерсе, пĕчĕк хĕвел пек хĕм сапса йăлтăртатать.

Хĕвел пайăркисем çулçăсем хушшипе чĕлкĕмленсе кĕреççĕ те çипленсе-хĕлĕхленсе чӳхенеççĕ, пĕтĕм йывăçа яваланса каркаланаççĕ. Çил вĕрсе килет те, йывăç тăррисем хумханнă май вĕсем хушшине карăннă ахаль чух çивĕч куçа та курăнман хурçă хĕлĕх пек эрешмен çипписем, мĕлке çинчен самантлăха тухса, йăлтăртатаççĕ, вара каллех пытанаççĕ.

Такам ятран чĕнсе кăшкăрчĕ.

Саня, пĕчĕк çырма урлă каççан, пысăк çĕмĕрт кутĕнче ăшăрханипе хĕрелсех кайнă Сухви тăнине курчĕ те ун патнелле утрĕ.

— Акă пĕрлĕхен çи-ха, Сухви...

Хĕр ним сăмахсăрах каччă аллинчен темиçе сапака пĕрлĕхен илчĕ. Вĕсем пĕр хушă пĕрне-пĕри ним сăмах чĕн-

месĕрех тăчĕç. Вĕри хулпа хул перĕнчĕ. Йăпăрка пурçăн йывăррăн йăшăртатса илчĕ.

— Ывăнмарăн-и?..

Хĕр аллинчи пĕрлĕхенĕсене суйлакалана май пуçне сулларĕ.

Пĕр-икĕ самант каллех шăпах тăчĕç. Унтан сисмесĕрех алăсем пĕрлешрĕç. Тепĕр самантран каччă хĕре хăй çумне туртрĕ.

— Кай, ан тив, — терĕ Сухви шăппăн. Хăй вырăнтан та хускалмарĕ, çав-çавах пĕрлĕхен пĕрчисене хускаткаласа, пуçне чиксе тăчĕ.

Таçта улаппа кăвăльтетрĕ. Пĕр пĕчĕк кайăк тилĕр-р тесе вĕçсе иртрĕ.

Умри йывăç тĕмисем айĕнче шур чечеклĕ кĕпçесем, типсе саралнă, хур шăлĕ пек шăллă-шăллă çулçăллă сухăр вĕлтренсем сулланса лараççĕ. Аялта кутăн шăнкрав пек кăвак чечек, куршанак пуçлă туна, симĕс хутаç ăшне вырнаçнă măкăнь пуçĕ пек курăксем чăлханса ӳкнĕ. Çĕр çумне типсе хăмăрланнă имшеркке тăхран пуçĕсем лăпчăннă.

Пĕр кана çапах иртрĕ.

Каллех кайăксем юрларĕç... Тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксем...

Сылтăмри шĕшкĕлĕхрен икĕ сасă — те пĕр-пĕрне чĕнсе, те такамран хăраса — канăçсăррăн вĕт-вĕт-вĕт тесе илчĕç. Сулахайран юманпăран кайăк теплерен пĕрре çирĕппĕн шатă-ăрт! тă-ăр-рт! тутарчĕ. Çывăхарах тепри вăйлă иксӳ тапăннă çын пек çинçе сасăпа и-июк! и-июк! теме тытăнчĕ.

Каччăпа хĕр çаплах ним чĕнмесĕр çумма-çуммăн тăчĕç.

5

Хĕвел ĕнтĕ каçа сулăнчĕ. Çур тӳпе — хĕвел енчи—çутă сенкер тĕслĕ, тепĕр çурри — ешĕл шенкер чулĕ тĕслĕ курăна пуçларĕç.

— Сухви, — терĕ Саня сасартăк. — Эпĕ сана Сурăм пуххинче вăрлас пулсан... Мĕн калăттăн-ши?..

Саня ку сăмах çинче хăй те хĕрелсе, именсе кайрĕ.

Хĕр, карт туртăнса, Саня çумĕнчен пăрăнчĕ.

— Эсĕ шӳт тăватăн,—терĕ вăл, кăшт кайсан. — Сан хуларах темĕн чухлĕ пулĕ.

— Сухви!.. Ĕненетĕн-и?.. Çук.

— Ан тун, — терĕ хĕр. Вăл Саня енне кӳренчĕклĕн çурăмĕпе çавранса тăчĕ.

— Сухви!..

— Эсӗ кулатӑн манран. Эсӗ пысӑк ҫын. Ман хам пек тепӗр ухмаха ҫеҫ тупмалла...

— Сухви, мӗн калаҫатӑн эсӗ?

— Ку ним те мар тесшӗн-и? Ҫук. Ан пупле кун пирки: пӗлетӗп. Эпӗ тата качча кайма шутламан та. Каймастӑп та нихҫан та...

— Нихҫан та-и?

Хӗр каллех пуҫне чиксе тӑчӗ, таҫта ҫӗрелле пӑхрӗ.

— Ну, халех мар. Халь ман ҫи-пуҫ ҫук.

— Хӑҫан пулать вӑл? Сухви! Ҫире пур, урӑх мӗн кирлӗ сана? Пурӑнсан пулать, пӗрле тума ҫӑмӑлтарах та пулӗ. Сухви, кала, пыратӑн-и?

— Кур! Чӗппи те пур! — терӗ Сухви сасартӑк, вутӑ шаршанӗ хушшине улаххӑн йӑва ҫавӑрнӑ пилеш кайӑкӗн йӑви умӗнче чарӑнса. — Шел мӗскӗне...

Саня нимӗн те чӗнмерӗ, таҫта аяккалла пӑхса тӑчӗ.

Сухви кайӑк чӗппипе тем аппаланчӗ. Унтан сӗрӗмленекен вӑрман тӑрринелле хӗвеле хирӗҫ ал айӗн пӑхрӗ те шартах сикрӗ.

— Ай!.. Ман киле каймалла!

Хӗр сукмак ҫинелле вӗҫтерчӗ.

Пӗчӗк тӑвайккинчен хӑпарнӑ чухне Саня ӑна алран тытрӗ. Хӗр турткалашмарӗ. Вӗсем каллех паҫӑр килнӗ сӗлӗ ани урлӑ выртакан сукмакпа утрӗҫ. Хӗвел анса та ларчӗ. Шӑмшака кӑштах каҫхи сулхӑн ҫӳҫентерчӗ. Улӑхра таҫта текерлӗк кӑвиклетрӗ. Сурӑм шывӗ ҫинчен ҫӑра тӗтре йӑсӑрланса хӑпарчӗ.

Вӗсем паҫӑрхи ҫулпах Сухвисен тӗкме карти урлӑ каҫса пахчана кӗчӗҫ. Кӑтра ҫӳҫлӗ кишӗр ани ҫумӗпе иртрӗҫ.

Улма пахчине ҫитсен, Сухви сасартӑк Саньӑна ҫаннинчен тытса чарчӗ:

— Тӑхта-ха кӑштах...

Хӗр паҫӑр Саня чарӑннӑ ҫамрӑк улмуҫҫи патне чупса кайрӗ...

Сухви пӗр самант тытӑнса тӑчӗ. Пӗрре хурлӑн улмуҫҫин икӗ кӗрен улми ҫине, унтан каллех, шиклӗн куҫхаршисене пӗрсе, Саня ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ, юлашкинчен сӑнпитне кӑмӑллӑн ҫемҫетрӗ те татӑклӑнах улмуҫҫи енне ҫаврӑнса тӑчӗ.

Саня хӗрӗн аллисем епле чӗтренсе улма патнелле ҫывхарнине, улмисем епле чуна ыраттармалла ҫатлатса татӑлнине курмарӗ-илтмерӗ.

Хĕр пăчăр хĕрлĕ пысăк панулмине ним сăмахсăрах Саня еннелле тăсрĕ.

— Атя ларар, — терĕ хĕр.

Вĕсем çамрăк ăвăссем хушшинчи уçă вучах умне, çĕре ӳпĕнтерсе хунă кĕпе вăлашки çине, ларчĕç.

Саня шывакрах сĕтеклĕ панулмие ним чĕнмесĕрех çирĕ, хĕр хăйĕнне çав-çавах аллинче тытса ларчĕ. Кӳршĕ ял урамĕнчи репродуктортан каскăн çил тĕл-тĕл тулашакан, тĕл-тĕл тем ирĕлнĕ пек шăранса тăракан çемĕллĕ темĕнле кĕвве вĕçтерсе килсен, Саня сасартăках сывлама чарăнса тăнла пуçларĕ.

— Çав кĕвве кам çырнă, пĕлетĕн-и? — ыйтрĕ вăл самантран.

Хĕр сасартăк чĕтренсе çӳçенчĕ те каччă çине ăнланма çук асаплăн, тарăхса куç ывăтса илчĕ.

Саня куна асăрхамарĕ. Вăл панулмирен темĕнле майпа хăй аллинех тăрса юлнă йăпăлка вăрра хыпаласа ларчĕ, ăна вăл икĕ пӳрне вĕçĕпе хĕстерсе тытрĕ те — пусрĕ, панулми вăрри, сирпĕнсе кайса, хĕре питĕнченех тиврĕ. Саня хаваслăн кулса ячĕ.

— Сухви! — терĕ вăл ăна аллинчен тытса. — Сухви... Пыратăн-и?.. Ķала татăклă!..

Сухви туртăнчĕ те сиксе тăчĕ. Сулахай аллине пуç урлă сулса ячĕ. Аслăк хыçĕнчи çӳлĕ сухăр вĕлтĕрен тĕми ăшĕнче чашлатни илтĕнчĕ — ку панулми пулчĕ...

Сухви сасартăк вырăнтан хускалчĕ те ăвăслăх айĕнчен чупса тухрĕ. Тепĕр самантран анкарти енчи çатан çатăртатрĕ, тата тепĕртакран çенĕк алăкĕ йывăррăн хĕсĕнсе хупăнни илтĕнчĕ.

Саня ним ăнланмасăр аптраса тăрса юлчĕ. Вăл Сухвисен килкарти витĕр урама тухрĕ. Сухвисен çутă курăнмарĕ. Тӳпере пĕр кĕтесре çеç çăлтăрсем чĕлтĕртетеççĕ. Таçтан хуп-хура çумăр пĕлĕчĕсем тапса тухрĕç.

* * *

Ķăвак çутăлла çанталăк чиперехчĕ. Ир енне урам еннелли кантăк умĕнчи çамрăк хурăн шăнăр туртнă пек шарт сиксе ыйхăран вăранчĕ те, шăмшакне çемçетнĕ пек, авкаланса, карăнса илчĕ, вара хуллен шепĕлтетме тытăнчĕ.

Самантран вара Саня пӳрт çине витнĕ хĕç тимĕр çинче ташлакан тумламсен сассипе вăранса кайрĕ.

Çумăр пĕрре чарăннă пек пулчĕ, унтан каллех капланса килчĕ.

Вара хĕвел мĕн каç енне сулăниччен юнтармăш ача пек кун тăчĕ.

Саня кайма хатĕрленсенех малтан пачах курăнман, таçта пытанса тăнă катрамлă пĕлĕтсем питĕ аялтан вирхĕнсе çитеççĕ. Саня каялла кĕрсенех çумăр витĕрех хĕвел пăхса кулса ярать. Вара, чăркăш çутçанталăк кăмăлне юрама тăрăшнă пек, Малтиварта кайăксем те юрла пуçлаççĕ. Çулсем те типшĕрсе кушăхаççĕ, курăксем те типеççĕ...

Саня чăматан йăтса уй хапхине çитсенех каллех çумăр тăкса ярать. Каллех çулсем йăпăлкаланса каяççĕ, сăрхăнма ĕлкĕрнĕ лупашкасем çĕнĕрен тулса лараççĕ. Каллех ял кĕтĕвĕ, уя тухма çеç ĕлкĕрнĕскер, шăнса хутланнă сысна çурисем çĕхĕрнипе, амăшĕсене çухатнă путексем, путекĕсене çухатнă амăшĕсем макăрнипе янăраса яла кĕрсе каять.

— Паян каяс шутпах кун кунларăн ĕнтĕ, — терĕ амăшĕ те юлашкинчен. — Ахалех кайма пуçтарăнтăн. Çак пылчăклă çул çинче паян эсĕ пурпĕрех пĕр машина та тĕл пулаймастăн... Элле, ĕçне туса та пăрахмаллаччĕ.

Саня кантăк витĕр пӳртçи хĕрринчен, пĕрре сӳтĕлсе, тепре явăнса, такам çӳлтен пăлхатса-вылятса тăнă пек сулланса юхакан шыв кантри çине пăхса тăчĕ. Амăшĕ «ĕçне туса пăрахмаллаччĕ» тени мĕне пĕлтернине вăл тӳрех ăнланчĕ: Сухви пирки калать...

...Саня çĕркаç киле çитсенех Меркурие пырса çапăнчĕ.

— Амăшĕсем килĕшеççĕ, — терĕ вăл тӳрех.

— Кам? Мĕн килĕшет? — ăнланаймарĕ Саня.

— Ара, Сухвисен... Паянах çураçма каймалла... Халĕ кайни — хĕр пăхнă шутлă пулчĕ...

Саня пуçран çапнă пекех анраса кайрĕ.

— Эсĕ апла евчĕ пулса пынă?..

Саня тӳрех пӳрте вирхĕнсе кĕчĕ.

— Анне! — кăшкăрса ячĕ вăл тӳрех, унтан амăшĕ хăраса кайнине курса, сасартăк шăпланчĕ. — Анне, — терĕ вăл лăпкăнрах.—Мĕн пулать ку?.. Эсĕ, анне, чăнласахçке... Мĕне кирлĕ пулчĕ-ха Меркурие ман хыççăн ярса хĕр калаçтарма? Эпĕ хам пултараймастăм-и? Хĕрĕпе килĕшсе сăмах татман-çке. Мĕнле-ха тӳрех?

Саня урăх ним калама та пĕлмерĕ. Амăшĕ чĕнмерĕ, куçне çеç тутăр кĕтессипе шăлса илчĕ. Паян тин ак хуллен сăмах пуçларĕ:

— Хăвна лайăх пултăр тесе турăм та çав. Пывăра илсе

кăмăла хуçмалли ним те çукчĕ унта. Йăли çапла ĕнтĕ ялта чăвашсен пирĕн. Эсĕ кунта та хулари пек шутлатăн пулĕ. Вĕреннĕ çынсем çапла ĕнтĕ вĕсем. Ку йăла-йĕркесенче турра, тĕшмĕше ĕненни, асамлă вăйсене ыр туни пĕрре те çук, ывăлăм. Килйыш çирĕп пултăр тесе çапла тăваççĕ ăна. Йĕрке туни пулать вăл. Халăх йĕркине туни. Ĕмĕртен çапла пырать. Пирĕн анчах мар — пĕтĕм тĕнчипех çапла. Антив, кăшт урăхларах пулсан та. Чăваш хĕрне чăваш йĕркипе çураçса туй тунăшăн кам мĕн калать сана? Начар-им пирĕн йĕрке?. Пĕтĕм ял туя килет. Пĕтĕм ял кăна мар, пĕтĕм таврари ялсенчен туй арăмсем, туй ачисем, туй куракансем пухăнаççĕ. Халăх пухăнать. Çамрăк мăшăр халăх умĕнче пысăк парăмра тăтăр, уйрăлас-тăвассине пуçа ан илтĕр тесе çапла тăваççĕ ăна, ачам. Уйрăлса пăхха — çав халăх умне кайран пите кĕççе çĕлемесĕр епле курăнан? Пур ав хăшпĕрисем ирĕкре авланаççĕ. Никам та курман-илтмен — пăхăсăн: арлă-арăмлă; тепĕр кунне — никам та курман илтмен, уйрăлнă хайхисем! Сухвие ăна амăшĕ те халăх йĕркисĕр килтен кăларса ямасть. Сухви хăй те куншăн пĕрре те аванмарланса, именсе тăмасть. Ашшĕ-амăшĕ ирĕкĕнчен тухмасть вăл. Хĕрне сахал пĕлетĕп тесе пăшăрханатăн-и? Сирĕн вĕреннĕ çынсен — хуларисен — хĕрпе темиçе çул калаçса, туслă пулмалла та, пĕрпĕрне йăпатса, тарăхтарса, çĕтĕлтерсе пăхмалла та — тин авланмалла. Пурин те ун пек пулмасть-çке вăл. Сана ют çынна вăйпа илсе панă пек туйăнать пулĕ? Хĕрне хуу килĕштеретĕн-çке. Хĕрĕ те килĕштерет. Хĕрне пĕлетĕн. Эпир тата лайăхрах пĕлетпĕр. Ачаранах пĕлетпĕр. Пирĕн пек пĕчĕк ялта кашнин кăмăл-шухăшне, ăсне-пуçне ал çинчи пек куратăн. Ун пек хĕр кашни утăмрах тĕл пулмасть, ачам. Сайра ун пекки...

— Çапах та евчĕсемех кирлĕ марччĕ пуль, эпир хамăрах калаçса татăлаттăмăр.

Саня майĕпен амăшĕ енне çаврăнсах пычĕ.

— Ай-уй, ачам, — терĕ амăшĕ. — Евчĕ вăл ашшĕ-амăшне çырлахтарма кирлĕ. Хĕрпе каччă хушшинчи хирĕçĕве татма. Хăвăр эсир те виçĕ çултан хирĕçсе вĕçне тухса пĕтетĕр, те килĕшейместĕр те. Евчĕ пĕр кун хушшинчех татса парать, ачам. Халăх йĕркине тумаллах пулĕ. Хĕрĕ ялти йăла-йĕркене курса, хисеплесе ӳснĕ. Куншăн вăл кӳренмест. Кĕçĕр кайса çураçса пăрахмалла çеç...

Саня чĕнмерĕ.

— Ну, мĕнле, Саня? Каяр пулĕ?

Саня ура ҫине тăрса килхушшинелле пăхрĕ.

Килхушшинчи тулли лупашкасем ҫинче пĕчĕк тумламсем часах сӳнекен шапа пуҫĕнчи ҫурхах пек хăмпăсем сиктере-сиктере кăларса ташларĕҫ. Пĕлĕт таткаланса саланчĕ. Ҫӳлте-ҫӳлте чĕкеҫсем ярăнса вĕҫме пуҫларĕҫ. Аслăк айĕнчен чĕпсем, кĕперленсе тухса, йĕпе курăк ҫиййĕн асăрхануллăн утрĕҫ. Уҫă кантăк умĕнченех пĕр пыл хурчĕ нăрласа иртрĕ...

Пур енчен те уяртса килчĕ.

6

Хĕвел анса тĕттĕмленсен, Сухвисем патне тăваттăн — Саня, Саня амăшĕ, Саня юлташĕ тата Меркури — пырса кĕчĕҫ.

Сухвисен ĕнтĕ ҫывăрма та выртнă.

— Кĕртеҫҫĕ-и, ҫук-и? — терĕ Меркури, тĕттĕмре алăк сули ҫинче чарăнса.

Сухви амăшĕ хуллен кăштăртатса тăчĕ.

— Ăҫта каякан халăх ку? — терĕ вăл, чăннипех те тĕлĕнсе, Меркури шăрпăк ҫутса янă хыҫҫăн.

Вăл хĕрлĕ ултăллă та — пĕлмен алăпа ҫĕленĕрен-ши — икĕ шĕвĕр хакне айккисене мар, мала-хыҫа хушнă йĕтĕн кĕпепе. Хул ҫине «кайăк сиккипе» тĕрленĕ.

— Эс хăй ҫут-ха часрах... Курăн унта, — хушрĕ Меркури. — Мĕн эсир, чăхсем пек, хĕвел анмасăрах ҫывăрма хăпарса кайнă?

— Краҫҫынĕ те ҫук пуль-ха. Кăҫал ҫулла ҫутман та. Труби те таҫта.

Карчăк тур кĕтессинче чакаланчĕ, кайран таҫтан краҫҫын савăчĕ йăтса тухрĕ.

— Эпир хамăрах пултараканччĕ-ха, — терĕ Меркури. Вăл лампа ăшне краҫҫын ячĕ, кĕсъерен чикарка чĕркемелли хаҫат кăларса лӳчĕркерĕ те, вăрăммăн хашлата-хашлата вĕрсе, труба тасатма тапратрĕ.

Хăнасем тăрăхла сак ҫине ларса тухрĕҫ.

— Ну, кинеми, йышăн хăнасене, — пуҫларĕ Меркури, трубана майласа лартнă май.

— Ара, чĕннĕ хăна ҫукчĕ те — тĕшмĕртеймерĕм-ха нимĕн те, — терĕ карчăк.

Карчăк, ҫутăлса кайнă пӳлĕмре сĕтел ҫине тухса ларнă ҫавра ҫăкăрпа чăкăта тата чӳхенсе йăлтăртатакан четвĕрт кĕленчине курах кайсан, урай варринче тăпах чарăнса

тăчĕ те, чакса-чакса пырса, кăмака сакки çине кайса ларчĕ.

— Ара, Сухвийĕ ăçтаччĕ-ши? — илтĕнчĕ тĕпелтен Сухви инкĕшĕн сасси.

— Хĕрсемпе таçта тухса кайрĕç вĕсем, — терĕ Сухви пиччĕшĕ, пăлтăртан кĕрсе.

Меркури çак хушăра тек-текех хĕрпе каччă пирки сăмах вылятрĕ. Пуринчен ытла Саньăна ырласа калаçрĕ.

— Қаччи маттур, — терĕ вăл. — Ăсĕ пур, пуçĕ пур. Хĕре шурă пӳртре усрĕ. Пĕр сăмахпа каласан, хăвăрах пĕлетĕр. Ют ялсем пулнă пулсан — суйăттăмăр, хамăр ялсемех те — хăвăрах каламасăрах пĕлетĕр, — терĕ вăл çинеçинех. — Сухвин те мăшăр тупма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

Сухви амăшĕ çак хушăра ним чĕнмесĕр аллисене кăкăр çине хĕреслесе тытса ларчĕ.

— Тем.., — терĕ вăл, Меркури кăшт сывлăш çавăрма пек чарăнсан. — Халех парас теменччĕ... Çи-пуçĕ те çук та ачин... Çи-пуç умне тăратса çитерейменĕмĕр. Аппăшĕнпе çеç им курса пурăнчĕ. Хăй ятне нимех те туман. Тем, ĕç тухĕ-и, ара? Ытла кĕтмен-çĕртен сарăмсăр пулать ку, выльăх сутса янă пек. Хуларах ун темĕн чухлĕ пулĕ.., тен, арăмĕ те пулĕ, кам пĕлет унтине унăнне. Çавăн чухлĕ хитре майра сая кайнă чух ма манăн пĕртен-пĕр хĕре илес ун? Шупашкара та илсе çитермĕ... Ун валли вĕреннĕ çынсемех тем чухлĕ. — (Çак хушăра Сухви килсе кĕчĕ те тӳрех кăмака хыçне чăмрĕ). Карчăк хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ: — Вăл ман реххетсĕр пурнăç тутлăхĕпе ӳсрĕ те, тем, хула çыннипе, вĕреннĕ çынпа пурăнма пĕлес çук. Тем, вĕсен пăрçа пиçет-и ара иккĕшĕн? Пиçӳ-каçу, килĕшӳ-çыпăçу пулас çук вĕсем хушшинче.

— Ытлашши асăрханатăн пулĕ, кинеми, — терĕ евчĕ те, сасартăках хăюсăрланса.

— И-и, ачам, халĕ шăши те туяпа çӳрет, — терĕ карчăк.

— Хăйсем пĕр-пĕрне килĕштерсен, пирĕн ĕçĕ хуткупăс: туртать — калать, туртмасть — каламасть...

Сухви инкĕшĕ кăмака хыçне кĕрсе кайрĕ. Вăл пăшăлтатса тем каларĕ. Хĕр хирĕç тавăрса калани илтĕнмерĕ. Сухви çав-çавах пуçне кăмака çумне чиксе, питне аллисемпе хупласа тăчĕ.

— Ну, мĕнле четвĕрт пуçлама юрать-и? — тет Меркури сывлăш çавăрса илме те памасăр.

— Эп пĕлместĕп, — терĕ хĕр амăшĕ. — Мĕнле-ха капла? Хамăр тавранах парас тенĕччĕ. Хĕре таçта кайса пĕ-

териччен. Чăнах та. мĕнле-ха капла? Ыранах хулана тухса каймалла тетĕр. Туйсăр епле килтен кăларса ярасха хĕре?

— Эс кунтарах тух-ха, Сухви, — терĕ Меркури. — Ҫала, юрать-и четвĕрт пуçлама. Тухах ĕнтĕ Сухви.

Сухви вĕлт турĕ те — çенĕкелле вирхĕнчĕ.

— Апла юрамасть-ха вăл. Хĕрĕн йĕрки тăрăх кунта пулмалла.

— Нимех те мар. Хĕрĕн йăли çапла. Акă каччи тухса илсе кĕрет. Ҫăшт тухса калаçкалаччăр.

...Саня çак вăхăтра йĕп çинчи пек ларчĕ. Ал-урана ниçта хума та, куçсене пĕр вырăнта чарса тăратма та пултараймарĕ. Пуç кашларĕ, шавларĕ.

Вăл карчăк сăмахĕсене те, Меркури сăмахĕсене те илтмерĕ. «Тухмалла» тесен — вăл хăвăрт ура çине тăчĕ те пӳртрен тухрĕ.

Пĕр самант ун куçĕ те ним палăртмарĕ, пуç та ним шухăшлама пултараймарĕ, пĕр-пĕр шухăш çинче чарăнма хал çитмерĕ. Ун асĕнче çакăн пек шухăшсем çеç çаврăнчĕç.

Мĕн тери ухмахла пулса тухрĕ! Мĕншĕн-ха малтан хăйĕнпе калаçса татăлмалла марччĕ? А халĕ? Хĕрпе те калаçса татăлман? Пырать-и вăл, çук-и? Халĕ ĕнтĕ савман, килĕштермен хĕре евчĕсемпе çураç? Халĕ Саньăн мĕскĕн январ пек лар! Уншăн çынсем калаçаççĕ! Ҫак пĕтĕмпех, пĕтĕмпех амăшĕ пирки! Тухса каяс мар-и пĕреххут?

Саня картлашка çинчен сикрĕ те пĕр самант чарăнса тăчĕ. Такам нăшăклатса хӳхлени илтĕнчĕ.

Ҫрыльца карлăкĕ çине пуçне чиксе пaçăртанпах Сухви тăнă иккен. Саня ăна икĕ-виçĕ минут пуль асăрхаман та.

— Сухви!

Ҫаччă сылтăм аллине ерипен хĕр хулпуççийĕ çине хучĕ. Хĕр хускалмарĕ те. Саня ăна хулĕнчен тытса питне хăй еннелле çаврăнчĕ те хăй çумнелле туртрĕ. Хĕр пĕр хусканупа та хирĕçлемерĕ, сăмах та чĕнмерĕ, питне икĕ аллипе хупласа пуçне Саня кăкри çине чикрĕ.

Саня ăна тата хытăрах хăй çумне чăмăртарĕ. Унăн пуçне, икĕ алпа икĕ питрен тытса, çĕклеме хăтланчĕ, анчах хĕр, тата вăйлăрах тĕршĕнсе, пуçне каччăн кăкăрĕнчен уйăрмарĕ.

Пӳрт алăкĕ шалтлатсан, Сухви, картах туртăнса, Саньăран уйăрăлчĕ те тӳрленсе тăчĕ.

— Атя... урамалла... Тухар, — терĕ Саня тытăнчăклăн та аран-аран сывлăш çавăрса. Хĕр ним сăмахсăрах картлашка çинчен анчĕ, хапха патнелле утрĕ. Вĕсем пĕве хĕрринелле сулăнчĕç. Чылайччен чĕнмерĕç.

— Сухви...

— Кай... ан тив...

Каччă хĕре икĕ алпах çупăрласа хăй çумне чăмăртарĕ.

Пĕвери уйăх чӳхеннĕ май — пĕр çĕре пуçтаранчĕ, сарăлса кайса таткаланчĕ; йывăç тăррисем витĕр ӳкнĕ уйăх çути вĕтĕ хумсем шунă май шыв çинче вакланать те, вĕсем вуншар ылттăн пулăсем выляна пек пĕрре чăма-чăма тухаççĕ, тепре çиелтен ишсе çавăрнаççĕ. Уйăхĕ хăй пĕрпĕрин тăррисем пĕрлешсе, тăлпалансах кайнă йăмрасем çинче ылттăн тенкĕ пек йăлтăртатса тăрать.

Шыв пичĕ çине хĕрпе каччă мĕлки ӳкрĕ.

— Эсĕ чăнласах тытăннă иккен, — терĕ Сухви вăйсăррăн. — Ну, мĕн тăватăн эсĕ, Саня. Кала-ха?

Саня чĕнмерĕ.

— Эпĕ куна пачах кĕтменччĕ. Тĕлĕкре те тĕлленмен. Тата евчĕсемпех-çке. Çитменнине, эпир пĕрне-пĕри пĕлместпĕрпе пĕрех-çке. Юрать-и вара çапла?

— Чăнах та... аванах мар ĕнтĕ... Мĕн тăвас-ха çапла килсе тухрĕ те. Евчи — йĕркишĕн, ваттисен кăмăлне — эпĕ мар.

Саня хĕре каллех хăй çумнелле туртрĕ. Сухви турткалашмарĕ...

— Сухви, — терĕ Саня хыттăн. — Эпир ыранах хулана каятпăр. Ман юлташсем нумай, лайăх юлташсем. Малашне вĕсем сан юлташусем пулĕç. Вĕсемпе нихçан та кичем мар. Вĕсем сан хăнасем пулаççĕ. Сухви! Ну, мĕн эсĕ чĕнместĕн? Тен, эсĕ çапла питĕ хăвăрт пулса иртнĕшĕн çиленетĕн пулĕ? Эсĕ хирĕç мар вĕт, Сухви? Кала, çапла-и? Эпир телейлĕ пулăпăр.

Сухви чĕнмерĕ.

Пĕвере хурсем какăлтатрĕç. Хыçра йăмра тăррисем кашăлтатса илчĕç. Сасартăк... Çывăхрах темĕн хыттăн шартлатни каччăпа хĕре картах сиктерчĕ.

Шыври сăрт мĕлки çинче çывхарсах килекен арçын кулепи, вăрăм пушă сĕтĕрнĕскер, курăнса кайрĕ.

— Çакăнта пушмак пăру курмарăр-и? — илтĕнчĕ хурлă та асаплă сасă. Арçын мĕлки фуфайкăпа, атăпа, çĕлĕкпе. Вăл каччăпа хĕртен пĕр-ик пушă вăрăмăшĕнче чаранса пачах вĕсем çине мар, таçталла çырма урлă пăхрĕ.

— Кĕтӳрен тарнă, мур, — терĕ вăл, хĕрпе каччă хирĕç тавăрса каласса кĕтсе илеймесĕрех малалла утса.

— Кам вăл... ял çурать? — терĕ Саня.

— Кӳршĕ ял кĕтӳçĕ, — терĕ Сухви шăппăн. — Эпĕ ăна кашни кунах куратăп. Вăл Сурăм шывĕн леш енчи улăхра, эпĕ ку енче. Хăш чухне выльăхсем пĕр-пĕрин енне каçсан, эпир пушăпа шартлаттарса сас парса илетпĕр.

...Çак вăхăтра каллех туран пушă шартлатрĕ. Вăйлă сасă, шăплăха çурса ярса, пĕрре туран, тепре анатран, унтан каллех туран илтĕнчĕ те çырма тăрăх анса кайрĕ, Шĕвĕш çырминчен тепре шартлатрĕ, вара Сурăм леш енчи улăх сăртĕнче асаплăн ахлатса вĕçленчĕ.

Сухви темшĕн чĕтресе илчĕ.

— Атя, каяр, — терĕ вăл шиклĕ сасăпа.

Вĕсем чупнă пек каялла утрĕç.

Пӳрте те чупнă пекех кĕчĕç.

— Ну, Сухви, юрать-и четвĕрт пуçлама?... — Меркури, урай варрине тухса, Сухви çине тӳррĕн пăхрĕ. Хĕр алăк патĕнче пуçне усса шăппăн тăчĕ. Вăл «юрать» тени пĕтĕм ĕçе самантрах татса парать.

Хĕр сывлăш çавăрса илеймен пек йывăррăн сывларĕ. Вăл халь-халь мен те пулин каласса пурте сывлама чарăнса кĕтсе тăчĕç.

Пӳлĕмре пĕр хушă стена сехечĕ уксаххăн шаккани çеç илтĕнсе тăчĕ.

7.

Сурăхсем, шăрăхпа аптраса, тапăра тăчĕç.

Кĕтӳçсем те шăрăхпа ĕнтĕркерĕç те, шăмшакĕсем лĕнчĕрех кайрĕç.

Хĕвел питĕнчи улăх сăртĕнче терпекленсе ларакан çил лăснă пĕкрĕç йăмра та, шăрăхпа имресе, лӳпперрĕн те мăраннăн кашларĕ. Уçă çил килсе çапсан, унăн çулçисем канăçсăррăн талкăшма пуçларĕç. Вăхăтсăр юнăхнă çулçисем, суккăр кайăк пек, ӳпне-питне çаврăнса, татăла-татăла анчĕç.

Колхоз фермин сурăхĕсене виççĕн пăхаççĕ. Пĕри килте канать, иккĕн улăхра çӳреççĕ. Паян касу — Варвари инкепе Сухвин.

Сухви, кĕтӳрен татăлса юлнă путеке çĕклесе, Сурăм хĕррипе утрĕ. Вăл час-часах чарăнкаласа тăчĕ, путеке çурăмĕнчен шăлса илчĕ. Вăл, ăшăрханипе вăйран кайса, ерипен те кĕлесĕр аслă пушмакĕ хывăнса ӳкесрен урисене

сĕтĕререх утрĕ. Тек-текех салтăнса каякан йĕтĕн тутрине юсарĕ.

Ун çийĕнче çӳлте-çӳлте — ним кусман пекех туйăнакан пĕлĕтпе туртăннă тӳпе. Ун витĕр — кăвак тӳпене шултра куçлă марлĕпе карса хунă пек шурă ялхах витĕр — çумăр хĕвелĕн пайăркисем ним чăрмавсăрах кĕреççĕ те çав тери пĕçертеççĕ. Хĕвеланăç енчен шур сурăхăн тин каснă сухăрлă сарă çăмĕсем пек пĕлĕт куписем йăваланаççĕ.

Улăх лапинче, пурçăн муркаллă пуçĕсен ука çӳçисене кăшт çеç вĕçтеркелесе, çулçисене вĕçекен хуркайăк çунаттисем пек сулкаласа, кукуруза кăшăлтатать.

Сăртри парлакра çĕртме тăвакан трактор, хура кураксемпе çуйхашса, улăх сăрчĕ хĕррипе иртрĕ. Ун хыççăн касă тăршшĕпех хура кураксем акăнса юлчĕç.

Сухвие çак парлака сухалани кăшт пăшăрхантарать те. Миçе çул ĕнтĕ сурăх кĕтĕвĕ çӳретнĕ вĕсем унта. Сухвин ăш хыпрĕ. Чĕрене тем пăчăхтарать... Те шыв ĕçес килнĕрен çапла, те ахаль.

Сухви Оккай çырми еннелле пăхса илчĕ. Унта сивĕ-сивĕ çăлкуç пур. Ун пек сивĕ çăлкуç урăх ниçта та çук, теççĕ.
Сухви çыран хĕррипе утрĕ.

Çыран кукринче аялта паян чарлан курăнмарĕ. Вăл кашни кунах çакăнта килкелекенччĕ. Шарласа юхакан шыв çинчи чул çине хăпарса хăрах уран тăрать те ним хускалмасăр шывалла пăхать. Хутран-ситрен тем сăхса илсе çăтать: ахăртнех, пулă тытать пулас. Сухвирен хăрамасть вăл. Çывăхарах пырсан тин, вăрăм утăмсемпе ерипен малалла чупса кайса, хуллен сывлăшалла çĕкленет. Аçта-ши вăл паян?

Леш енчи çав чăнкă çыранта çĕр чĕкеçĕн йăви пур. Парлакра, çӳлте, пĕчĕкçеç уртăш йывăççи кутĕнче путене йăви пур. Ăна трактор сухаласа пăрахрĕ пулĕ.

Çак улăх, ирхине ирех хĕвел тухнă чух килсен, ĕнчĕ пĕрчисем сапса тухнă пек йăлтăртатать.

...Кăкăрта темшĕн, тем шыçса хăпарнă пек, тан тапнă пек тапса, ыратса килчĕ.

Мĕншĕн-ха паян ăна кунта çук япаласем шута яраççĕ? Мĕн пирки пăшăрханмалла-ха?

Тăван тавралăх... Çакăнтан ĕнтĕ унăн уйрăлса каймалла. Çак улăхран, çак Сурăм шывĕнчен, Варвари инкерен, çак путекрен...

Улăх сывлăмĕ ĕнчĕ пĕрчи пек йăлтăртатнине те курай-

мĕ вăл кунта тек... Чарлан хăрах уран тăнине те, текĕрлĕксем хурлăн кăшкăрса йăвине шыранине те...

Эх, Саня, Саня!..

Эсĕ ĕнтĕ хулана илсе каясшăн. Мĕн тăвăп эпĕ унта? Сурăх кĕтĕвĕ çук-çке-ха унта?

Сухви путеке хăй çумне пăчăртарĕ те тутинченех чуптуса илчĕ, çыран хĕррине ларчĕ. Çырма леш енчен çирĕк хуппинчен тунă какăр сасси илтĕнчĕ. Куçма юрлать. Ана та кичемрех пулĕ...

Эх, Саня!..

Санпа телейлех пулăп-ши? Сухви асне каллех иртнĕ мăскаллă кун, мăскаллă каç килчĕ. Панулми.

Вăл улмуççие Сухви хăй вăрăранах пăхса ӳстернĕччĕ, унăн малтанхи улмине вăл хăйĕн чун савнине çитерме тахçанах сăмах парса хунăччĕ. Кăçал çав улмуççи малтанхи хут икĕ улма турĕ. Эх, Саня!.. Вăл ăна кам ӳстернине, мĕнле улма иккенне те пĕлмерĕ, ыйтмарĕ те. Çилпе килнĕ темĕнле кĕвĕ илтĕнсен вара, тӳрех «кам хывнă» тесе ыйтрĕ.

Саня, Саня!..

Сухвие Варвари инке сасси тăна кĕртрĕ.

— Мĕн айланан ара çав усал путекпе. Апата килсем! — илтĕнчĕ йăмра айĕнчен.

Сухви Варвари инке çумне урисене хуçлатса ларчĕ, чĕркуççисене кĕпе аркипе лайăххăрах туртса витрĕ.

— Çук, çиес килмест, Варвари инке.

— Эсĕ çураçнăранпа тем çими пултăн-ха, хĕрĕм, — терĕ Варвари инке. — Каймаллипех каятăн-и ĕнтĕ? Хăçан ара?

Сухви пĕр хушă пуçне чиксе ларчĕ.

— Виçмине, — терĕ вăл шăппăн. — Çураçасси те, туйĕ те.

— Э-э, апла Сурăм пуххи кунхине? Чалпаш сурăхлăх—хăвах сурăх ӳстертĕн ĕнтĕ. Хăвна килĕшнисене пăхса хур-ха эппин...

Сухви чĕнмерĕ. Ал айне çакланнă тăпăрчă чăмакки пек сыр кăмпине йăваласа ватрĕ.

Вăл сасартăк Варвари инкене пилĕкрен ыталаса илчĕ.

— Уйрăлас килмест ман çак çĕртен-шывран! Кĕтӳрен!..

Вĕсем пĕр ăстрăм хускалмасăрах ларчĕç.

— Варвари инке, кала-ха! — терĕ Сухви каллех. — Эсĕ юратнă-и кама та пулин? Телейлĕ пулнă-и эсĕ?

Карчăк малтанах аптраса тăчĕ.

— Кам юратман пулĕ яш чух, — терĕ вăл юлашкинчен. — Анчах пирĕн юмахри пек юрату пулман. Сайра вăл, хĕрĕм. Пирĕн кулленхи ахаль юрату çеç пулнă. Кун пек чух пĕтĕм телей савăшура мар, телее урăххинче тупатăн: кил-çурт тирпейĕнче, ача-пăчара, ĕçре...

Варвари инке Сухвирен уйрăлчĕ те, саппун аркине ая çавăрса хурса, тĕмеске çине ларчĕ.

— Телей пирки эп сана, хĕрĕм, пĕр юмах ярса парам... — терĕ вăл. — Ку вăл ĕлĕкех пулнă... Хуньашшĕ кинне — çĕнĕ çынна — улăха ут тытма ярать.

«Асту, аякран сас туса пыр. Патне çитсен — сăмах ан чĕн, вара пĕтеретĕн», — тет хуньашшĕ.

Кинĕ улăха лаша тытма тухса каять. Лаши курăк çинче выртнă. Çĕнĕ çын, лаша тăрса тарасран «кайран тытаймăп» тесе хăраса—ним сас памасăрах пырать. Çитет те чĕлпĕртен туртать. Лаша тăмасть, каллех туртать — тăмасть. Вара çĕн çын:

«Ну-у, тăрсам!» — тесе ярать.

Пăхать: лаша çавăнтах тӳнсе каять. Тытса пăхать те — лаша вилнĕ.... Вăл лаша çунатлă пулнă иккен. Çĕнĕ çын ун çунатти çине пуснă пулнă.

Варвари инке пĕр кана чĕнмесĕр ларчĕ те тутăр вĕçĕпе куç кĕтессине шăлса илчĕ.

— Телейĕ ĕнтĕ ман, — терĕ малалла Варвари инке. — Çав юмах пекрех пулчĕ пулмалла... Çав телей çунатти çине таптарăм пулмалла... Упăшкам пысăк çынччĕ. Авлансанах мана хулана илсе кайрĕ. Апат пĕçереттĕм, кĕпе çăваттăм. Урăх ĕç те çукчĕ мана валли хулара. Ун патне хăй пекех пысăк çынсем—юлташĕсем пыратчĕç. Артистсем çинчен, кĕнекесем çинчен калаçатчĕç. Эпĕ вĕсем калаçнине чĕптĕм чухлĕ те ăнланмастăм. Лайăх пурăнтăмăр савăш çуйăхне. Пĕрре упăшка юлташĕсем хам пирки калаçнине илтрĕм. «Çавăн пек лайăх çынсене яланах усал арăм çакланать. Мĕн тума илнĕ вăл çухмаха?», терĕ пĕри. Çакăн хыççăн ман чĕре шар çурăлсах кайрĕ. Пăрахрăм та тухса тартăм. Акă ĕнтĕ халь çирĕм çул ытла хăраххăн пурăнатăп. Малтанах ялта мана илес текенсем те нумайччĕ те — кайран качча кайса килнĕ хĕрарăма кам пăхтăр? Унтанпах сурăх кĕтетĕп. Çапла вăл, хĕрĕм, телей тени. Телей çунатти çине пусма юрамасть. Сас туса пымалла. Хăвăнтан нумай килет. Эсĕ, хĕрĕм, ман пурнăçа чĕре патне ан хур, юмахне ăша ил.

Сухвин сăн-пичĕ темшĕн асаплăн туртăнкаласа илчĕ.

Вăл юмахăн тупсăмне ăнланса илеймесĕр асапланса ларнăн туйăнчĕ.

Самантран ăна каллех пушă сасси шарт сиктерчĕ. Çырма леш енчен виçĕ хутчен пушăпа шартлаттарчĕç — ку вăл кӳршĕ ял кĕтĕвĕ енне Сухвисен сурăхĕсем каçнине пĕлтернĕ. Сухви ура çине сиксе тăчĕ те пушăпа сулса хурав пачĕ — вара чупсах шыв урлă Кусма кĕтӳç патнелле чупрĕ.

8.

Хĕвел хĕртсе пăхать.

Çăка çулçисенчен пыл юхса ларать. Вĕсем йăлтăртатса çеç тăраççĕ. Вĕсен айĕпе иртсе пынă чухне пуç çине тумлам татăлса анать.

Юмахри пек сарă кун тăрать.

Çакна май çын чун-чĕрине те çутă-çутă хаваслă туйăм ӳксе çутатать.

Паян кăнтăрла тĕлнелле Сурăм таврашĕнчи тĕрлĕ çулсем тăрăх шап-шурă халăх, капăр халăх, Чăваш Сурăмĕ еннелле куçа пуçларĕ. Часах темĕнле чăрмав-сăлтавпа каярах тăрса юлнисем çеç пĕччен-иккĕн питĕ васкаса утрĕç.

Шăп та шай кăнтăрла иртни виçĕ сехетре Куканар пуçĕнче автобус чарăнчĕ те — çул çине Саня анса тăчĕ.

Вăл, питĕ васкарĕ пулин те, Куканар вăрманĕ хĕрринчи çулпа утнă чухне ирĕксĕрех хуллен кайрĕ. Ĕнтĕркенĕ йывăçсен сулхăнĕ айĕнчи симĕс курăк пусса илнĕ урапа çулĕ, кăшт нӳрĕ те пиçĕскер, урасене аялтан тĕртсе резина пек таптарса пычĕ.

Çакă сарă кун, вăрман уй-хир уçлăхĕ, хаваслантарса та çĕклентерсе, кирек кама та — ял çыннине — ачалăхри ĕмĕтлĕ илемлĕ тĕлĕке аса илтерет.

Каçăхтарсах, аташтарсах, ĕнтĕркеттерсех яракан илемлĕх!

Хулари тĕтĕмлĕ, тусанлă сывлăш хыççăн çакăн пек илĕртекен вырăнпа — тăван кĕтеспе — утма мĕн тери аван!.. Уйрăмах тата, тăван ялта, тăван килте кĕтекен пулсан! Кунсăр пуçне, савнă хĕр, сăмах татнă хĕр пулсан!

Кăкăра та, пит-куçа та, юрра та, çак уй-хире кăна мар — тĕнчене шăнăçайми телей те пулать!

Çакă вăл паян пулмалла.

Паян!

Хĕр «ĕçне» паяна хăварчĕ.

Саня нихҫан та паянхи пек телейлӗ пулман пулӗ. Ҫук, паянхи пек мар — ҫак юлашки эрнери пек! Сухви пӗр самантлăха та куҫ умӗнчен каймарӗ.

Сухви!.. Сухви!..

Саня пӗлет. Телей валли хăй кăна телейлӗ пулни ҫитмест-ха, Сухви те телейлӗ пултăр. Сухви те хулара телей туптăр тесен, ăна кирек те ăҫта — завода-и, строй-кăна-и — ӗҫе вырнаҫтармалла е вӗрентмелле. Вăл сахал вӗреннӗ-ҫке. Вӗренсен вăл — Санькăшăн кăна мар — нумай-нумай ҫыншăн пархатарлă, хаклă ҫын пулать. Саня пӗлет, Сухви унсăр Саньăпа телейлӗ пулма пултараймасть. Ытах апла май килмесен — Саня ăна ялтан та илсе каймӗ — антив, колхозрах пурăнтăр сурăх кӗтӗвӗ кӗтсе... Хисеплӗ ӗҫ... Ҫук, Саня халӗ ниепле те яла юлмасть. Вăл хулара ӗҫлет-ҫке. Мӗнле-ха вăл иккӗн икӗ ҫӗрте пурăнсан?

Саня чăматанне ҫăмăллăн вылятса пычӗ.

...Амăшӗ туя хатӗрленсе ҫитни ҫинчен ӗнер ҫыру янăччӗ. Сухвисен те тимлесех хатӗрленеҫҫӗ иккен. Сухвие туй парнисем хатӗрлеме пӗтӗм хӗр-тантăшӗсем пулăшаҫҫӗ-мӗн. Амăшӗ кăна та ҫырма манман!

Ҫумма-ҫуммăн пӗр тăнă чух,
Вӗри хулсем сӗртӗннӗ чух —
Шăпчăк та сас паратчӗ,
Хӗвел те йăл кулатчӗ... —
А-ай!.. Телейӳ ҫакă тетчӗҫ.

Уҫă сасса вăрман шала йышăнмарӗ. Юрă, йывăҫсен лутра вуллисенчен ҫӗреллех ăмăрса тăракан ҫулҫăсене ҫапăнса, вăрман хӗррипе шуса каять те, вăрман кукринчен каялла таврăнса, Санькăна хăйнех илтӗнет. Унпа пӗрле вăрман, Саня юрринех, анчах сăмахӗсене пӗлменнипе кăшт каярах юлса юрланăн туйăнать... Юрă вăрман хӗринчен сылтăмри пăрҫа ани ҫинелле юхса саланать.

Пăрҫин хашпӗр хутаҫҫисем тытăннă, карăнсах тăраҫҫӗ, ҫав хушарах хӗрлӗ, шурă, кӗрен тӗслӗ, хуртпуҫҫи евӗрлӗ ҫеҫкисем те курăнкалаҫҫӗ.

Чӗрере ытарма ҫук ырă сапăрлăх капланăвӗпе пӗрле темӗнле кăшт хурлăрах, пăшăрхануллăрах, ăнланма ҫук савăнăҫ амаланса пырса ҫан-ҫурăма лаштăрах ярать... Ҫак ҫул айккинчи хăйӗн киленчӗклӗ симӗс сулхăнӗпе йыхăрса астаракан тӳшек пек ҫемҫе пăрҫа ани ҫине тăсăлса выртса, юпах тиха пек йăваланас килет.

Акă тăван итем, арман... ял...

Авăк çил çанăсенчен, уçă çухаваран вирхĕнсе кĕрсе, кĕпене çурăм çинче вĕрсе хăпартрĕ. Каллех такам вĕрин сывланă пек пăчă сывăш сулăмĕ иртсе кайрĕ.

Саня каллех юрласа ячĕ:

«А-ай!.. Телейӳ çакă мар-и?»

* * *

Саня хăйĕн чи юратнă чăваш тĕрриллĕ кĕпине, лайăх якатнă шурă шăлавар тăхăнчĕ.

— Нумаях ан çӳрĕр, — терĕ амăшĕ. — Халăх пухăран таврăннă çĕре хĕрĕ патне кайăпăр. Меркури ирех тарантас шырама кайрĕ-ха, «Айгир» ăйăра та паян никама та тытма хушман.

— Тăрантасĕ те кирлех-ши?

— Эй, ачам, хĕре епле çуран илсе каçан? Халăх шутлах пултăр ĕнтĕ. Пĕтĕм ял хатĕрленет-çке. Шатах сăра пурĕç-ха.

Саня тухса кайма тытăнсан, амăшĕ ăна сăмса тутри тыттарчĕ.

— Ну, кайса çӳре-ха эппин, — терĕ вăл, ывăлне пухха ăсатса. — Атту саланма та пуçлĕç тата. Сухвийĕ хăй пaçăрах кайрĕ-ха хĕрсемпе. Эсир нумай ан çӳрĕр. Премĕк илсе пар, кăруçел çаврăнăр. Хĕрсем юратаççĕ ун пеккисене.

Урамра пĕр çын чунĕ те курăнмарĕ.

Кĕтӳ те паян кăнтăрлачченех яла кĕнĕ. Ăçта килнĕ унта: пӳрт çумĕсенче, йывăç сулхăнĕсенче — сурăхсем, качакасем, ĕнесем хутăшах выртаççĕ.

Укăлчари картасем урлă çĕнĕ ратлă шур автансен сарлака та пĕрчĕмлĕ-пĕрчĕмлĕ пысăк киккирикĕсем пек чăх çырли сапакисем усăнаççĕ.

Саня ял вĕçĕнчи укăлча алăкĕ витĕр тухрĕ те васкасах улăхпа Чăваш Сурăмнелле утрĕ.

* * *

Сурăм пуххи нихçан та çумăрсăр иртмен пулĕ. Анчах малтанах çумăр çукчĕ-ха. Çанталăк та йĕркеллехчĕ. Кайран вара сасартăк çумăр йăтăнса анчĕ. Унтан сасартăк... чĕрене шар çурса яракан кĕтмен сехмет пуç çине анчĕ. Анчах чу кайрантарах пулчĕ-ха.

Саня Чăваш Сурăмнелле çитнĕ çĕре пĕлĕт хĕрри çеç йăсăрланатчĕ. Вăл пуххa çитнĕ çĕре ĕнтĕ ниçта утма-тăма та вырăн çукчĕ. Хĕрсем-каччăсем ĕнтĕ вичшерĕн, тăватша-

рăн, пилĕкшерĕн çума-çум тăрса умлăн-хыçлăн утма тытăннăччĕ. Утакансем пухă вырăнĕ тавра çаврăнса илсе ял урамĕ тăршшĕпех тăсăлаççĕ, уя та тухса каяççĕ. Ӳссе-ӳссе пыракан, темиçе çухрăма тăсăлакан хĕрсен карти пĕр шухăш-кăмăлпа пĕр вăйă выляса утса çаврăннăн туйăнать. Йĕри-тавра капăр халăх утать: виръялсем пухăсене яланах капăр тухаççĕ, пурте пекех ярăнса утаççĕ. Тата... ăçта, хăш халăхăн пур-ши виръялсем пек илемлĕн ал сулласа утакан? Қамăн пур-ши ултă тĕрлĕ утти?..

Саня пухха çитсе кĕнĕ-кĕменех хăйĕн хулари икĕ юлташне — çамрăк юрăçсене тĕл пулчĕ. Унтан вĕсем утса çаврăнакан хĕрсен картинчи икĕ хĕр хушшинче пыракан Сухвие тĕл пулчĕç. Вара улттăн юнашар тăрса утма тытăнчĕç.

Сухви шурă пӳс кĕпе тăхăннă. Вĕтĕ пĕрмечеллĕ саппун çакнă, калакĕ çине чечек тирнĕ; вăрăм çӳçеллĕ çĕрçĕн тутăр хыçалалла çыхнă, ун çинчи тĕррисем тăкăнас пек. Сухвипе пĕрле тата икĕ хĕр.

Хĕрсем хĕвелçаврăнăш шĕкĕлчесе чĕнмесĕрех пычĕç. Саня юлташĕсем ытларах искусство çинчен калаçрĕç. Артистсен, кĕнекесен ячĕсене асăнчĕç. Хĕрсене те калаçтарма пăхрĕç. Саньăн пĕр юлташĕ тĕрлĕ ыйтусемпе тек-текех Сухвие тапăнчĕ: «Пĕлетĕн-и», «вуланă-и?» Сухви пуçĕпе çеç хирĕçлесе суллать. Саня та унпа яшсем умĕнче нимĕнле сăмах та пуçармарĕ. Саня юлташĕ пĕр çаврăм утса тухсан сасартăк Саня енне çаврăнчĕ:

— Профан камне пĕлетĕн-и эсĕ, Саня, — терĕ вăл. — Эсĕ ăна начар çын тетĕн пулĕ, е? Вăл калама çук пысăк çын пулнă...

Тепĕр çаврăм утса çаврăннă çĕре Саня аяккалла пăхрĕ те икĕ хĕр хушшинче Сухвие курмарĕ. Вăл хăçан хăш тĕлте пăрăнса юлнине те Саня асăрхаман.

Саня чылайччен пухă тăрăх Сухвие шыраса çӳрерĕ.

Грузовиксем çинчи лавккасем умĕнчен те, хĕвелçаврăнăш, мăйăр, çырла сугса ларакан хĕрарăмсем умĕн те иртсе кайрĕ; хăю, тутăр, тĕрĕ çипписем сутакан лавккасем умĕнче тĕркĕшекен хĕрсем хушшине те кĕрсе пăхрĕ. Сухви ниçта та курăнмарĕ. Çак вăхăтра кашни Сурăм пуххинчех пулакан çумăр йăтăнса анчĕ. Пухă халăхĕ, кĕпĕрленсе, çуртсем, лавккасем çумне хӳтте тара пуçларĕ. Хула хĕрĕсем уринчи пушмакĕсене хывса çаруран чупрĕç. Часах пухă вырăнĕнче çумăртан хӳтĕленмелли пĕр пушă кĕтес те юлмарĕ.

Саня çывăхри лавкка кĕлечĕн картлашки çине хăпарса тăчĕ.

Кĕлет хĕрринчен сăрхăнакан кантра пек шыв юххи, урасем çине сирпĕнсе, хĕрсене тата шаларах хăваларĕ. Çӳхе тумсем витĕр пĕçертсе тăракан вĕри ӳтсем хĕстерсех пынипе Саньăна пăчă пулса кайрĕ, вăл вара хĕрринерех тухса тăчĕ.

Çумăр вăраха пымарĕ. Кĕçех кĕлет çумĕнчи çамрăксем Сурăм çийĕнчен юлашки пĕлĕт хӳри шуса иртессе çеç кĕтрĕç. Витĕр курăнакан хĕрлĕ, кăвак плащлă хĕрсем ĕнтĕ уткалама та тытăнчĕç.

Саня та çĕре анасшăнчĕ çеç — кĕлет умнех пĕр тăрантас пырса тăчĕ. Чĕркуççи таран шур чăлха тăхăннă пек шурă та сакăл уралла тимĕр кăвак ăйăрăн утнă чухне те сули кăмп-кăмп! тутарса пырать.

Тăрантас çинчен виçĕ кĕреш çамрăк анса тем канашла пуçларĕç, тек-текех хĕрсем еннелле пăхкаласа илчĕç, ямшăкĕпе пăшăлтатрĕç. Ямшăкĕ вара, çĕре аннăскер, каллех ларкăч çине хăпарса ларса, тилхепине кĕç-вĕç хускалса кайма хатĕр тытрĕ.

Саня умĕнчи хĕр темшĕн чĕтресе илчĕ те, каялла чакса, Саньăна та сулăнтарса ячĕ.

— Сухви!.. — тĕлĕнсех кайрĕ Саня ăна кĕтмен çĕртен тĕл пулнипе.

Сухви чĕрери ача тарăхне путарнă пек Саня çине кăн-н! пăхрĕ. Унăн пит-куçĕ, ахаль те салху сăнлăскер, халĕ тин кăна чун татса йĕнĕ пек тата хурлăхраххăн курăнчĕ, çав вăхăтрах унта пысăк теветкеллĕх те сисĕнчĕ. Куçĕсем шывланса йăлтăртатрĕç. Питçăмартисем çинче — те çумăр тумламĕсем, те куççуль — икĕ тумлам чĕтрет... Тути хĕррисем темшĕн кăвакарнă.

...Сасартăк Сухви такам алран тытса вăйлăн туртнипе сулăнса кайрĕ те майсăррăн картлашка çинчен сикрĕ. Ăна ӳкме памарĕç. Ăна тепĕр çамрăк пилĕкрен ярса илчĕ. Сасартăк хĕр çӳлелле çĕкленчĕ. Икĕ çамрăк ăна тăрантас çине пăрахрĕç. Хĕр кĕскен те çинçен «ай» тесе ячĕ. Çак вăхăтра кĕлет хыçне халăх кĕпĕрленсе килчĕ.

Ăçтан килчĕ унтан «хĕр вăрлаççĕ», «хĕр вăрлаççĕ» тесе кăшкăрни илтĕнчĕ. Тăрантас тӳрех карт хускалчĕ те сирĕлсе тăнă халăх хушшипе ыткăнчĕ...

Саня вăйлăн сулăнса картлашка çинчен сикрĕ. Такам ураран ӳкрĕ, тахăшĕ вăрçса илчĕ, пите тахăшĕн пуçĕ пырса çапăнчĕ. Саня мĕнпур вăйне пухса талпăнчĕ. Акă

ёнтĕ çывăхрах тăрантас кустăрми айĕнчен сирпĕнекен пылчăк чăмаккисем вăркăнаççĕ. Акă вĕсем питрен те çапăнаççĕ.

Тăрантас кустăрми хула сĕртĕнсе шăйăрса илчĕ, анчах Саня куна туймарĕ. Алла хура костюм çухи кĕрсе кайрĕ. Тем çатăртатрĕ, лăчăртатрĕ... Саня сулăнса кайрĕ, анчах аллине вĕçертмерĕ. Унăн пуçĕ урлă пысăк, йывăр кĕлетке ывтăнса кайса пылчăк çине лаплатрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те харăсах сиксе тăчĕç.

Кайран вĕсене халăх хупăрласа илчĕ. Такамсем, хыçалтан тытса, алăсене пăрса лартрĕç...

«Санăн ĕç сук!.. Хĕрĕпе сăмах татнă», — тенине çеç лайăх илтсе юлчĕ Саня.

Тăрантас ёнтĕ, ялтан тухса, уйпа ĕрĕхтерчĕ.

Саня кĕписем, шăлаварĕсем тăрăх пылчăк юхрĕ. Саня, хăйне курма пырса тулнă ушкăн варринче тăрса, йывăррăн сывларĕ, катăлса каяслах шăлĕсене çыртрĕ...

9

...Унтан вара, Саньăшăн мĕн пулса иртнине палăртнă пекех, каçченех сивĕ çумăр çурĕ.

Çумăр тумламĕсем тӳрĕ ӳкмерĕç, кантăк тĕлĕнчи пӳрт хĕрринчен татăлса анса, пусма вĕçнеллех вĕçе-вĕçе кайса ӳкрĕç, стенана çапăнчĕç, чул çине ӳксе саланчĕç. Амăшĕ вучах чĕртсен, тĕтĕме мăръерен çил çапа-çапа каялла пӳрте хăваларĕ.

Шултăрканă кантăк, ун çине такам пĕтĕм кӳлепипе тӳне-тӳне кайнă пек, пĕрре тулалла, тепре шалалла шалтлата-шалтлата илчĕ, кайран тин шăршăнса ларчĕ те шалтлатма пăрахрĕ.

Тепĕр кунне ирхине такамшăн илемлĕ те кăвак хуппи пек ир килчĕ. Типсе кайнă çĕр шӳнĕ те, пĕтĕм уй-хир, çĕрулми анисем, çерем—вирт кайнă пек е тата мунчаран тин тухнă çын типшĕнсе ларнă пек пăсланса мăкăрланчĕç. Çил вĕсене вĕçĕмсĕр çĕр çумĕпе хăваларĕ.

Курăк çинчи çумăр тумламĕсем хĕвел çутинче пиншер лампăчкă çуннă пек йăлтăртатрĕç.

Амăшĕпе ывăлĕ иртнĕ сехметлĕ ĕç пирки пĕр-пĕрине ӳпкелесе те, ӳкĕнсе те кунĕпех çăвар уçмарĕç.

...Кăнтăрла иртсен ялта туй юррисем, параппан-шăнкăрав сассисем илтĕне пуçларĕç.

Ой, кĕрӳ Куçма пур,
Инке лайăх Сухви пур... —

илтӗнчӗ юрӑ аякранах. Пӗтӗм таврана саланчӗ. Ҫайран таҫтан улӑхран темӗн чухлӗ халӑх хупӑ ҫӑварпа ним сӑмахсӑр хурлӑ-хурлӑ юрланӑ пек туйӑнса тӑчӗ. Ҫуна никам та юрламарӗ. Чӗрере ҫеҫ ҫапла пӗтӗм тавралӑх хурланнӑн туйӑнчӗ...

Саня урама та тухса курмарӗ, кантӑк умне те пымарӗ. Чӑматанне йӑтса, пахча витӗрех хулана кайма тухрӗ.

Пахчара хуҫӑлса аннӑ ҫӗмӗрт патӗнче пӗр хушӑ чарӑнса тӑмасӑр пултараймарӗ-пултараймарех... Ҫӗмӗрт тура́тти ҫине такам таптанӑ та, хуппи сӗвӗннӗ ҫӗмӗртсем нимӗрленсе тӑраҫҫӗ, карта ҫумӗнчи шилӗк тума тесе каснӑ хурӑн тункати хӗрлӗ наймакапа елтӗрсе ларать, ун тавра пӗр арӑш-пирӗш симӗс шӑна ҫаврӑнать. Ҫӳлтен — те хурӑн тӑрринчен — пӗр тумлам патлатса ӳкрӗ те ҫӑкан ҫемҫе ҫулҫине шӑтарсах пӑрахрӗ. Малтиварта пӗр кайӑк хӳхлесе юрларӗ. Ял ӗҫкӗре янкӑшать.

Темӗнле хӑлхана хупласан та, урамри юрӑ илтӗнчӗ-илтӗнчех:

Ҫаччи пурччӗ кӗреш пек—
Ҫич ҫул хыҫҫӑн ҫӳрерӗ.
Пирӗн Сухви инкерен
Виҫ ӑш сӑмах илтмерӗ.
Ой, кӗрӳ Ҫуҫма пур —
Шет маттур мар, сатур мар:
Виҫӗ сӑмах хушмарӗ —
Ытам тулли хӗр тупрӗ...

...Саня ял ҫумӗнчи ҫул ҫине тухрӗ. Ҫушӑхнӑ ҫулпа пӗр пушӑ урапа халтӑртаттарса, хӑй хыҫҫӑн тӑсӑлакан тусан хӳрине пӑрҫа ани тӑрӑх сӗтӗрсе иртрӗ. Ун хыҫҫӑн пӗр пӗчӗк ҫавраҫил пӗр хушӑ ҫул тӑрӑх пычӗ-пычӗ те ансӑр вар хушшинелле пӑрӑнса юлчӗ.

Чӗрене ҫурса, асаплантарса, хыҫра, аякра, параппан тӳнлетрӗ.

10.

Август вӗҫӗ. Улма праҫникӗ иртнӗ ӗнтӗ. Шыв сивӗне пуҫланӑ.

Ҫилпе калчасем лӑпчӑна-лӑпчӑна илеҫҫӗ. Вӗсем хум ярсах хумханаймаҫҫӗ-ха. Пӗтӗм уҫӑм пӗр енчен пӑхсан — хӗрхӗлтӗм тӗслӗ, тепӗр енчен пӑхсан — ҫутӑрах симӗс тӗслӗ курӑнать.

Улӑх ҫыранӗпе темиҫе утмаҫул, тӗллӗн-тӗллӗн пӗр-пӗрин ҫине кӗрсе кайса — виҫӗ сукмака пӗрлешсе, тӗл-тӗл

уйрăлса кайса — тăхăр сукмака çитсе, çумма-çуммăн тăсăлаççĕ.

Саня ак каллех — виçĕ çул иртнĕ хыççăн — тăван улăх лапипе Сурăм шывĕ еннелле утать.

Сылтăмра улăп тăпри пек çĕкленсе тăракан сăртлăх, тӳпем. Çак тӳпемри курăк та типсе çунса кайнă. Вăл тĕлтĕл çеç карталанса ӳснĕ çерем кăмпин сулĕ çинче симĕссĕн курăнса выртать. Хăшпĕр картисем çинче типсе пĕтĕрĕннĕ кăмписем те курăнкалаççĕ.

Хăнкăрма пек чăмăр та типсе хăмăрланнă сыр кăмписем, хулăн хупăллăскерсем, шăп тăрринчен шăтнă та, çав шăтăкран çил вĕрнĕ май мăръерен кăшт çеç йăсăрланакан сĕрĕмлĕ тĕтĕм пек, хăмăр тусан вĕçет.

Çак тӳпем Саньăна асамлă сăртлăх пек туйăнать. Халиччен никам та тĕсесе-ӳкерсе паман, чуна хурлăн-эрлĕн хумхантаракан авăллăх илемлĕ пытанса тăнă пек çакăнта. Çак илемлĕх халĕ чунра хурлă туйăм вăратать. Ку вăл аваллăхпа сыхăннă, анчах халĕ пĕтсе пыракан илем-мĕн. Çавă ĕнтĕ хурлă туйăм вăратать чĕрере. Ку сăрт çине пăхсан, Сурăм тăрăхĕнчи хурлă семле чĕрене пăлхатать.

Çакăнта пăхсан теме сирме, теме тепĕр майлă çĕнĕлле çавăрса хума хистекен туйăм çĕкленет. Çак тавралăха хаваслăх, савăнăç сăнĕ кĕртес килет.

Саньăн хĕçпăшалĕ — туйăмсем. Сасăсемпе, кĕвĕ-çемĕпе уçса панă туйăмсем, юрăсем. Çакăнти хурлăрах туйăма тытса илсе çын кусĕ умне кăларса тăратнипе çеç ăна улăштарма, çĕнетме чĕнме пултарать Саня.

Нумай пулать-и-ха Саня кунта хĕр çураçма хатĕрленни... Саньăна çакăнти авалтан юлнă кивĕрех шухăш-кăмăлăн, йăла-йĕркен юлашкисем—çакăнти хурлăх кĕвви — хур кăтартмарĕ-и-ха?

Çавăнпа пулĕ Саня кунта виçĕ çул хушши килме пултараймарĕ. Чĕрене тата касăлтарасран хăрарĕ-и?.. Е вăл халь çав сурăх кĕтĕвĕ патĕнче тусан ăшĕнче чаваланакан пĕчĕк ачаран та хăрать?..

...Çут хуçса ларакан ача ют çын хăй патнелле çывхарнине курсан йĕрсе ячĕ.

— Анне,—найкăшрĕ вăл, куçĕсене çаннипе хупласа. Ача патне, вăрăм пушă сĕтĕрсе, туртăннă питлĕ, типшĕмрех çамрăк хĕрарăм чупса пычĕ. Вăл кăвакарса ларнă пир кĕпе, çурăмĕ çинчи аçлăк вырăнне çеç тар çапманнипе шурăскер, тăхăннă. Урине вăл, хура çăм туна тăлипе чĕр-

кесе, пěчěк пуçлă, урлавлă çăпата сырнă. Юхса пěтнě çивěтě иккěрен пěррене тăрса юлнă.

— Ма макăратăн, Миккуль? — ыйтрě хěрарăм Саня çине тěлěннě пек пăхса илнě хыççăн. — Ан макăр... Қам тивет сана? — терě вăл малалла, ача патне пěшкěнсе.

Хěрарăм ачана алла тытрě.

— Мучукран хăрап, — терě ача, куçěсене аллипе сěркелесе.

— Ма хăратăн мучукран? — терě хěрарăм. — Мучук мар вăл — пичук те. Хăрамалли çук унран. Атя эпир ăна хěнетпěр пире макăртнăшăн.

— Сухви!..

Саня хăй сисмесěрех ахлатса илчě. Хěрарăм, ачине йатса, Саня патнех çывхарчě те пěчěк ачан сылтăм аллипе Саньăна хулěнчен çапрě.

— Ак! Ак! Ак ăна! Пичук, эсě ма макăрмастăн?..

Саня юриех макăрам пек турě. Пěчěк ача куçне-пуçне чалăртрě те, савăнса, кулса ячě.

— Ав вăл макăрать. Халь юрат ăна, — терě Сухви. — Ытала мăйěнчен. Акă эпě ыталатăп... Қур...

...Саня мăйне вěри хул çавăрса илчě, пěчěк ачан ăвă пек çемçе алли пите сěртěнчě. Саня ачапа хěрарăма хыттăн хăй çумне чăмăртарě, хěрелсе кайрě.

— Питӳ хура сан, — терě вăл, вěрин сывласа, шăппăн. — Сана эпě Шупашкара илсе каям-ха... Атăлта пит çума... Пыратăн-и, Миккуль?

— Пит-куçěпе Қуçманах пăхнă, — терě Сухви ачан кăвак куçěсем пирки пулас, унтан ачан сăмсине тытса силлерě: — Қу хамăн...

Саня кулам пек турě, хěрарăмěн пысăк кăвак йěрпе карталаннă шывлă куçěсене курсан, ирěксěрех пуçне усрě. Сухви чěтресе кайрě те, сӳлтен кайнă пек, вăйсăрланса пырса авăнсах анчě, Саня çумне тěршěнчě.

Вěсем çерем çине ларчěç.

Саня вěри кěлеткене вăйранах хăй çумне чăмăртарě.

— Қай... Саня... ан... тěкěн...

— Сухви!.. Сухви!..

Саня хăй тěллěн калаçнă пек тек-текех çав ята асăнчě.

— Қала, Сухви. Телейлě-ши эсě?

— Телейлě, Саня. Телейлě! Акă халь çак самантра çěр çинче никамран та телейлěрех!.. Урăх манран нимěн те ан ыйт.

Вёсем чёнмесӗр ларчӗҫ. Вӗри тутасем пӗрлешрӗҫ.

— Ҫапах та ку пӗчӗк телей-ҫке-ха, Сухви.

— Ҫук, ҫук, Саня. Эпӗ пӗчӗк телейпех телейлӗ пулма пӗлетӗп. Курнӑ-ши эсӗ пӗр йӗтӗн тутри илнӗшӗнех савӑнса пасартан таврӑнакан чӑваш хӗрарӑмне? Йӑл кулӑ вылятьши сан питӳнте вӑл ҫавӑншӑн телейлине курсан?

— Сухви! Қала эсӗ мана: юратнӑ-и эсӗ мана виҫӗ ҫул каялла? Мӗншӗн качча тухрӑн?

— Ан калаҫ ун ҫинчен, Саня. Ан калаҫ! Йывӑр мана ӑна аса илме! Мӗне кирлӗ халь ӑна асӑнма? Юратнӑ, юратнӑ! Мӗн кирлӗ тата сана урӑх? Ҫапла кирлӗ те. Эп сана качча тухнӑ пулсан, акӑ халь эсӗ мана юратмастӑн. Часах сивӗнеттӗн. Эпӗ те, тен, ҫаплах пулнӑ пулӑттӑм. А халӗ эп сана ӗмӗр тӑршшӗпех, ҫӗр айне кӗричченех асра тытӑп, ӑшра тытӑп. Эсӗ яла та пулин виҫӗ ҫулта пӗрре килкеле, Саня. Килкеле... Юрать-и?

— Сухви!.. Сухви!..

— Эх, Саня! — Сухви икӗ аллипе те Саньӑн ҫӳҫне якатрӗ. — Ҫӗр ҫинче эпӗ, тен, сана курнипе телейсӗр пултӑм пулӗ. Астӑватӑн-и панулми ҫитернине? Эсӗ ыйтмарӑн та ун чух ху мӗнле панулми ҫинине те. Астӑватӑн-и, мана ҫураҫма пырсан, мӗн тери вӗтеленсе лартӑн — евчӗсемпе ҫураҫнӑшӑн-и, чӑваш йӗркипе авланмалла пулнӑшӑн-и, кам пӗлет сана... Астӑватӑн-и Сурӑм пуххинче юлташусем мӗн калаҫнине? Ҫакӑнта сан айӑп ҫук-ши вара? Астӑватӑн-и: пӗве хӗрринче Қуҫма пӑру шырарӗ? Эсӗ «ҫук» тесе те сӑмах чӗнмерӗн. Манӑн ун чух ӑна шеллесе куҫҫуль юхса тухатчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара эпӗ сана качча пыма, сан юлташусем хушшинче пурӑнма пултарнӑ-и?

Саня пӗр сӑмах та хирӗҫ тавӑрса калаймарӗ.

— Манра та айӑпӗ пур, — терӗ малалла Сухви. — Эпӗ ваттисен тыткӑнӗнче пулнӑ пулас. Сана тахҫанах килӗштернӗ, санпа калаҫасшӑн пулнӑ. Анчах анне ирӗк паман. Эпӗ анне ирӗкӗнчен тухайман. Ялти ватӑсен умӗнче куҫран ӳкесшӗн пулман. Эпӗ ӑна малтан хам та сисмен. Халӗ тин туйма пуҫларӑм. Вӗренессе те мана анне вӗрентмен. Эсӗ те айӑплӑ. Ытла хӑвӑрт пырса кӗтӗн. Пӗрер ҫул туслӑ пулнӑ пулсан — эпир пӗр-пӗрне ӑнланса ҫитнӗ пулӑттӑмӑр. Пӗрпӗрин йӑнӑшӗсене, ҫитменлӗхӗсене малтанах, юсама майӗ пур чух, асӑрханӑ пулӑттӑмӑр, вӗсене пӗтерме пулӑшаттӑмӑр. Телейлӗ пулнӑ пулӑттӑмӑр. Телей ҫинчен мана Варвари инке юмах ярса панӑччӗ. Ҫавӑн пек эпир те телей

çунатти çине пусрӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ эпӗ телее урӑххинче тупнӑ: килйышра, ача-пӑчара... Пӗр-пӗрине юлташла килӗштернинче... Хама хам тата эп ун çумӗнче ниме юрӑхсӑр пӗчӗк çын вырӑнӗнче туймастӑп. Сана качча пынӑ пулсан, эпӗ хама шӑпах çапла ниме кирлӗ мар çын вырӑнӗнче туяттӑм. Ӗмӗр тӑршшӗпех сан юлташусем манран артистсен, кӗнекери геройсен ячӗсене пӗлменнишӗн кулнӑ, мана намӑслантарнӑ пулӗччӗç. Эпӗ халӗ хама майлӑ телейлӗ, Саня...

Сухви пӗр хушӑ чӗнмесӗр ларчӗ.

— Кусма ыйтмасть, — терӗ вӑл малалла. — Мӗншӗн тесен хӑй те пӗлмест. Эпир унпа кил-çурт çинчен, выльӑх-чӗрлӗх çинчен, ачасем ӳстересси çинчен калаçатпӑр. Юратмасан та — килӗштерсе пурӑнма пулать. Эпир вӑрçмастпӑр. Вӑл ал хума мар — мана пӳрнепе те тӗкӗнмен. Авӑ, вӑл халь çӳрет. Сурӑм леш енче. Ун чухнехи пекех кӗтӳ кӗтет. Эпӗ те — куратӑн—сурӑх кӗтӗвӗ кӗтетӗп. Телей тени вӑл пурнӑçра ӑна кам мӗнле ӑнланнинчен килет. Ӑна пӗр виçепе виçме те çук... Кашни çыннӑн телейне хӑйне виçепе, хӑйне шайпа виçмелле... Сирӗншӗн пӗтӗм телей çамрӑкләхра пулӗ... Эпир урӑхларах шутлатпӑр...

— Çапах та ма вӑрлаттарса ятӑн эсӗ хӑвна пухӑран, Сухви?

— Эпӗ... сана тарӑхса!.. Çиленсе!..

Çак хушӑра Сурӑм шывӗ леш енчен пӗр арçын ал айӗн Саньӑпа Сухви еннелле чылайччен пӑхса тӑни, унтан умлӑн-хыçлӑн виçӗ хутчен вӑрӑм пушӑпа шартлаттарни илтӗнчӗ.

— Ой! — шартах сикрӗ Сухви. — Упӑшка курчӗ... Ав... Мана чӗнет...

Сухви ура çине тӑчӗ, пушӑпа сулса сас пачӗ. Пушӑ вӗçӗнчен йӑс пӗрхӗнчӗ. Сухви ачана алла тытрӗ те хуллен Сурӑм хӗрринелле утрӗ, часах вӑл çырманалла анса çухалчӗ, тепӗр самантран леш енче курӑнчӗ.

Часах хӗвел анса ларчӗ. Сухви колхоз фермин сурӑхӗсене Сурӑмӑн хӑрах енӗпе, Кусма ял кӗтӗвне Сурӑмӑн тепӗр енӗпе хӑваласа — кӳршӗ ялӗ еннелле кайрӗç.

Саня, сӑрт çине хӑпарса, чылайччен ун хыççӑн пӑхса тӑчӗ.

Çурӑма каçхи сивӗ те нӳрӗ сулхӑн çапрӗ. Курӑксем çине сивӗ сывлӑм ӳкрӗ. Сурӑм çинчен шурӑ тӗтре, йӑсӑрланса хӑпарса, улӑх çине сарӑлма пуçларӗ. Çав тӗтре пӗтӗмпех

Сухви сулса янӑ пушӑ вӗҫӗнчен пӗрхӗнсе тухса тулнӑн туйӑнчӗ. Ҫӑра тӗтре, майӗпен сарӑлса-сарӑлсах пырса, аякра пушӑ сӗтӗрсе утакан Сухви кӗлеткине хупласа хучӗ.

Саня чӗринче хӑватлӑ кӗвӗ, ҫак Сурӑм тӗтрине сирме чӗнекенскер, амаланса-арӑслансах пырса янраса кайрӗ... Ҫунта Саньӑна хӑйне ӳпкелекен сасӑ та илтӗнчӗ. Шавларӗ, кӗрлерӗ... Ҫу кӗвӗ телей тупма, уншӑн кӗрешме йыхӑрчӗ.

1957.

ТУХТĂР ПАТĔНЧЕ

Очерк

I

Пăлтăрта çил улать, йынăшать, килкарти енчи кантăка çиллессĕн юрпа сапать...

Хĕреççи шурă тутăрне çамки çинех антарса лартнă та чĕркери ачине пăхса шăппăн ĕсĕклет.

Ача, икĕ çулхискер, эрне каялла çеç чăп-чăмăр пит-куçлă, пулă пек сиккелесе вылякан ачаччĕ. Халь акă вăл паллама çук пĕтсе кайнă. Çунса тăракан куçĕсем сӳннĕ пекех, куç хупаххине те çĕклеймест, сăн-пичĕ шуралнă, алли-урине лĕнчĕр янă, пуçĕ каялла каçăрălса ларнă. Вăл маччасăр пуçне урăх ним те курмасть; месерле вырттарсан, аяк çине çаврăнса ӳкет. «Мĕн туртса лартрĕ-ши мăйне?» — тет Хĕреççи, куççульне тутăр вĕçĕпе шăлса. Унтан, чăтаймасăр, сасăпах ĕсĕклесе йĕрсе ярать, анчах, ачи вăранасран шикленсе, самантрах чарăнать. Шикленни ахалех: ача вăранмасть, вăл икĕ кун ĕнтĕ шăл шурри те кăтартмасть.

— Эх, ытла хăрушă чирпе чирленĕ-çке ачу. Кăмăлна йывăра ан ил те, çын пулайĕ-ши унран,—тет кӳршĕ арăмĕ. Лампа çути ачан шуранка пичĕ çине ӳкет, амăшĕ ачине марлĕпе витет. Стена çинчи сехет вуниккĕ çапать.

— Эппин. тухтăр патне малтантарах каймалла пулнă...

— Ятăм, çийĕнчех ятăм та, тĕл пулайман-çке. Таçта, урăх яла илсе кайнă, тет. Ара, таçтан-таçтан та çӳреççĕ, тет, те ун патне. Паян таврăнмалла терĕç, тĕл пулаять-иха ашшĕ...

— Ку сирĕн тухтăрпа сывалмалли япала мар, ачам, — тет кӳршĕ карчăкĕ. — Кам та пулин тухатса пăснă ăна... Сирĕн çурт хыçĕнчи çăка питĕ тытать, теççĕ. Çавăн турат-не хуçнă темерĕн-и?.. Мĕн те пулин асăнса пăрахмаллаччĕ...

— Ун пеккипе аппаланман та халиччен—пĕлместĕп,— тет Хĕреççи. — Иван Иванович мĕн калĕ-ха ĕнтĕ.

— И-и, тухтăрсем вĕсем чăваш йăли-йĕркипе пăсăлнине ним тусан та сыватаймаççĕ, ачам. Каларĕ тесе калăн, акă... — çаплах хăй сăмахĕ çине тăма пăхать кӳршĕ карчăкĕ.

Килкарти алăкĕ шалтлататать. Çенĕкрен тӳнклеттере-тӳнклеттере ура шаккани илтĕнет. Алăк уçăлать те — пӳрте сивĕ сывлăш йăтăнса кĕрет, вăл сирĕлсен, унта икĕ арçын, тăлăплăскерсем, тухса тăраççĕ. Пĕри — ачан тăван мар ашшĕ. Тепри — вăтам пӳллĕ, хура шĕвĕр сухаллă, хĕрлĕ сăнлă арçын. Унăн аллинче пĕчĕк хура чăматан.

— Ну, ача мĕнле? — ыйтать вăл пӳрте кĕнĕ-кĕменех уçă сасăпа. — Ăшă шыв парăр-ха, алла çăвас...

— Мĕнле çиткелерĕр? Иртĕр-ха, иртĕр. Çанталăкĕ ытла хăрушă та... — текелесе, Хĕреççи кăмака умне тухать.

— Ытла çавăрттарать. Куçа-пуçа уçса пăхма çук. Пырать, лаши çул тытаканскер те. Шăнасса, Иван Иванович шăнчĕ пулĕ ĕнтĕ, — тет кил хуçи, тăлăпне хывса.

— Эпĕ хăнăхнă. Кун пеккисене кăна мар куркаланă, — тавăрать Иван Иванович. — Ĕçĕ çавнашкал та... Ачи ăçта-ха?

Иван Иванович ача вырăнĕ патне пырать, куçлăх витĕр ун пит-куçне пăхать, мăйне, хырăмне хыпалать.

— Хырăмне мĕнле майпа çӳле хăпартса янă эсир? — ыйтать вăл никам çине пăхмасăр.

— Варне хыпаласа макăрать те, шăлтăм, — тет Хĕреççи.

— Кам хушрĕ вара апла тума?.. Пыршисене çӳле шăлса лартнă та — сывлаймасть ача... Чĕри çине, ӳпкисем çине пусать...

— Ара, кӳршĕ арăмĕ вар ыратнине çапла шăлсах юсать те...

— Кӳршĕ арăмĕсене пит итлетĕр-çке эсир. Медицина — сирĕншĕн йыт çӳппи. Сыват ĕнтĕ акă халь кӳршĕ арăмĕсем хыççăн... — Унтан кăшт тăхтаса тăрать те: — Сирĕн ачан менингит. Кашни кун мăйĕнчен укол тăвас пулать. Пĕр-икĕ кун малтантарах укол тунă пулсан — çăмăлрах иртетчĕ, — тесе хушса хурать.

II

Куканар вăрманĕ хĕрринчи çулпа пĕр урапа килет. Урапа çинче, çурăмсемпе сĕвенсе, урисене икĕ еннелле яр-

са, икӗ ҫын ларса пыраҫҫӗ. Пӗри тилхепине турткалать, тепри, хура хулӑн картус, кивӗрех плащ тӑхӑннӑскер, пӗчӗк хура чӑматанне аллинчех тытса пырать.

— Эй, юлташ, — кӑшкӑрчӗ вӑл, урапи ман тӗле ҫитсен. — Эсӗ Хурӑнкассем пулмастӑн пулӗ те?

— Хурӑнкассем, — тавӑртӑм эпӗ.

— Эсӗ Николай Миронович ачи мар-и?

— Ҫук. Шӑнкӑрчӑн...

— Э-э, каҫар эппин...

Лаша яртлаттарса малалла чупрӗ. Старик чылайччен ман еннелле пӑхса пычӗ. Эпӗ те чӑматана лартсах каялла ҫаврӑнса пӑхрӑм. Тахҫан таҫта курнӑ пек туйӑнать ку ҫынна. Тӑван ялта ҫичӗ ҫул пулман пулин те, ку хамӑр ялсем маррине тавҫӑрса илтӗм. Тен, палланӑ, курнӑ ҫын та мар пулӗ: чӑвашӑн ахаль йӑли ҫапла — хирӗҫ пулакан ҫынпа сӑмах хушмаллах вара.

Илемлӗ кунти вырӑн. Йӗри-таврах вӑрман: Куканар. Сӑпайвар, Малтивар — кусем пурте вӑрман ячӗсем.

Ҫакӑн пек илемлӗ тавралӑхра масар пирки пуҫа шухӑш та килес ҫук. Анчах эпӗ хам сисмесӗрех Куканар кӗтессинчи масар ҫине пӑрӑнса кӗтӗм. Атте тӑпри ҫинче чарӑнса тӑтӑм, унтан пусӑрӑннӑ кӑмӑлпа кил еннелле утрӑм. Тахҫан анне каланисем аса килчӗҫ: «Эсӗ ачаллах Куканар масарӗнче выртмалласкерччӗ, — тетчӗ вӑл. — Икӗ ҫулта чухнех пуҫу каялла туртӑнса ларнӑччӗ. Тавах ҫав Иван Ивановича. Ҫав хӑтарса хӑварчӗ...»

Эпӗ Иван Ивановича пӗр вунӑ ҫул каялла, Панклири атӑ-пушмак ҫӗлекен мастерскойра ӗҫленӗ чух курнӑ. Ҫулталӑк ҫурӑ ученикра ӗҫленӗ хыҫҫӑн ӗҫе вӗренсе ҫитнӗччӗ эпӗ ун чух, Иван Иванович атӑ юсама пырса панӑччӗ. Утнӑ чух нӑтӑртаттӑр тесе, тӗпне хурӑн хуппи хурса, ҫупа вӗретнӗ сӑмалапа сӗрсех тӗпленӗччӗ эпӗ унӑн аттине. Ҫав атта илме пырсан курнӑ ӗнтӗ эпӗ ӑна юлашки хут.

Мана вӑл ун чухне шкула ҫӳременшӗн ятланӑччӗ.

Ку таврара Иван Иванович пек чаплӑ, хисеплӗ врач урӑх ҫук, тенине эпӗ ачаранах илтнӗ. Пирӗн мастер Кузьма Гордеевич та ун ҫинчен час-часах калаҫкалатчӗ. «Иван Иванович мана вилӗмрен ҫӑлса хӑварчӗ», — тетчӗ вӑл. «Иван Иванович чӑваш йӑли-йӗркипе чирленине те сыватма пӗлет», — тетчӗҫ ун ҫинчен хӗрарӑмсем.

Мӗнле врач вара вӑл, чӑваш йӑли-йӗркине сыватма пӗлекенскер? Чӑваш йӑли-йӗрки тесе пирӗн енче тӗрлӗрен вӗрӳ-суру чӗлхисемпе, «асамлӑ мелсемпе сыватма пултар-

нине» каланă. Ун пек çынсем хутран-ситрен халĕ те тĕл пулаççĕ-ха.

Пурăнать-ши вăл халь, çав чăваш йăли-йĕркисене эмелпе юсама пултарнă Иван Иванович?

— Э-э, вăл халĕ те Йӳçкасси больницинчех, — терĕ мана анне тепĕр кунне. — Ĕнер кăна пирĕн яла килнĕччĕ-ха. Алешка ачи чирленĕ те... Кайран пĕри çумăр витĕрех Какаçа илсе кайрĕ — такам чирленĕ. Çул çинче хирĕç пулмарĕ-и вара вăл сана? Эс килес умĕн çеç тухса кайрĕ-çке.

Эпĕ лав çинче хура чăматан тытса пыракан çынна курни çинчен каларăм.

— Çавах, çавă... Ара, мĕнле паллаймарăн, ачам. Вăл сана сыватнă вĕт. Яла килсен, яланах ыйтать, çырать-и, тет. Сăнӳкерчĕкӳсене пăхать, — кӳреннĕ пек каларĕ анне.

II

Эпĕ Иван Ивановича кайса курма шутларăм. Анне каланă пек, «кăштах ӳсĕркеленĕшĕн» мар, манăн ăна курас, тав тăвас килчĕ.

Йӳçкасси больници ял хĕрринче ларать. Шурă халатлă хурăнсем больница тавра пуçтарăнса тăнă. Хăйсем хĕрлĕ хĕçтимĕр витнĕ çӳлĕ çурт çине ӳпĕннĕ. Вĕсен çемçе те çинçе турачĕсем шерепеленсе, хĕрарăмăн сапаланнă çӳçĕ пек, сĕвемĕн-сĕвемĕн çурт çамки çине усăнса анаççĕ, çилпе вĕçкелеççĕ. Аялта — виçсе татнă çамрăк акацисем, пĕчĕк ачасем амăш кĕпи аркинчен çакăннă евĕр, хурăнсем çумне йăпшăннă. Больница тавра — решетке, шалта — хитре пахча, тĕрлĕрен çуртсем...

Эпĕ больница умне çитсе чарăнтăм. Темшĕн, кĕме аван мар пек. Мĕн калас-ха манăн ăна, хама вилĕмрен хăтарса хăварнă çынна?

Пирус тивертсе ятăм та карта кĕтессинчи курăк çине лартăм. «Кĕрес мар, — шутларăм эпĕ. — Мĕн ĕç вăхăтĕнче чăрмантарса çӳрес?..» Çак самантра каялла çаврăнса кайма та хатĕрччĕ, анчах ĕç урăхла çаврăнса кайрĕ.

Арман енчен аслă çулпа килекен хĕрача ман тĕле çитсен чарăнчĕ те сывлăх сунчĕ. Пĕчченех карта кĕтессинче ларнăран, хамран хам именсе, хĕре юриех курмăш пулса ирттерсе ярасшăнччĕ.

— Ларатăн? — терĕ хĕрача.

— Ларатăп-ха, — терĕм, ун еннелле çаврăнса. Эпĕ ăна тин палласа илтĕм. Ку пĕлтĕр пединститут пĕтернĕ хĕрача,

теветкел питлӗ-куҫлӑскер. Ӑна Юля тесе чӗнетчӗҫ. Пединститутра хам та пӗрре мар куркаланӑ, анчах вӑл Йӳҫкасси хӗрӗ пулнине пачах пӗлмен.

— Хӑй ҫук-им? — ыйтрӗ вӑл, эпӗ Иван Иванович патне килнине пӗлсен.

— Таҫта, ялсене кайнӑ терӗҫ, — персе ятӑм ним шухӑшламасӑрах.

— Паян ниҫтах та каяс пек каламастчӗ-ҫке, — терӗ Юля, унтан чӳрече енне ҫаврӑнчӗ: — Иван Иванович ҫуким? Ҫак ача шырать те...

— Кунтах вӑл, — терӗ чӳрече умне пынӑ шурӑ халатлӑ хӗр. — Хӑй пӳлӗмӗнчех. Паян ниҫта та кайман-ха...

Питрен-куҫран вут тӑкӑнчӗ...

Эпӗ больницӑна кӗтӗм. Алӑкра — шуралнӑ шӗвӗр сухаллӑ, кӑвакарнӑ чӑпар ҫӳҫлӗ, типӗтнӗ панулми пек пӗркеленчӗк питлӗ, вӑтам пӳллӗ старик курӑнса кайрӗ.

— Кӗрӗр, — терӗ вӑл лӑпкӑн.

Мана яла таврӑннӑ чух хирӗҫ пулнӑ старик шӑпах ҫак ҫын пулчӗ.

Иван Иванович, йывӑр аттипе таклаттарса пырса, хуллен кӑна сӗтел хушшине ларчӗ.

Вӑл самаях ватӑлнӑ. Вунӑ ҫул каялла ҫӳҫӗсем те кӑшт-кашт ҫеҫ кӑвакаркаланӑччӗ, шӗвӗр сухалӗ те хураччӗ. Пӗвӗ те кукӑрӑлса пӗчӗкленнӗ, пӳрнисем ҫеҫ типсе вӑрӑмланнӑ пек туйӑнаҫҫӗ.

— Ну, мӗн ыратать, ҫамрӑк ӑру?

— Ыратасси нимех те ыратмасть те, — терӗм эпӗ аптарса, унтан ҫавӑнтах анне каланине аса илтӗм: — Эпӗ хӑш чух ӳсӗркелетӗп...

Иван Иванович ман кӑкӑра темиҫе тӗлтен итлесе пӑхрӗ.

— Эсӗ вӑкӑр пекех сывӑ, — терӗ вӑл юлашкинчен. — Мӗншӗн табак туртатӑн?.. Ҫавӑнтан ӗнтӗ вӑл ӳсӗресси.

— Хӑтланса пӑхрӑм та — пӑрахаймарӑм.

— Пӑрахайма-арӑм, — йӗкӗлтесе илчӗ Иван Иванович. — Сирӗн «чун вӑйӗ, хайла» текенни табак туртма пӑрахмалӑх та ҫук пулсан—мӗн хальхи саманари ҫамрӑк ятне илтес?.. Эпӗ ку тарана ҫитсе те ҫӑвара хыпса курман. Табак туртни, эрех ӗҫни, вӑрлани — вӗсем пӗр пекех ҫынна пӗтереҫҫӗ... Хӑш ялсем?... Хурӑнкассисем-и?

Эпӗ хам ҫинчен каласа патӑм.

— Э-э, эсир пит час паллами пулнӑ-ҫке, — кулса илчӗ тухтӑр, — эпӗ сана мӗн пӗчӗкренех астӑватӑп...

Вăл хăй шухăшне пĕтереймерĕ — пӳлĕме чирлĕ çынна илсе кĕчĕç. — Акă мĕн, хам ача, кĕçĕр ман патăмра çывăрса каятăн, — терĕ те Иван Иванович, вара çурăмран лăпкаса ăсатрĕ.

Ķаç пулсан ун патне каятăп. Ķилкартинче шакканă сасă илтĕнет — Иван Иванович урапа хупĕ çапать иккен.

— Пахчаран çĕрулми турткалама пĕчĕк урапа туса парас терĕм-ха. Пĕлнĕ ĕçе пăрахас килмест, ĕлĕк платник пулнă та...

Хулăн хуп парăнасшăн мар: ăçтан килчĕ унтан мăкăрăла-мăкăрăла çӳлелле тапать. Иван Иванович урапа çине хăпарса тăрать, хупа атă кĕллипе таптаса, урапа çытарĕ тĕлĕнчен пăта çапса лартать. Пĕркеленнĕ хыткан аллăсем, кăштах чĕтреççĕ пулин те, мăлатука çирĕп тытаççĕ.

Иван Иванович мана пӳрте ăсатать.

— Малалла ирт, — сĕнет хваттер хуçи хĕрарăмĕ. — Унта Юля пур.

Малти пӳлĕмре таçта кайма хатĕрленнĕ Юля кулкаласа тăрать.

— Эсир кунта пурăнатăр-и вара? — тĕлĕнсех каятăп эпĕ.

Иван Иванович Юльăсем патĕнче вунçичĕ çул пурăнать иккен.

Малти пӳлĕмре чечеклĕ чĕнтĕрсемпе витнĕ икĕ кравать. Стена çумĕнче — сехет, сăнӳкерчĕксем, кĕтесре — репродуктор.

Сĕтел çинче тĕрлĕрен медицина кĕнекисем купаланса тăраççĕ.

«Уй урлă каçсан, хырăм выçать» тесе, мана та хăйсемпе апата чĕнчĕç.

— Çăкăр-тăвартан асли çук, ачам, — тет карчăк. — Çăкăр-тăвар умĕнче тархаслаттарса тăмаççĕ.

— Авланман-и-ха? — ыйтать Иван Иванович, унтан, кăшт куларах, çапла хушса хурать: — Вĕренсе тухмасăр кирлĕ мар... Ķайран ак хам хĕрех парăп.

Эпир харăссăн кулса ятăмăр.

— Ķĕçĕнни ман Ķанашра, хам пекех фельдшера вĕренет-ха, килес çул пĕтерет ĕнтĕ. Çавă çеç юлчĕ. Иккĕшне качча патăм.

Тата пĕртак шӳтленĕ хыççăн, калаçу урăх енне куçать.

— Ĕлĕкрех çав вĕрӳ-суру чĕлхисемпе, темсемпе аппаланакансем нумайччĕ. Пире шанмаççĕ... Пĕр-пĕр шăрпăк-

кĕлпĕк кĕнипех вилсе каять çынни, çук, пирĕн пата мар, юмăça каяççĕ...

Апат çинĕ хыççăн Иван Иванович пире сада чĕнчĕ. Ку сада вăл хăй лартса хăй ӳстерне иккен.

Юля, шурă платьине вĕлкĕштерсе, малалла чупса кайрĕ.

Иван Иванович çĕртенех юпленсе ӳснĕ пысăк улмуççи умĕнче чарăнчĕ.

— Ак çак улмуççин пĕр юппи пĕлтĕр кĕркунне чĕрĕлсе анчĕ. Касса пăрах, теççĕ мана çынсем. Итлемерĕм, тăратса лартрăм, тăприне чавса çемçетрĕм, тислĕк тултартăм та çиелтен каллех çеремпе витсе лартрăм... Кур, халь вăл епле ашкăрса ларать!..

Тухтăр кăтартнă улмуççи, чăнах та, ыттисем пекех, тураттине аран çĕклесе ларать.

— Чирлĕ çын та çавнашкалах, чĕрĕлетех тесе сыватма тытăнатăн-тăк — сывалатех...

— Иван Иванович, — терĕ Юля, виçĕ хĕрлĕ улма татса пирĕн ума пырса тăнăскер. — Миçе çынна сыватнă пуль эсĕ ку тарана çитиччен?..

— Ăçтан пурне те астуса çитерес? — терĕ тухтăр. — Революци пулнă çулах ĕçлеме тытăннă та... Хам аллăмпа хам сыватни пĕр пилĕкçĕр çынран иртет пулĕ...

Садри çамрăк çĕмĕрт, çил вĕрсен, кăтăклă ача пек, ниçта кайса кĕрейми хуçкаланать. Темĕнле кайăк шăхăрса илет.

Чĕрере темĕнле хаваслă та сапăр. Иван Иванович манпах калаçать:

— Врача пĕр вырăнта нумай ĕçлени пулăшать. Халăх чĕрине вĕренсе çитес пулать, ун умĕнче ырă ят пултăр Чирлĕ çын сана шанмасть, сыватасса ĕненмест пулсан, ăна сыватма йывăр...

— Пилĕкçĕр çын ытла сыватнă, тетĕн, хăвăн пĕтĕмпе те пĕр медаль анчах, — таçтан килсе тухрĕ Юля.

— Акă, — Иван Иванович ман çине кăтартрĕ, — хам вилĕмрен чĕртнĕ çын сума суса килсе курни — маншăн темĕнле орденрен те хаклăрах... Вĕсем пĕрре мар вĕт... Сана та эпех сыватнă... Манăн тухтăр дипломĕ те çук. Военно-фельдшерски шкул çеç пĕтернĕ эпĕ...

— Ну, айта, кинона каяр, Иван Иванович. Çитĕ пире садра çӳрени, — терĕ Юля.

— Эсир кайăр. Манăн ĕç пур-ха, больницăна кайса пăхас пулать, — тет Иван Иванович.

Эпир Юльăпа кино кайса куртăмăр. Çул çинче те, кинора та ăпăр-тапăрсем çинчен çеç — пĕр-пĕрне нимĕнпе те хирĕçлемесĕр, майлă та майлă калаçкаларăмăр. Киле таврăнсан, вăл мана малти пӳлĕме вырăн сарса пачĕ, эпĕ вара питĕ канлĕ çывăрнă.

IV

Ирхине эпĕ тăнă тĕле Иван Иванович çукчĕ. Сехет йĕпписем улттă иртни вунпилĕк минут иккенне кăтартаççĕ.

— Тĕрĕсех çӳрет-и? — ыйтрăм эпĕ, Иван Иванович ĕçе кайни çинчен пĕлсен.

— Ĕнер çеç радиопа тĕрĕслесе янă, — терĕ Юля амăшĕ. — Ыйхи те унăн шăпчăк ыйхи пек те — пĕрре те канлĕ лăпланса çывăрмасть... Больницинче чирлисем пур пулас та...

Унпа сывпуллашмасăр кайма аван мар пек туйăнчĕ. Ăна больница коридорĕнче тĕл пултăм.

— А-а, хам ача, — терĕ вăл сасартăк чарăнса. — Ну, шăнман-и кĕçĕр?.. Лайăх çывăртăн-и? Эпĕ обхода тухрăмха... Ак, тăхăн халат...

Эпир, шурă халатсем тăхăнса, коридор тăрăх утрăмăр, часах палатăна кĕтĕмĕр. Кĕтесри крават çинче, простыньпе чĕркенсе, хĕрарăм выртать.

«Ну, вар мĕнле, кинемей?», «Ну, пуç мĕнле?», «Çăмăлтарах-и?» — ыйтать тухтăр кашни палатăрах.

«Уçăлтăм ĕнтĕ, киле каймалла пуль», — тавăраççĕ ăна чирлисем.

«Выртăр-ха, выртăр», тет Иван Иванович, кăшт кулакансемпе те шӳт туса илет:

— Вăт... кул, кул... Кулни — сывлăхушăн усăллă. Çыннăн талăкне сехетрен кая мар кулмалла...

Тепĕр пӳлĕмрен «Çăлтăр куççем, çĕмĕрт куççем...» тесе юрлани илтĕнет.

— Кусем трахомлисем, — тет Иван Иванович. — «Çăлтăр куççем...» сӳне пуçланă-ха вĕсен... Пĕтĕмпе вунпĕр çынччĕ те, виççĕшне имлесе кăлартăмăр ĕнтĕ. Усал чир вăл, çав тери усал. Ниепле те тĕппипе пĕтерейместпĕр-ха.

Çак вăхăтра Иван Ивановича пĕр çын кĕтни çинчен пĕлтерчĕç.

Эпĕ сывпуллашса уйрăлтăм.

V

Çакăн хыççăн темиçе кун иртсен, манăн хам ĕçпе каллех Йӳçкассине кайма тиврĕ.

Нӳрет тĕлĕнче, комбайн кĕреймен сырма-çармаллă вырăнта, колхозниксем тырă выраççĕ. Çакăнта, хĕрсе ĕçлекен хĕрарăмсем хушшинче, эпĕ кĕтмен çĕртенех Иван Ивановича куртăм.

Иван Иванович пĕр çамрăк хĕрарăма — ĕçе патист тутăрпа тухнăскерне хӳтĕлет.

— Тĕрĕс, хĕрĕм, — тет вăл. — Атту, пур пирĕн хăшпĕр айтурухсем... Ĕç çине тухса каять те, çăвĕпе урайне çумасть, хĕлĕпе мунча кĕмест, пуç çинчи тутăрне те çуса сыхма ӳркенет, пĕрчи палăрмасть вара, тăла варри пек...

Иван Иванович умне тепĕр хĕрарăм ачине йăтса пырать.

Ачи, пысăк хырăмлăскер, тӳрех çухăрса ярать.

— Ытла самăртса янă эсĕ ăна, — тет Иван Иванович, ачана унтан-кунтан тĕрткелесе пăхнă хыççăн. — Тутинчен кăкăр сĕчĕпе сĕрсех тăратăн та... Асăрхарăм-ха пасăрах... Кăшт мек! тесенех, çăварне чăмлак персе чикетĕн. Япалан виçи пулмалла. Виçĕ-тăвата сехетре пĕрре çитер те, хăть макăртăр, хăть çухăртăр — çăварне нимĕн те ан чик. Ачу, ху та сисместĕн, пулă пек тасалса каять. Пăхма пĕлместĕр çав эсир ачана. Нумай пулмасть Хурăнкассинче пултăмха... Çавăн пек пĕри ачине чăпăл тунă та — сăпкана пăрахса сиктернĕ, чăпăл тунă та — сиктернĕ... Тек вĕртернĕ ачана вăркăш çил. Шăннă, ӳпке шыççи ачан...

...Кирек ăçта та хăйĕн ĕç тухтăрăн...

Кăшт тăрсан, эпир Иван Ивановичпа Йӳçкасси еннелле утрăмăр.

— Юля Шупашкара учительсен канашлăвне кайрĕ-ха. Сана салам унран, — тесе хучĕ Иван Иванович, ман çине темĕнле вăрттăн пăхса илсе.

Эпĕ унăн шуралма пуçланă çӳçĕ, шĕвĕр сухалĕ, кăмăллă куçĕ çине пăхатăп.

Çук-ха, Иван Иванович ватăлман, — çамрăк-ха вăл, тата нумай çын пурнăçне çăлса хăварĕ.

VI

Йӳçкасси мана çавăнтанпа ку таранччен темĕнле кăмăла туртакан ял пулса тăчĕ, тен, Иван Иванович çавăнта пурăннă пирки пулĕ...

Хулара пурăннă чух та час-часах куç умне Иван Иванович килĕ, шурă больница килсе ÿкет.

Кунсăр пуçне тата Иван Иванович пĕрре асăнса илнĕ «Канашра вĕренекенни» пирки те «Мĕнлескер-ши вăл?» тесе шухăшлатăп «Çав тери кăмăллă хĕр вара» тенине илтнĕ май.

Тепĕр çулне эпĕ каллех яла таврăнтăм та чи малтан илтнĕ хыпарсенчен пĕри çакă пулчĕ: Иван Иванович çавăнтах ĕçлет-ха, Юля качча кайнă, «Канашра вĕренекенни» те таврăннă — Йÿçкассинчех ĕçлет...

«Кĕçĕннипе» эпĕ каллех питĕ ăнсăртран паллашрăм.

Хам ĕçе май Чăваш Сурăмне кайнăччĕ те — лавккана пирус илме кайрăм. Лавкка умĕнче пĕр велосипедлă хĕр тăрать. Çуллахи шурăрах сенкер костюмпа хăй, çÿлĕ, патвар. Сăнĕ шуранкарах, куçĕсенче темĕнле именчĕклĕрех вăй сисĕнет.

— Лавкка уçать-ши паян? — ыйтрăм эпĕ.

— Темĕн, — терĕ хĕр.

Вăл тавăрса каланинче урăх нихçан калаçас-илтес çук ют çынна пĕр сăмах хушни çеç сисĕнчĕ.

Эпĕ вара хĕртен тепĕр сăмах та пулин илтсе пĕлес терĕм:

— Эсир те лавккана килнĕччĕ-и?..

— Çук, машин кĕтетĕп...

Ку сăмахран та ним уйрăм-уççи пулмарĕ.

Хĕр малтан пĕрер сăмахăн çеç тавăркаласа каларĕ, ирĕксĕртен çеç, таçта васканă евĕр тата кăштах вĕчĕрхеннĕ пекрех те.

Кĕскен каласан, вăл — Иван Иванович хĕрĕ пулчĕ-тăчĕ. Пиччĕшĕн ачине хулана лартса яма килнĕ иккен.

Эпĕ, вăл камне пĕлсен, сасартăках нимле мар пулса кайрăм.

— Йÿçкасси пуххи кун пырса курăр, — терĕ вăл уйрăлнă чух (вăл мана пĕлет иккен).

Кăмăл çиелте пулмалăх калаçаймарăмăр пулин те — хĕр ырă кăмăлли, сăпайли тÿрех курăнчĕ.

Эпĕ пухă кунĕ, чăнах та, Йÿçкассине кайрăм. Иван Иванович патĕнче хăна пултăм. Хĕрне вара пухăра (кунта ярмăрккана çапла калаççĕ) куртăм. Вăл яш-кĕрĕмсемпе хĕрупраççен ушкăнĕнчеччĕ.

Çакăнтах тата мана Иван Иванович хĕрĕ, ашшĕ пекех, медицинăра ăстаçă иккенне, ун пирки халăх çинче ырă ят çӳренине каласа пачĕç.

Ķайран эпĕ хам килелле утнă чух хаваслă кулла илтсе хыçалалла çаврăнса пăхрăм та — ăна пĕр йĕкĕтпе куртăм. (Йĕкĕчĕ унăн хальхи упăшкиехчĕ пулмалла, темĕнле инженер, терĕç).

Ăшра кăштах йӳçенкĕрех туйăм та пурччĕ... Анчах мĕнле сăлтав пур-ха ман çынсен телейĕшĕн пăшăрханма?

Вĕсем мана сывлăх сунчĕç, эпĕ вĕсене телей сунтăм.

Урăх мĕн сунма пулать-ха ырă çынсене?

Çапах та пурăнас, ĕçлес килет çавăн пек ĕçре телей тупнă çынсем хушшинче.

1955—58.

* * *

Ю. Скворцов — çамрăк писатель. Сăвăсене вăл вăтам шкулта вĕреннĕ чух çырма тытăннă. Кăçал ун малтанхи сăвă кĕнеки—«Çурхи салам»—тухрĕ.

«Сурăм хĕрĕ» кĕнеке—авторăн прозăпа çырнă малтанхи кĕнеки. Кунта икĕ калав, пĕр очерк тата икĕ пĕчĕк повесть. «Юратсан» калав çамрăксен малтанхи таса юратăвĕ темĕнле чăрмавсем витĕр тухсан та, вăрах вăхăт иртсен те сивĕнменни çинчен калать.

«Хура куçлă Ина» калавра пулас пысăк туслăх, юрату аталанса пынине, анчах ăна аталанса çитме пĕчĕк чунлă çынсем чăрмантарнине куратпăр. Калав Сергей пек киревсĕр çынсене питлет, чăн-чăн туйăмсем пурпĕрех çĕнтернине, таса чунлă çынсем çиеле тухнине кăтартать.

«Сурăм хĕрĕ» повесть — ĕлĕкхи йăла-йĕркесем, хăнăхусем çынна телейлĕ пулма чăрмантарса тăнине сăнлать, çав чăрмавсемпе кĕрешме чĕнет.

«Тухтăр патĕнче» очерка хăйĕн ĕçне чунтан парăннă, ĕçре телей тупнă çын çинчен çырнă.

ТУПМАЛЛИ

Юратсан 3
Хура куçлă Ина 16
Сурăм хĕрĕ 41
Тухтăр патĕнче 87

Художник **М. Ильин.**

Редактор **Н. Александров.** Худ. редактор **Л. И. Маевская.**

Корректор **Р. Белова.** Тех. редактор **А. Краснов.**

НТ 01214. Сдано в набор 22.XI-1958. Подписано к печати 26/XI-1958 г. Формат 84×108/32. Объем в печатных листах 7,38, в учетн, изд. листах 4,45. Заказ 2348, изд. № 165—58 г. Тираж 3000 экз. Цена 2 руб. 80 коп.

Типография № 1 Министерства культуры

Скворцов Юрий Илларионович

Девушка с Сормы

(Рассказы и повести)

Чувашгосиздат—1958

6

1

Цена 2 руб. 80 коп.

С 1 января 1961 г.
Цена ___ р-б. 28 коп.